# СКАЗКИ

# И

# ПРЕДАНІЯ ЧУВАШЪ.

## ҪӐВАШ ХАЛЛАПӖСЕМ.

СИМБИРСКЪ.
Типографія А. и М. Дмитріевыхъ.
1908.

# С К А З К И

# И

# П Р Е Д А Н И Я  Ч У В А Ш

---

# Ч Ă В А Ш  Х А Л Л А П Ě Ç Е М

Симбирск
Типография А. и М. Дмитриевых
1908

## Оглавление


| | | Стр. |
|---|---|---|
| 1. | Йкĕ хĕр . . . . . . . . . . . . . . . . | 3 |
| 2. | Тимĕр тылă . . . . . . . . . . . . . . . | --- |
| 3. | Тăлăх арăм . . . . . . . . . . . . . . . | 8 |
| 4. | Ăслă суйеççĕ . . . . . . . . . . . . . . | 10 |
| 5. | Хитре чĕкеç . . . . . . . . . . . . . | 13 |
| 6. | Хунар çутти . . . . . . . . . . . . . | 27 |
| 7. | Янтрак янтравĕ . . . . . . . . . . . . | 26 |
| 8. | Нарспи . . . . . . . . . . . . . . . . . | 36 |
| 9. | Вĕри çĕлен . . . . . . . . . . . . . . | 98 |
| 10. | Арçури . . . . . . . . . . . . . . . . . | 112 |


Примечание: 1,2,3,и 6 записаны в Белебейском уезде и изложнен К.Ивановым; 4,5,6,7 и 9 записаны в Чебоксарском уезде и изложены П.Васильевым и 10 легенда записана в Чебоксарском же уезде и изложена покойным М.Федоровым, учителем-инспектором Царевоокшайского городского училища. При печатании последней легенды имелось два текста, несколько между собою различающиеся, приняты во внимание оба текста.

## Ике хĕр.

Хайĕн аслă хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтат: мĕн мăнтăр?
—Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
Аслă каларăн, хĕрĕм.
Унтан ыйтат: мĕн тутлă?
—Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
Аслă каларăн, хĕрĕм.
Татах ыйтат: мĕн çемçе?
—Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
Аслă каларăн хĕрĕм.
Хисеп турăн аçуна.
Ентĕ сана çакăнпа
Ҫур мулăма паратăп.

* *
*

Унтан кеçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтат: мĕн мăнтăр?
—Ҫут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал.
Унтан ыйтат: мĕн тутлă?
—Шыв тутлă, тĕнчере
Унтан тутли нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал.
Татах ыйтат: мĕн çемçе?
—Ала çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал,
Есĕ манăн хĕрĕм мар!
Ашшĕ вăра ку хĕрне
Хăваласах йачĕ тет.

## Тимĕр тылă.

Тимĕр тылă тесенех,
Ҫехри хăпат инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? пĕлĕр-ха!
Ака мĕншĕн, калам-ха!
Пирĕн чаваш арăмĕ
Тимĕр тылла йуратмаст,
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Пыва ççи те начар мар.
Тимĕр тылă ăшĕнче
Шура шуйттан ларат тет.
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккат тет.
Кантăр тыллас тесенех,
Ҫӳпне куçа кӳртет тет.
Ҫав çӳп куçра йулсассăн,
Ҫын тухатмăш пулат тет.
Ҫав тухатмăш хушнипе,
Тимĕр тылла çĕрĕне
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шалтăртатса çӳрет тет.
Тыла сиксе пынă чух,
Ҫуле çинче çын пулсан,
Ăна хеесе вĕлерсе,
Пуннe еçсе кайат тет....
Енте пелсе çитрĕр-и

Мĕнштĕн пирĕн инкесен,
Тимĕр тылă тесенех.
Сехри хăпса тухнине?
Кам та пулин шанмасран,
Йе вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинҫен калам-ха
Хамăр йалта пулнине.

* *
*

Пирĕн йалта пер карҫăк
Пуранаҭ-ҫĕ ĕлекрех.
(Хаљ ĕнтĕ вал тупăкрах
Выртаҭ масар хыçенҫе).
Пуранăçа çав карҫăк
Çĕмĕрттерет-ҫĕ анҫах:
Пур-ҫĕ унăн каҫака,
Ике сурăх, пĕр кушак,
Ҫалăш пўрҫĕ тăрринҫе
Тăманасем усраҭ-ҫĕ,
Таманасем патĕнҫех
Тимĕр тылли лараҭ-ҫĕ:
Пит хăрушă йапала
Пĕр кăтăрса кайсассăн!
Ĕнтĕ хăвăр та пĕлер
Карҫăк суккăр пулнине,
Мĕншĕн тесен карҫăкăн
Тимĕр тылли пур-еçке:
Кантăр шамми çўппине.
Куçа кўртет шура шуйттан!
Суккăр пулсан инçех мар
Тухатмăша тухма та.
Ку карҫăк та—ăсти çук
Тухатмăш-ҫĕ таврара.
Ăна пĕлмен çын та çук,
Палламан йыта та çук.

* *
*

Пур-ҫĕ тата карҫăкăн
Ике тăлăх кинĕсем:
Ике кин те, лайăх кин,
Иккĕшĕ те сарă кин.
Асла кинĕ мĕн йатли
Пире халĕ кирлех мар:
Хăйне кĕвĕлĕ арăм-ҫĕ,
Тўрриперех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Наҫар та мар хурлама.
Кĕçĕн кинин, каласан,
Йаҫĕ унăн Ҫĕкеç-ҫе,
Хăй те ҫĕкеç пекех-ҫĕ,
Ытарма çук аван-ҫĕ,
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çўхе ҫуп-тума.
Ҫĕкеç кинне карҫăке
Темшĕн ытла йуратмасҭ,
Хăвăр тупăр меншĕнне,
Ăна ҫелхем калаймасҭ.
Куçе-пуçе пит йаваш,
Çын савăнса тăмалла,—
Çапах карҫăк йуратмасҭ,
Ухмах тесех шухăшлăн.

* *
*

Çакă кинĕ йаланах
Минкĕретет карҫака:
Апай, йар-ха хăнана,
Апай, йар-ха ханана!
—Пуç çавармаш, çĕр-çăтман,
Çиге çынна йўтетме!
Авангарах ĕçне ту,

Вăхăт ҫитсен йарăп-ха.
Ђĕкеҫ кинĕ ахаљ те
Ĕҫне тăваҭ сунтарса,
Карђăк ҫапах Ђĕкеҫне
Вăрҫаҭ ĕҫне туманшăн!
Суккăр карђăк-кăрђакăн
Куҫ курманни ахаљ мар!
Вăхат ҫитсен, хăй вилсен,
Иарĕ-ха вăл хăнана.
Виҫĕ кунђђен Ђĕкеҫ кин
Ват карђăка йўтетрĕ:
Апай, йар-ха хăнана,
Аппам патне кайам-ха!
—Ай ҫĕр-ҫăтманă пуҫна!
Ырра мартăр ку кинĕм.
Виҫҫĕмĕш кун каҫ пулсан,
Карђăк ытлах ҫиленђĕ.—
Апай, йар-ха хăнана,
Апай, йар-ха хăнана!
—Кайах, кайах, йўтетмĕш,
Курăн-ĕҫке ху кунна.
Кĕҫĕрех кай, кĕҫĕрех,
Пуҫу кунта ан пултăр!
Кин васкаса ҫавăнтах
Сĕтпе йурђĕ виҫ йусман:
Хăвăр пĕлетĕр: йусман,
Ырăсене асăнса
Версе-сурса пĕҫерсен,
Пит хăватлă йапала.
Пирĕн йалта йаланах
Инҫе ҫула кайнă ђух,
Усал-тĕсел тивесрен
Йусман ђиксе кайаҫҫĕ.
Ҫапла пирĕн инке те
Хăй лашине кўлђĕ те,
Тухса кайрĕ сĕм-ҫĕрле
Акăр йалне хăнана.

* * *

Тимĕр тылă шалтлатаҭ,
Усал карђăк сўс тыллаҭ.
Йĕс тăпсалă хапхана
Уҫаҭ ђĕлхе каласа:
Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм!
Акăр ҫулĕпе сик тыллăм,
Ҫав кин патне ҫит тыллăм,
Ҫав кин пуҫне ҫи тыллăм!
Тимĕр тылă шалт тылă
Сиксе кайрĕ ҫулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Пурă йурлаҭ, ђуптараҭ:
Уйăх сути ҫап-ҫутă,
Акăр ҫулĕ тап-такăр,
Ђуп-ђуп лашам, ђуп лашам,
Ҫитес ҫĕре ҫит лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе йурнă йусманăм!
Пăрахаҭ те хăвараҭ
Пĕр йусманне ҫул ҫине.
Ҫитнĕ ҫитнĕ ҫĕртенех,
Йусман тĕлне ҫитсенех,
Тимĕр тылă хăраса,
Сиксе кайрĕ килнелле.—
Шалт-шалт тыллăм, шалт тыллăм!
Акăр ҫулĕпе сик тыллăм,
Ҫав кин патне ҫит тыллăм,
Ҫав кин пуҫне ҫи тыллăм!

Тимӗр тылӑ шалт тылӑ
Сиксе пыраҭ ҫулпала.
Тылла сиссе сарӑ кин
Татах йурлаҭ йуррине:
Уйӑх ҫути ҫап-ҫутӑ,
Акӑр ҫулӗ тап-такӑр,
Ҭуп-ҭуп лашам, ҭуп лашам,
Ҫитес ҫӗре ҫит лашам,
Хӑрат, хӑрат тӑшмана,
Сӗтпе йурнӑ йусманӑм!
Пӑрахаҭ те, хӑвараҭ
Тепӗр йусман ҫул ҫине.
Ҫитнӗ ҫитнӗ ҫӗртенех,
Йусман тӗлне ҫитсенех,
Тимӗр тылӑ хӑраса,
Сиксе кайрӗ кайалла.—
Шалт-шалт тыллӑм, шалт тыллӑм!
Акӑр ҫулӗпе сик тыллӑм,
Ҫав кин патне ҫит тыллӑм,
Ҫав кин пусне ҫи тыллӑм!
Тимӗр тылӑ, шалт тылӑ
Сиксе килет ҫулпала.
Тылла сиссе сарӑ кин
Йӗрсе йурлаҭ йуррине:
Акӑр ҫулӗ тап-такӑр,
Уйӑх ҫути ҫап-ҫутӑ,
Ҭуп-ҭуп лашам, ҭуп лашам,
Ҫитес ҫӗре ҫит лашам,
Хӑрат, хӑрат тӑшмана,
Сӗтпе йурнӑ йусманӑм!
Пӑрахаҭ те хӑвараҭ
Хӑйӗн йулашки йусманне.
Ҫитнӗ ҫитнӗ ҫӗртенех,
Йусман тӗлне ҫитсенех,
Тимӗр тылӑ кайалла
Сиксе кайрӗ йалалла...

* *
*

Ҫитес ҫӗре ҫитрӗ кин,
Шаккаҭ аппӑшин хапхине:
Аппам, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ҭӗкеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалаҭ!
—Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Утах хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин аппамҫӑм!
Ҭӗкеҫ кайрӗ шаккарӗ
Тепӗр аппӑшин хапхине:
Аппам, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ҭӗкеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалаҭ!
—Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Кайах хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин аппамҫӑм!
Ҭӗкеҫ кайрӗ шаккарӗ
Хӑйӗн пиҭҭӗшин хапхине:
Пиҭҭем, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ҭӗкеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалаҭ!
—Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Уттар хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин пиҭҭеҫӗм!
Йӗре йӗре сарӑ кин
Аслӑк ҫине улӑхрӗ,
Йӗре йӗре ҫавӑнта
Улӑм ӑшне пытанҭӗ.

* *
*

Шалт-шалт тыллӑм, шалт

тыллăм!
Акăр çулĕпе сик тыллăм,
Çав кин патне çит тыллăм,
Çав кин пуçне çи тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе пыраť çулпала.
Шалт-шалт сикет, шалт
тăваť,
Сарă кин ђунне витерет...
* *
*
Карђăк хапхи умĕнђе
Кĕтет кĕтет тыллине—
Çук, кăтăрнă пулмалла:
Тылли халĕ те таврăнмасť.
Таçта таçта айакра
Шалт-шалт туни илтĕнет.
Аптăраса тухатмăш
Тылла ђĕнме тытăнаť:
Шалт-шалт тыллăм, щалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм,
Ман патăма кил тыллăм,
Мађђа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Аçтаха пек шăхăраť,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕскерпе çапăçаť.—
Шалт-шалт .тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм,
Ман патăма кил тыллăм,
Мађђа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Шăтăр-шатăр илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕн унта çĕмĕрет.—
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм‘
Ман патăма кил тыллăм,
Мађђа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Шăтăл-шатăл илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Çĕр çĕмĕрсе таврăнаť...
Шалт-шалт турĕ, шалт турĕ,
Карђăк пуçĕ йалт турĕ.
Суккăрскер çул çинђен
Ĕлкĕреймерĕ пăрăнса.
Тылă пыђĕ, шалтлатрĕ,
Карђăк пуçне татайрĕ.
Тухатмăшăн пырĕнђен
Йухрĕ тухрĕ хура йун...
* *
*
Иртрĕ кайрĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен хуллен сирĕлђĕ.
Сикрĕ тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çутăлђĕ.
Акăр йалĕ вăраннă,
Йывăр ыйхă татăлнă.
Пур те тăваť хăй ĕçне
Ĕçђен ђăваш йĕркипе:
Ђĕкеç инкен пиђђĕшĕ
Авă выљăх апатлаť—
Хăй йăмăкин виллине
Тупаť улăм ăшĕнђе,
Авă пыраť пĕр егем,
Арман хуçи урампа.

Шурă сухалĕ ик хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт.
Туйи çине тайаннă,
Хăй кăвакал пек утат,
Пысăк лавка умĕнҫе
Хашăлтатса ҫарăнат,
Хăй çăнăхлă тумтирне
Çапкаласа мăрлатат:
Хурлăх, хурлăх, Михалҫ тус!
Ман арманăм çук ĕнтĕ!
Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хушшине
Çакланнă та, тытăнҫĕç
Урапана çилĕпе
Çухăрттарса çавăрса,
Арман ҫулне шăхăртма.
Епĕ ҫупса тухиҫҫен
Арманăма усалсем
Лăштăр-лаштăр ишнĕ те
Тара панă таçталла!

* *
*

Пирĕн йалта ҫăвашсем
Тухнă тăнă урама,
Ушкăнĕпе кĕрлеççĕ
Вилнĕ карҫăк тĕлĕнҫе.
Карҫăк выртат, хускалмаст,
Таврашĕнҫе хура йун.
Пĕвĕ выртат пĕр çĕрте,
Пуçĕ выртат пĕр йенҫе.
Тылă ларат, шалтлатмаст,
Маҫҫа çинҫе сасă çук...
Халăх шав-шавĕ пĕр вĕçлĕ,
Шав-шав сăмахĕ çĕр тĕслĕ.

## Тăлăх арăм.

Йумах йупа тăрринҫе,
Хам урхамах çийĕнҫе.
Вĕçсе вĕçсе пытăм та,
Килтĕм тухрăм çакăнта
Аслă вăрçă хушшине.
Икĕ халăх вăрçнă çĕре,
Унта пĕр кун пурăнтăм.
Çак ĕççене епĕ куртăм:
Асап курат çиҫĕ йутра
Çиҫĕ тăван вăрçăра.
Хам та ҫăваш пуçăмпа
Ҫасах сисрĕм ҫунăмпа
Вĕсем ҫăваш иккенне.
Ырă сунтăм вĕсене:
Ырă ҫăваш тăвансем,
Пĕҫҫĕр сирĕн тăшмансем!
Çут хĕвелпе çут тĕнҫе
Вăй паҫҫăр çак кунсенҫе!
Çиҫĕ тăван çапăçат,
Çапăçат те, тытăçат.
Сăсар çĕлĕк пуçĕнҫе,
Шурă тумтир пĕвĕнҫе,
Симĕс тукмак аллинҫе,
Сенкер сăнă хыçĕнҫе.
Вĕçет кăвак урхамах
Кайăкран та хытăрах.
Вĕçет, çÿрет тăлхăрса
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Тавраşри çĕр кисренет.
Çиҫĕ тăван çапăçат,
Çапăçат те, туй тăват;
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,

Хура йунӗ сирпӗнет.
* *
*
Ҫавна курса тӑнипе,
Хам та хыта пӑхнипе,
Сехри хӑпса тухнипе
Урхамахӑм сикрӗ те,
 Илте кайрӗ туласа,
Иер йенелле ҫавӑрса.
Ырса ҫитсен тӑтӑмӑр,
Унтан ҫакна куртӑмӑр:
Ҫеҫен хирте ҫил выҫат,
Сарӑ ыраш хумханат.
Сарӑ ыраш хумханат,
Ҫӑваш ҫунне йӑпатат.
Ирех тӑрса пит ҫуса,
Ирех хырӑм тӑрантса,
Йертсе килет хуҫамӑш
Ҫиҫӗ кинне тырӑ вырма.
Ҫиҫӗ тӑван йут ҫӗрте,
Арӑмӗсем ҫак хирте.
Тырӑ выраҫҫӗ йурласа,
Ыраш ӳкет касӑлса,
Пулат-тӑрат кӗлтесем,
Кӑтра пуҫлӑ ҫӗмелсем.
Тыра выраҫҫӗ йурласа,
Пӗлмеҫҫӗ те канасса.
Темӗншӗн вата карҫакӑн
Ӑшӗ ҫунат пайан унӑн.
Тырӑ выраҫҫӗ йурласа,
Пӗтрӗ карҫӑк ывӑнса.
Ытла ӑшӗ ҫуннипе
Утрӗ урапи патнелле,
Ҫиҫӗ кашӑк ывӑтрӗ,
Ҫапла сӑмах каларӗ:

Пӳлӗх, кӑтарт тӗрӗсне,
Кашӑк, кала ҫӑннине:
Хӑш кин йунлӑ кашӑкла—
Пӗтнӗ унӑн упӑшки.
Кашӑк ӳкрӗ ҫаврӑнса,
Ӳкрӗ-тӑҫӗ йун тулса
Кӗҫӗн кинин кашӑкки,—
Пӗтнӗ иккен упӑшки!
* *
*
Ҫеҫен хирпе кин пырат,
Вӑрҫа йенелле утат,—
Кашӑк йунпа тулайрӗ,
Ҫӑн тӗрӗсне кӑтартрӗ.
Йӗре йӗре кин пырат,
Асла пиҫҫӗшне курат:
—Пиҫҫем пиҫҫем, шӑллунне
Курмарӑн-ши виллине?
—Куртӑм-ӗҫке курасса:
Ларат ҫӳлӗ ту куранса,
Ҫӳлӗ ту ҫинҫе пӳрт ларат,
Унта шӑллӑм ҫывӑрат.
Тимӗр кӑвак лаши-ҫӗ,
Лаши тирӗ айӗнҫе,.
Шурӑ тутӑр пит ҫинҫе,
Симӗс тукмак аллинҫе.—
Йӗре йӗре кин кайат,
Тепӗр пиҫҫӗшне курат:
—Пиҫҫем, пиҫҫем, шӑллунне
Курмарӑн ши виллине?
—Куртӑм-ӗҫке курасса:
Ларат ҫӳлӗ ту куранса,
Ҫӳлӗ ту ҫинҫе пӳрт ларат,
Пӳртре шӑллӑм ҫывӑрат.
Тимӗр-кӑвак лаши-ҫӗ,

Лаши тирĕ айĕнҫе,
Йĕнерĕ пуҫĕ айĕнҫе,
Сăнни ури вĕҫĕнҫе.—
Йĕре йĕре кин утаҭ,
Виҫҫĕмĕшне тĕл пулаҭ:
—Пиҭҫем, пиҭҫем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
—Куртăм-ĕҫке курасса:
Лараҭ ҫўлĕ ту куранса,
Ҫўлĕ ту ҫинҫе пўрт лараҭ,
Пўртре шăллăм сывăраҭ.
Тимĕр-кăвак лаши-тĕ,
Лаши тирĕ айĕнҫе,
Шурă тутăр пит ҫинҫе,
Тĕттĕм касĕ куҫ ҫинҫе.

***

Йĕре, йĕре пыраҭ кин,
Ҫўлĕ тăва курҫĕ тин.
Курҫĕ мĕскĕн курасса,
Лараҭ ҫўлĕ ту куранса,
Тĕтре ҫўрет шуралса,
Ҫўлĕ ту тавра йавăнса.
Ылттăн хĕвел савăнмаст,
Ҫутă куна ҫутатмаст:
Пĕлĕт айне пытанаҭ,
Хăй ҫуттинҫен вăтанаҭ.
Ҫил тухаҭ те, ҫил кайаҭ,
Хурлăхла йурă йурлаҭ.
Ҫўлĕ тăвăн тĕлĕпе
Ҫăхан караҭ ҫăварне
Хăйĕн ҫивҫĕ сăмсипе,
Апат пурне сиснипе.
Ту тăрринҫе пўрт лараҭ,
Ҫăваш хытă сывăраҭ.
Кун килет те, кун иртет,—
Ҫăваш хытă сывăраҭ.
Шăппăн выртӑҭ, хускалмаст,
Ун арăмĕ хурланаҭ.
Йĕре йĕре хуйхăраҭ,
Упăшкине ыталаҭ,
Анҫах арăмĕ йĕнинĕ
Вăл сисес ҫук ҫĕрипе.
Ĕмĕр ĕмĕр йĕрсен те,
Ҫĕрĕлес ҫук куҫҫулĕпе.
Вара тăваттăмĕш кун
Ҫакăнҫĕ те, пĕтрĕ ҫун,
Хăй упăшкин сўҫĕпе,
Виҫĕ ылттăн пĕрҫипе.
Епĕ те вара хурланса,
Икĕ ҫуна асăнса,
Урхамаха вырттӑртăм,
Ҫўклерĕм те, хăвартăм.

## Ăслă суйеҫҫĕ.

Пурăннă икĕ тăван:
Шăллĕпеле пиҭҫĕшĕ;
Пĕр кăмăллă аҫаран
Пулнă вĕсем иккĕшĕ.
Шухăшлама тапратсан,
Таҫта пырса ҫапăннă,
Ҫăмăл ăспа халлапра
Темĕн те тума пултарнă.
Шухăш тытнă тăвансем
Йĕри-тавра ҫап сарма,
Ҫавăнпа пирĕн ăслăсем
Тухса кайнă вăрмана.
Хусамăр та пĕлетĕр,
Сĕм вăрманта мĕскер пур:
Хусамăр та курнăтăр—

Выçă кашкăр, упа пур,
Тата вăрман касмалли,
(Унпа кусен ĕçĕ çук)
Тата урăх сахал-и?
Епир суса кăларас çук.
Килĕшӳлĕ тăвансем
Упа тытма ăс тытнă,
Анҫах маттур каҫҫăсен
Кун ирттерни-çеç пулнă.
Хăйсен хырăм выçнипе
Вăрман улми пĕçерме
Шухăшланă кĕл çинҫе,
Хĕрлĕ кăвар ăшĕнҫе.
Хĕвел анса каç пулнă,
Кусем апат туханман,
Хăрăк шанкă пуçтарнă,
Анҫах ҫĕртсе йарайман.
Йĕри-тавра пăхрĕç те,
Шăши вуҫĕ курăнаť;
Çавна курсан пиҫҫĕшĕ
Шăллĕне хăварса утаť.
Кăваť хĕрне çитрĕ ку,
Пăхаť: вутăн йĕри-тавра
Старик выртаť çаврăнса,
Вут илмешкĕн ҫараť вăл.
Суйесçтерсе кăтарт, тет:
Пĕр ҫăн сăмах ан пултăр,
Ватă старик умĕнҫе
Асу-тăну палăртăр,
Вара вут тин илĕн, тет.
Лешĕ суйма тапратрĕ,
Анҫах суйма пĕлмерĕ:
Старик вутне памарĕ.
Мĕскĕн вара нимĕнсĕрех
Шăллĕ патне таврăнҫĕ,
Ăна хăйĕн хуйхине
Йăлт каласа кăтартрĕ.
Вăл каласа пĕтерсен:
Епĕ кайса пăхам-ха,
Терĕ те, унăн шăллĕ
Утрĕ кăваť йенелле.
Кăваť хĕрне çитрĕ те,
Каларĕ вăл тайăлса:
Ырă çын, пире вут-пуççи
Усă курма паратăн-и?
Лешĕ хирĕç: суйа суй,
Пĕр ҫăн сăмах ан пултăр,
Ватă старик умĕнҫе
Ăсу-тăну палăртăр,
Вара вут тин илĕн, тет.
—Йурĕ, терĕ çамрăк çын:
Итлесе пыр ман хыççăн,
Суйи ҫанне курăн ху,
Тунă пултăр сăмаху.
Çуралиҫҫен виçĕ кун
Малтан анне ăшăнҫен
Тухрăм еп кум шырама,
Кăмаллă çын суйлама.
Çавăнпа ула кĕсрене
Йĕнер хурса утлантăм,
Хамăн çурăм хыçнелле
Пуртă çыхса çактартăм.
Сĕм вăрманăн ăшăнҫе
Çӳретĕп кум шыраса,
Пĕçĕ хушшипе кĕсрене
Пыратăп йăтса, ҫуптарса
Ватă хăрăк йуманран:
„Есĕ ман кум пулатăн-и?

Тесе епӗ ыйтатӑп.
Лешӗ хирӗҫ каларӗ:
—„Аҭам-паҭам йӗкелӗм
Ҫӗре ҫитех усӑнат,
Питӗ йывӑр, аптрарӑм,
Кум пулмашкӑн вӑйӑм ҫук.“
„Апла еппин,“ терӗм те,
Татах утрӑм малалла;
Темӗн шухӑшпа ҫавӑрнса,
Пахрӑм куҫпа кайалла—
Йӗрӗ те ҫук пуртӑмӑн;
Кайри ури кӗсренӗн,
Хамӑн таҭӑка купарҭа
Ӳкнӗ йулнӑ пуртӑпа.
Епӗ кайалла ҫавӑрнса,
Утрӑм пуртта шырама.
Пурттӑм выртаҭ ҫутӑлса
Хыҫа йулнӑ ҫул ҫинҭе.
Пуртӑ ҫапла тупӑнсан,
Тӑрӑшмарӑм лешсемшӗн:
Икӗ йуплӗ хӑрӑкран
Ура лартрӑм кӗсрене;
Шӑм-шак йывӑр пиркипе
Кӗсре ҫине утлантӑм.
Пӗлӗтпе ҫӗр хушшипе
Хуса ӑна ҭуптартӑм.
Тӑр ҫула-ҭӗ, ӑша-ҭӗ,
Хӗртсе хӗвел пӑхаҭ-ҭӗ,
Ҫапах ӳкрӗ шурӑ йур
Вӑрӑм ҫӳҫлӗ пуҫ ҫине.
Аптранипе, пӗлменпе
Пахрӑм епӗ ҫӳлелле:
Кӑвак пӗлӗт тӑрӑшшӗпе
Сукмак выртаҭ ҫутӑлса.
Пахрӑм тата лайӑхрах,
Куртӑм вара курмаллах
Мӗншӗн ҫав йур ҫунине,
Мӗнтен сукмак пулнине.
Кӗсрен ури сыпӑнса,
Ҫитсе ҭӗрнӗ пӗлӗте,
Кашӑр, кашӑр пӗлӗте
Сӗртӗнет вӑл тӑррипе.
Каллӗ-маллӗ пуҫӑмпа
Шухӑшласа тӑмарӑм:
Ҫӳлти кӑвак пӗлӗт ҫине
Йывӑҫ тӑрӑх хӑпартӑм.
Хамӑр йалти Маҭака
Куртӑм епӗ ҫавӑнта;
Епӗ кум тӑвас сӑмаха
Петӗм йатӑм ухмахла.
Сӑмах паҭӗ ман Маҭак
Хӑй кум пулма пымашкӑн.
Тав турӑм та, кайалла
Утрӑм епӗ анмашкӑн.
Шыратӑп анма йывӑҫа,
Таҫта-и-тен йывӑҫӑм,
Инкек ҫине инкек ҫав:
Пӗлӗт ҫинҭе ҫухалтӑм.
Ман телейе пӗр ҫӑка
Ларат ӳссе ҫавӑнтах:
Пушӑтӗнҭен вӗрен йавса
Антӑм епӗ ҫӗр ҫине.
Ҫак ҫӗр ҫине ансассӑн,
Утрӑм килӗм йӗнелле;
Нумай та мар утсассӑн,
Куртӑм пыл хурҭӗсене.
Унта ҫитсе пӑхрӑм та,—
Выртаҭ хамӑн купарҭа,

Унӑн ҫинҫе йӗри-тавра
Вӗҫсе ҫӳрет пыл хурҫӗ;
Купарҫаран ҫав кайӑк
Тунӑ-хунӑ ҫӑра пыл.
Ҫавӑ пыла илтӗм те,
Хуртсемпеле алӑ тытрӑм.
Виҫӗ кунтан кил-йышӗпе
Ман йупана турӑмӑр,
Пур хурӑнташ-пӗлӗшпе
Пыллӑ сӑра ӗҫрӗмӗр.
Ӗнгӗ епӗ пӗтертӗм,
Пӗр ҫӑн сӑмах пулмарӗ!
Сӑмахуна тытатӑн-и?
Вут пуҫҫине паратӑн-и?
Терӗ суйеҫҫӗ пӗтерсе.
—„Аҫа лайӑх, пит матур,
Санӑн пуҫӑнта ӑсу пур:
Ӑслӑ суйма пит йывӑр
Пулсан та, есӗ пултартӑн.
Илех есӗ вут-пуҫҫи,
Кӑварӗнҫен укҫа ту,“
Ҫапла старик каларӗ,
Йулашкинҫен пиллерӗ.
Ҫавӑ икӗ тӑвантан
Йалта пуйан ҫук халӗ:
Старик панӑ хӗм-вутран
Пуйнӑ кайнӑ суйеҫҫӗ.

## Хитре Ҫӗкеҫ.

### I.

Ӗлӗк авал вӑрманта
Пулнӑ Кармал йатлӑ йал,
Симӗс йешӗл улӑхра
Ӗмӗр ларнӑ ҫав Кармал.
Ҫав Кармалӑн ҫынӗсен
Ҫавӗ иртнӗ ӗҫсемпе,
Сивӗ хӗлӗн кунӗсем
Иртнӗ ӗҫкӗ-ҫикӗре.
Хура тӑпра ҫийӗнҫе
Тырри пулнӑ пулмалла,
Хӑмла ҫырли хушшинҫе
Хӑмли пулнӑ саралса.
Кармал шывӗ сулхӑнӗпе
Ҫиперленнӗ хӗрӗсем;
Хура вӑрман сывлӑшӗпе
Маттурланнӑ каҫҫисем.
Ҫимӗк ҫинҫи выйӑсене
Йашсем ахаҫ иртгермен;
Сиктермелли йурӑссне
Шав итленӗ ватӑсем.
Каҫаллахи выйӑсенҫе
Пӗр пуйанӑн сарӑ хӗрӗ,
Вӗҫен ҫӗкеҫ йевӗрлӗ,
Шӑратнӑ тет йурӑсене;
Ҫавӑнпа ӑна хӑйне те
Ҫӗкеҫ йатлӑ хунӑ тет;
Ӑна ашшӗ-амӑшӗ те
Ҫӗкеҫ тесе ҫӗннӗ тет.
Унӑн ашшӗ Уланки
Йал пуҫӗ те, пӗр пуйан,
Паттӑрӑн пек кӗлетки
Ҫӳренӗ тет пӗр капан.
Хӑй Ҫӗкеҫне йуратса,
Икӗ хутлӑ шурӑ пӳртне
Йӗри-тавра картапа
Йывӑҫ пахҫи ҫавӑрнӑ.
Ҫав сат пахҫи варринҫе
Шӑнкӑртатса шыв йухнӑ,
Ҫула ҫав шыв хӗрринҫе

Ирпе Ђĕкеç çăваннă,
Хĕвел тухса сарăлиђђен
Вăл тумланса йусаннă,
Хура курак тăриђђен
Тĕрĕ тума тытăннă.
Çавăнпа Ђĕкеç пит хитре
Çут хĕвел пек çутăлнă,
Унăн ђапĕ пур çĕре
Йăри-тавра сарăлнă,
Унăн сăнĕ-сăпатне
Амăшĕ пăхса тăранайман,
Ун пек хитре хĕрсене
Урăх ниçта йаш курман.
Ăна арăм тăвасшăн,
Нумай кађђă уйланă,
Ăна кин те тăвасшăн,
Нумайĕшĕ хапсăннă,
Анђах ашшĕ тăхтама
Шухăшлаŧ тет кăçала,
Çавăнпа та никама
Сăмах паман ку çура.

* *
*

Иртрĕç çимĕк вăййисем,
Тухрĕ халăх ут çине:
Кармалăн улăхĕсем
Тулнă утă çулансемпе.
Шап-шурă халăх утă çулаŧ,
Унта, кунта çын сасси;
Çава вăш вăш вăшкăнаŧ,
Улăхĕпе ун сасси.
Халăх çăмăл калаçаŧ,
Пур çын ђунĕ хĕпĕртет;
Хĕвел кулса çутатаŧ,
Çулнă ута типĕтет.
Вăрман пуçне пĕшкĕртсе
Сивĕ сывлăш кăлараŧ,
Утă çулакан çынсене
Тартан-шуртан хăтараŧ.
Утă çулнă вăхăтра
Сехет иртни сисĕнмест,
Турă йанă ăшăра
Халăх ахаљ çӳремест:
Илйе кунĕ çитиђђен
Кармал ĕçђен çынĕсем
Лайăх типнĕ утăран
Хывнă пысăк капансем.
Утă пĕтсен тыр вырма
Хура халăх вĕçтерет,
Ир тăма та, каç выртма
Çав вăхăтра хисеплет;
Ирпе ирех ирхине
Халăх уййа ђуптараŧ,
Вăл касхине килнине
Хăлха илтсе çеç йулаŧ.
Ылттăн курăнан ырашсем
Шăтăрт-шăтăрт касăлаççĕ,
Каçаллапа кĕлтисем
Çĕмел пулса лараççĕ.
Ĕлĕк халăх васкаса
Тырă вырнă ернипе,
Ерне куна уйаса
Çав кун ĕçлемен кунĕпе.
Çав ерне кун ваттисем
Тухса ларнă урама,
Йепле тырă-пулăсем
Пулни çинђен калаçма.
Вĕсен ђипер хĕрĕсем
Йе çӳренĕ вăрмана,

Пĕҫĕк лутра пураксен
Ăшне ҫырла пуҫтарма.
Йе ҫӳренĕ шыв хĕрне,
Кĕпе ҫуса тасатма,
Кайран анасем ҫинҫе
Ҫуттăн-шурăн куррăнма;
Пирен хитре Ҫĕкеҫ те
Ҫапла кайнă пахҫана,
Йухса выртан шыв хĕрне,
Кĕпе ҫуса тасатма.
Хĕвел пăхаҭ шăратса,
Ҫил-шав, кĕр-карнимĕн те ҫук,
Кайăк йурра йуратса
Йурлаканĕ пĕри ҫук.

* *
*

Каҫалла та сулăнаҭ,
Уланкинĕн хĕрĕ ҫук;
Хĕвел анаҭ, каҫ пулаҭ,
Уланкинĕн хĕрĕ ҫук.
Уланки тус аптăраҭ,
Нимĕн тума пĕлменпе
Икĕ пĕҫҫине шарт ҫапаҭ
Хăйĕн таҫăка аллипе.
Ҫынсем патне Уланки
Хăй арăмне ҫуптараҭ:
„Пирĕн Ҫĕкеҫе курман-и?“
Тесе ăна ыйттараҭ.
Килтен киле ҫупкалаҭ,
Арăм ҫӳрет васкаса,
Пуринҫен те ыйткалаҭ
Пырĕпеле хашлатса:
„Пирĕн Ҫĕкеҫе курман-и?
Киле пыман вăл пайан...
Ах, ах ăна шырани!..
Ҫĕре сикет, ахаҫ мар...
Хăвармарĕ пĕр кил те
Йалта кĕрсе тухманни;
Анҫах нихĕш пӳртре те
Тупăнмарĕ шырани.
Вара кĕтӳҫĕ пӳртнелле
Ҫупса кайрĕ васкаса.
Кĕтӳҫĕ ĕнтĕ пĕлмелле,
Тесе пыраҭ шухăшласа.
Вĕсем уйра кунĕпе,
Вĕсем нумай курмалла,
Тесе кĕрет пӳртнелле;
Сăмах хушаҭ ыйтмалла:
„Есир уйра, ĕҫкейсем,
Пирĕн Ҫĕкеҫе курман-и?
Манăн ĕнтĕ пĕр сиртен
Анҫах йулнă ыйтманни.“
Кĕтӳҫĕ пӳрҫĕ пĕҫĕк пӳрт
Хый суттипе ҫутăлаҭ,
Кăптăр-каптăр тĕпелте
Пĕҫĕк сĕтел курăнаҭ;
Ҫав сĕтелĕн айĕнҫе
Хура кушак мăрлатаҭ,
Пуйан арăмĕ килиҫҫен
Хăлхи урлă пиҭ ҫăваҭ.
Пуйан арăмĕ ыйтсассăн,
Кĕтӳҫĕ шăппăн тапратаҭ:
„Кăнтăр апаҫĕ тусассăн,
Куртăм ăна мĕскĕне
Епĕ кайăк уринҫе,
Калама та хăрамалла!
Палан варĕ йенелле
Вĕҫҫе кайрĕ унпала.
Кайăк пыраҭ ӳпле пек,

Ђалăш пулĕ çунатти;
Хашканă ђух кăвар пек
Хĕрлĕн куранаť пĕсехи.
Пуйан арăмĕ çавăнтах
Ăнсăр ўкет урайне:
„Ах мĕн пулђĕ, Турă, çырлах,“
Тесе йĕрет куççулĕпе.

* *
*

Çурăм-пуçĕ катара...
Çўлти пĕлĕт кăн-кăвак....
Кармал çынĕсем ыйхăра,
Çывăраççĕ вилнĕ пек.
Уланкинĕн хуйхăпа
Куçĕ мăђ та хупăнмаcť,
Вăл хăй хуйхи-суйхипе
Çĕрĕпеле çывăрмаcť.
Ĕмĕр пĕр пек уттипе
Тухрĕ ку кил-картине,
Хура пысăк куçĕпе
Пăхрĕ пĕлĕт çинелле.
Çут çăлтăрсем çутăлаççĕ,
Пытанмалла ылђаççĕ,
Йăр-йар çўлтен анаççĕ,
Сасăсăр йурă йурлаççĕ:
„Çĕрĕн пĕђĕк çынĕсем,
Темĕнле хуйхă пулсан та,
Ан йухтарăр куççулне
Ытла йывăр пулсан та.
Есир унта кулђанни
Пирĕн ђуна сиктерет,
Пире сирĕн макăрни
Урăх çĕре вĕçтерет.
Епир сире хĕрхенсе
Пĕђĕк сутă паратпăр;
Хамăр пĕђĕк пиђђене
Пулăшмашкăн ыйтатпăр.
Ан кулђанăр, халăхсем,
Ырă ыйхăпа çывăрăр.
Епир сире, мĕскĕнсем,
Пуранна ђухне пăрахмăпăр.“
Уланки тус çав йурра
Хăлхисемпе илтеймест,
Ђĕрипеле кулђанса
Лайăххăн вăл ăнланаť.
Ырă йурри çăлтăрсен
Епир пĕлмен вăйĕпе
Лăплантарђĕ хуйхинђен
Уланкинĕн ђĕрине.
Çăмăлланђĕ Уланки,
Кил-картинђе уткалаť...
Сасартăках кăвак хуппи
Уçăлаť те, хупăнаť.
Уланки тус çавăнтах
„Хĕр тупăнтăр“ тейеђĕ,
Унтан пўртне кайаллах
Темĕн тума кĕрейђĕ.
Çурăм-пуçĕ хĕрелет,
Тул çутăлаť кĕлт тăрсан,
Çăлтăр йăр-йар ўккелет....
Хĕвел çути палăраť....
Уланкинĕн тарçисем
Çитрĕç йулан-утсемпе;
Ђĕнсе килђĕç çав çынсем
Йумăç-тухатмăшсене.
Пур таврари йалсенђен
Пуçтарăнђĕç лешĕсем:
Пĕр пĕринђен ђĕлхесĕсен
Ирттереççĕ ђĕлхисем....

* *
*

Хура вăрман, сĕм вăрман,
Йанăрать, кĕрлет ун варри,
Тăрсан, тăрсан пăртакран
Çатăртатать çатраки.
Çул пур çĕртен, çук çĕртен
Çиҫĕ йулан вĕçтерет;
Шăши тухман çĕрсенҫен
Вăл тухать те, сиктерет.
Пурин лаши хашлатать,
Сăмсипеле хартлатать;
Пурне те çынваскатать,
Пырсан-пырсан çаптарать.
Усалсен пек çынĕсен
Çӳçĕ-пуçĕсем вĕçеççĕ;
Вĕсен тискер куçĕнҫен
Вутпа кăвар сикеççĕ.
Куçĕсемпе çӳлелле
Пăхаççĕ те, кайăк çук;
Кăвак сăмсисемпеле
Шăршлаççĕ те, шăрши çук.
Хăйсен вĕçкĕн шухĕшĕпе
Çав кайăка кураççĕ,
Ҫĕлхи çине шаннипе
Ăна вĕсем тупаççĕ.
Сиктереççĕ сиккипе
Шăп сывлăша йанăратса,
Хура вăрман варрипе
Хăйсем тĕллĕн çул туса.
Пĕр пĕринпе калаçса,
Пырсан пырсан кулаççĕ,
Пур те пĕрле ахăрса,
Асамăç йурри йурлаççĕ:
„Çитмĕл ултă çырмана
Кĕрсе тухса каçăпăр,
Çитмĕл çиҫĕмĕш варта
Çав кайăка тытăпăр.
Шуйттан ҫарсан шырама
Унтан епир хăрамăпăр;
Арçурри аташтарсан,
Тытăпăр та, çакăпăр.
Сик, сик, лашам, сик, лашам,
Палан варĕ йеннелле,
Вĕç, вĕç лашам, вĕç лашам
Каç пулиҫҫен çитмелле,
Каç пулиҫҫен çитĕпĕр,
Çав кайăка тытăпăр;
Шывсăр-мĕнсĕр пĕçерĕпĕр,
Шăмми-мĕнĕпе çийĕпĕр.“
Хура вăрман, сĕм вăрман,
Йанăрать, кĕрлет ун варри,
Тăрсан тăрсан пăртакран,
Çатăртатать çатраки.
Çул пур çĕртен, çук çĕртен
Çиҫĕ йулан вĕçтерет,
Шăши тухман çĕрсенҫен
Вăл тухать те, сиктерет.
Пурин лаши хашлатать,
Сăмсипеле харлатать,
Пурне те çын васкатать,
Пырсан пырсан çаптарать.

* *
*

Хĕвел каçа сулăнать,
Сăрт хысçнелле пытанать;
Сулхăнланать сĕм вăрман,
Уçă сывлăм пăларать.
Сĕм вăрманăн аҫисем
Йăвисене кĕреççĕ;

Ђăри-ђăри кайăксем
Йурă йурласа вĕçмеççĕ.
Kaçxи хĕвел ылттăн пек,
Йывăç витĕр курăнаť,
Çара вĕçен кайăк пек
Унăн çутти вăйă выђаť.
Пĕр сасăсăр вăйă выђаť
Kaçxи хĕвелĕн çутти;
Нӳрлĕ сывлăш палăртаť
Симĕс йывăçăн çулçи.
Хĕвел анђĕ сăрт хыçне,
Тĕттĕмленђĕ вăрманта;
Пĕр сасă-хура ун ђухне
Илтĕнмест çав çавăнта.
Шăпах тăраť сĕм вăрман
Пĕр-ик сехет çавăн пек;
Йытă сасси çеç катаран
Илтĕнкелет йĕнĕ пек.
Kaђăмăђи (*) йенĕнђен
Вăрман йанăра пуçларĕ;
Сывлăш ырă ыйхинђен
Вăранма та пуçларĕ.
Ӳхĕ сасси йевĕрлĕ
Темскер сасси йанăратаť.
Пур çĕрте те çав тĕрлĕ
Хăрăк шанкă шартлатаť.
Çавăрăнаççĕ пĕр çĕртех
Çиђђĕн лашалăскерсем:
Пĕр шăмă урлă пĕр майах
Kaçкалаççĕ мĕскĕнсем.
Унтан вара майĕпе
Лашисене кăкарђĕç,
Шăппăн çеç пĕр пĕринпе
Темĕн сăмах пуплерĕç.
Акă кăваť хураççĕ
Акăш-макăш хăрăкран,
Пуçтарĕнђĕç, тăраççĕ
Айаккарах çав вутран.
Ах, унђђен те пулмарĕ,
Çăтăр-çатăр тутарса,
Ахăрса темскер кайрĕ
Йывăççене çĕмĕрсе.
Çăтăр-çатăр тутарсан,
Çынсем пуçа çĕклерĕç,
Вăл ђарăнма пуçласан,
Тутисене йелпĕртрĕç.
„Акă сана арçурри!“
Тенĕ сасă илтĕнђĕ:
„Шултăра тăвăр муклашки
Санăн вăйна çĕнтерђĕ.“
Утсем çине утланђĕç
Çав çĕрлехи маттурсем;
Вут хĕрĕнђен тапранђĕç
Вĕсен самăр лашисем.

* *
*

Уйăх тухрĕ, хăпарђĕ,
Шурă çутăпа çутатаť;
Тĕнђе тĕксĕм палăрђĕ,
Йумахри пек курăнаť.
Уйăх шăваť куђанса
Кăвак пĕлĕт тăрăшшĕпе,
Пирĕн çĕре сыхласа
Пуçне пĕкет хĕрхенсе.
Тĕнђе шăпах çывăраť,
Ыйăннипе вăл канаť;
Таçта лаша тулхăраť:
Мĕскерле çын çул кайаť?

---

(*) Вăрман йађĕ.

Пушкӑрт пуссн петӗнҫе
Ав мӗлкесем куҫаҫҫӗ,
Кӑвакал шурӗ йенҫен
Сиккипеле кайаҫҫӗ.
Хура пусӑ уйӗнҫе
Йертсе ҫулӗ хӑй пырат:
Сухаланӑ ҫӗр хушшинҫе
Вӑл ҫап-ҫутӑ курӑнат.
Сиккипеле сиктерсе
Вӑрманалла пыраҫҫӗ.
Лашисене хистесе
Вӑйран-халран кайаҫҫӗ.
Лашисенӗн ӑшӗсем
Шыв тумламӗсӗр ҫунаҫҫӗ,
Хӑйсен те ҫӑварӗсем
Темӗн пек ӗҫме ыйтаҫҫӗ.
Ҫавна кусем астуса,
Сaптӳлек кӳлли йенелле
Лашисене ҫавӑрса,
Ҫуптараҫҫӗ сиккипе.
Ҫамак тавращӗ хӑртнинҫе
Саптӳлек кӳлли курӑнат;
Хӗрлӗ хӑва пӗр йенҫе
Кашла-кашла хумханат.
Уйӑх мӗлки пашалу пек
Кӳлӗ тӑрӑх йарӑнат,
Кӳлли пысӑк карӑнтӑк пек,
Курӑк ӑшӗнҫе ҫутӑлат.
Пирӗн ҫиҫӗ ҫӗлхеҫӗсем
Ҫитрӗҫ унта ҫуптарса,
Лашисене мӗскӗнсем
Шӑвараҫҫӗ астуса.
Хӗрлӗ хӑва варринҫен
Тухат кайӑк-кӑвакалӗ,
Куҫа хупса илиҫҫен
Кӳлле каҫат кӑвакал.
Йарӑнат те, ҫӑмат те,
Пӗтӗм кӳлле ҫавӑрнат.
Тӗкӗ уйӑх сутипе
Йӑлтӑр-йалтӑр ҫеҫ тӑват.
Кӳлӗ хӗрне тӑсӑлса
Асамӑҫсем выртаҫҫӗ,
Шыва ланкӑртаттарса
Тутисемпе туртаҫҫӗ.
Ӗҫрӗҫӗ те, тӑранҫӗҫ,
Тӑрас тесе уйлаҫҫӗ,
Анҫах пӗри те тӑмарӗҫ,
Пур те шыва кайаҫҫӗ...

* * *

Шурут ҫырми варринҫе
Шурӑ шӑмӑсем выртаҫҫӗ,
Кӗркуннехи ҫӗрсенҫе
Вилнӗ ҫын пек курӑнаҫҫӗ.
Пирӗн патри ҫӑвашсем
Унтан ҫӗрле иртмеҫҫӗ;
Вӗсен шӑмӑсӑр ҫӗлхисем
Темӗн те пӗр пуплеҫҫӗ:
Ҫи ҫур-ҫӗрӗн тӗлӗнҫе
Ҫиҫӗ йулан тухаҫҫӗ,
Хура шӑрҫӑк уйӗнҫе
Каллӗ-маллӗ ҫупаҫҫӗ.
Карланкипе хӑрлатса
Пырсан пырсан макӑраҫҫӗ,
Пӑсӑк саспа кулҫанса,
Хуйхӑ йурри йурлаҫҫӗ:
„Пурӑннӑ ҫух пурӑнтӑмӑр
Усал нумай турӑмӑр,

Вилсен асапа кӗтӗмӗр,
Шыври усал пултӑмӑр.
Кунӗн-ҫӗрӗн вут ҫинҗе,
Җӗлхе ҫинҗе ҫакӑнса,
Ҫак мӑн ҫӗрӗн айӗнҗе
Пурӑнатпӑр макӑрса.
Шурут ҫырми лакӑмне
Пирӗн утсем тӑрӑннӑ,
Типӗ ҫырма тӗпӗнҗе
Выҫӑ пирки касӑлнӑ.
Җӗрӗлех шыв усалӗ
Илҗӗ хитре Җӗкеҫшӗн;
Тытрӗ кайӑк кӑвакалӗ
Саптӳлек кӳлли шывӗшӗн".
Ҫапла вӗсем йурласа,
Җи ҫур-ҫӗрӗн тӗлӗнҗе,
Лашисемпе кустарса
Ҫӳреҫҫӗ вар патӗнҗе.
Хӑйамат йенҗен-и тен
Вӗҫет килет текерлӗк,
Йурлаӑ ҫынсем җарӑнсан
Җӗрӗ шуйттан йевӗрлӗ:
„Пурӑннӑ җух ӗҫӗрте
Сире кам пулӑшаӑ-җӗ?
Сирӗн усал пӑсташӑрта
Кам вӑй сире параӑ-җӗ?
Ватӑлнипе, супнипе
Хӑвӑра хӑвӑр пӗтертӗр,
Хӑвӑр җӗлхе пӗлнипе
Кам вӑйлине пӗлмерӗр.
Палан варне тупрӑр-и,
Хай кайӑка тытрӑр-и?
Пуйан хӗрне ҫӑлтӑр-и,
Какшӑмпа мул илтӗр-и?"

Шӑмӑш автанӗ авӑтаӑ,
Шӑп ҫур ҫӗре пӗлтерет.
Куҫран-пуҫран ҫухалаӑ
Ҫынӗсемпе текерлӗк.
Шурут ҫырми варринҗе
Шӑмӑсем ҫеҫ курӑнаҫҫӗ,
Хавшак ҫынсен җунӗсене
Хӑратса ҫеҫ выртаҫҫӗ.

II.

Кармал йалӗ аслӑ йал:
Пуйан та пур, җуххи те,
Җухӑнни ҫеҫ ҫав авал
Пулман җӑваш хушшинҗе.
Ӑннӑ халӑх ӗҫӗсем
Пӳлӗх Турӑ пӳрнипе,
Ырӑ курнӑ ҫынӗсем
Пӗтӗм пысӑк йалӗпе.
Ӑҫта кирлӗ сат пахҗи
Сулхӑн туса кашлатаӑ,
Вӗсен ҫимӗҫин шӑрши
Йӗри-тавра саралаӑ.
Пускилийӗ варсемпе
Пускилсенҗен уйӑрлаӑ,
Ҫапах та пӗр-пӗринпе
Ӗҫсе-ҫиме хутшӑнаӑ.
Анат-касра пурӑннӑ
Амӑшӗпе Йуманкка,
Маттур аҗа ҫав пулнӑ
Йалти тӑлӑх Йуманкка.
Ӗҫ ӗҫлеме йуратнӑ,
Йӑваш пулма тӑрӑшнӑ,
Ырӑ ҫынпа паллашнӑ,
Усал ҫынтан уйӑрӑлнӑ,
Халиҗҗен ҫынна култарман

Ури ҫине пустарман;
Вăл тăшмана тапăнсан,
Унтан тăшман тарайман:
Ҫиленсессĕн ҫĕлен пек,
Куҫĕпе ҫиҫĕм ҫиҫтерет;
Кăмалла ҭух, кăлҭак пек,
Ҫын ҭĕрине ҫемҫетет.
Кутник сакки сарлакĕш
Хулпуҫҫийĕ курăнаҭ,
Улăп пĕвĕ пысăкĕш
Кĕлеткийĕ курăнаҭ.
Сарă хĕрсен вăйăра
Пĕр ун ҫинҭен куҫ каймасҭ.
Вăл йурлана вăхăтра
Йалта пĕр ҫын ҫывăрмасҭ,
Йурă йурлама тапратсан,
Тупăкри ҫын ҭĕрĕлет,
Каласмашкăн пуҫласан,
Ватă ҫынтан ирттерет.
Сарă ҫӳҫин кăтрисем
Пĕтĕм хĕре пăхтараҭ,
Хĕрлĕ питҭе-куҫĕсем
Ҫине пăхсан, сăн курăнаҭ.
Пуринҭен те ытларах
Ҭĕкеҫ ăна йуратаҭ,
Пуринҭен те нумайрах
Унпала вăл вăйă выҭаҭ.
Йуманкка та Ҭĕкеҫе
Пите хытă йуратаҭ.
Вăйăра Ҭĕкеҫ йенелле
Вăл йăпшăнаҭ, сулăнаҭ.
Амăшесем те пĕлеҫҫĕ
Вĕсем ҫапла пурăннине;
Анҭах нимĕн те ҭĕнмеҫҫĕ
Иккĕшне те савнипе.

* *
*

Хитре Ҭĕкеҫ сухалсан,
Вăл ҫухални ирпеле,
Тул ҫуталнă-ҫутăлман
Саралнă пĕтĕм йалĕпе.
Тырă вырма та каймаҫҫĕ
Кармал ĕҫҭен ҫынĕсем,
Ун ҫинҭен ҫеҫ шавлаҫҫĕ
Вĕсен шăмăсăр ҭĕлхисем.
Уланки хĕрĕ ҫĕтнине
Анат-касра пĕлеҫҫĕ,
Ăна кайăк тытнине
Темĕскерле те пуплеҫҫĕ.
Йуманкканăн хăлхине
Ҫав сăмахсем кĕреҫҫĕ,
Унăн вĕри ҭĕрине
Ҫите ҫите тивеҫҫĕ.
—„Ах ҭунăмҫăм, шухă ҭунăм.
Йепле пулас, мĕн тăвас?
Ах йуратни, савниҫĕм,
Йепле сана ман ҫăлас?“
Анкă-минкĕ пуҫĕнҭе
Ҫав шухăшсем ҫӳреҫҫĕ,
Унăн куҫĕ умĕнҭе
Иртнĕ кунсем ҭĕрĕлеҫҫĕ.
Лайăхрах ыйтса пĕлем,
Аспа пуҫра ҫавăрам,
Унтан вара ĕненем.
Пӳлĕхҫийе пуҫҫапам,
Пӳлĕхҫийе кĕл-тăвам
Ҭатма вăй-хал памашкăн,
Пулушăмран ыйткалам
Шырама пулăшмашкăн.

Ђăркуçланаŧ, пуççапаŧ,
Пӳлĕхçийе кĕл-тăваŧ,
Вĕри куççулĕ йухтараŧ,
Пĕр сехетрен тин тăраŧ.
Тăраŧ те вăл ђуптараŧ
Çырма пуçĕ пускилне,
Сасартăк кĕрсе тăраŧ
Пулушăм пĕђĕк пӳртне.
„А, Йуманкка, килех!"
Тийет ăна Пулушăм,
„Тĕпелерех иртсем",
Ђĕнет ăна Пулушăм.
Пулушăм вăл ђĕлхеçĕ мар,
Çапах ђиртен тӳрлетет,
Вăл асамăç-йумăç та мар,
Çапах темĕн те пĕр пĕлет.
Йуманкка хăй хуйхине
Калаŧ ăна хăлхинђен,
Мĕскерле тумаллине
Ыйтаŧ пĕтĕм ђĕринђен.
Пулушăмĕ ырă çын,
Çавна курсан хĕрхенђĕ,
Йепле тупасси çинђен
Кала кала пĕлтерђĕ.
Çăмăлланђĕ Йуманкка,
Пулушăма тав-турĕ,
Унтан вара кайалла
Анат-касса уттарђĕ.

* *
*

Тавлă çĕр уйăи вăрманта
Уçланкă пек курăнаŧ;
Йĕлме-çӳçе йĕри-тавра
Симĕсленсе сарăлаŧ.
Пайан хĕвел шăратса
Хура пусса çунтараŧ,
Çулти çынна тарлатса
Вăйран-халран кайтараŧ.
Çапах виççĕн вăрмантан
Тухаççĕ те утаççĕ,
Вăрман витĕр тавраран,
Тавлă çĕр урлă кайаççĕ.
Кĕл пек тăпра çийĕнђен
Вăкăрсем пек утаççĕ,
Пуринĕн те аллинђе
Алтуйийисем выђаççĕ.
Хĕвел пăхаŧ шăратса,
Çил-шав кĕр-карнимĕн теçук,
Кайăк йурра йуратса
Йурлаканĕ пĕри çук.
Виç çын кăна Тавлă-çĕре
Йантратаççĕ калаçса.
Сасартăк вĕсен çине
Тусан пыраŧ йавăнса.
Çавра çилĕн варринђе
Вĕсем курђĕç пĕр пукан;
Çав пуканăн çийĕнђе
Пĕр çын лараŧ, ђĕр-шуйттан.
Ђике тăрăшшĕ ватă çын
Вут пек хĕрлĕ сухалпа,
Майракисем çĕр вăкăрин,
Йуплĕ йуплĕ ђармака.
„Катăк пуртă, йе çĕçĕ,
Тимĕр карта тĕлнех пул,"
Пĕри çапла терĕ те,
Хăйсен çулĕпе утрĕçĕ.
Вĕри тусан çавăнтах
Саланма та пуçларĕ,
Шуйттанĕ те пăђђувах

Таçталла кĕрсе кайрĕ.
Çул çыннисем Кармалтан
Тухнă ĕнер ирпеле,
Вĕсем çавă вăхăтран
Утнă çĕрĕ-çĕрĕпе.
Хăйсем Тавлă çĕр уййинҫе
Йара йара пусаççĕ,
Хырăмĕсем хыр çинҫе
Ула ула лараççĕ.
Вĕсен çулĕ хĕрринҫе
Улма йывăççи курăнаТ,
Çаврака сулхăнĕпе
Хăй айнелле йыхăраТ.
Çавăнпа унăн сулхăнне
Çаксем пырса лараççĕ,
Хутаççинҫи çăкăрне
Калар̆ҫĕç те ҫăмлаççĕ.
Йывăç çинҫе улмисем
Çимс анҫах ҫĕнеççĕ,
Анҫах танлă ҫăвашсем
Спассăр улма çимеççĕ.

* *
*

Апатланса тăранҫĕç
Варăм çулăн çыннисем,
Паттăрсем пек тапранҫĕç
Каллах утма маттурсем.
Хитререх те пысăкрах
Вата çĕрĕнҫи маттурĕ,
Иккĕшĕнҫен çăмăлрах
УтаТ унăн урийĕ.
Вăл витерсе калаçаТ,
Темскер тума вĕрентет,
Йĕри-тавра пăхкалаТ,
Куçне-пуçне выљатаТ.
Çавă пулаТ Йуманкка,
Иккĕшĕ йулташĕсем,
Матенпеле Уљанкка,—
Ун пиҫҫĕшин ывăлĕсем.
Вăл вĕсене йулташа
Илнĕ хăйпе çул çине;
Лешсем те асăнмалăх
Пулăшаççĕ тăванне.
Çапла вĕсем утаççĕ
Питĕ хытă васкаса;
Курăнми те пулаççĕ,
Вăрманалла пăрănса.
Хĕвел пăхаТ пĕçертсе,
Тĕнҫе тĕтĕрен курăнаТ;
Вăрман сулхăн ӳкерсе,
Хăй айнелле йыхăраТ.
Хĕвел хытă шăратсан,
Ирĕксĕрех ӳпкелĕн,
Пăтăр пăтăр тар тухсан,
Каç пуласса çеç кĕтĕн.
Анҫах хĕвел вăхăтсăр
Анса лармасТ сăрт хыçне,
Каç та çаплах вăхăтсăр
Килмест уçă сывлăшĕпе.
Пайанхи кун улăшăнҫĕ:
Хĕвел кăнтăр тĕлĕнҫе
Катăлмашкăн пĕр йенҫен
Кăштăн кăштăн пуçларĕ.
Вăпăр карҫăк шутланă
Хĕвел пуçне çимешкĕн:
Патак çине утланнă
Хĕвел патне вĕçмешкĕн.
Хĕвел патне çитнĕ те,
Кавле-кавле сутта çийет

Пĕтĕм çутă тĕнҫене
Çăварĕпе хăратаҭ.
„Тĕнҫе ĕнтĕ пĕтет пулĕ!“
Тесе çынсем пуплеççĕ;
„Йулашки кун çитет пулĕ!“
Тесе уйран кĕреççĕ.
Йуманккапа йулташĕсем
Тĕттĕм пирки ҫарăнҫĕç:
„Сĕм сĕмеккем, сĕмеккем,
Çав карҫăка çи!“ терĕç.
Вĕсем çапла каласан,
Хĕвел пăхма пуçларĕ;
Хăйсем каллах пăртакран
Кайрĕç кайас çулĕпе.

* *
*

Тĕттĕмленҫĕ, каç пулҫĕ,
Пĕтĕм тĕнҫе лăпланҫĕ,
Шăрăх сывлăш уçăлҫĕ,
Вĕри ăшă лĕпленҫĕ.
Такăр, йака çулпала,
Сĕм вăрманăн тăрăшшĕпе
Виçĕ маттур каçпала
Пыраҭ пысăк уттипе.
Хаштин хаштин хашлатса
Вĕри çĕлен вĕçтерет,
Сывлăш тăрăх йарăнса,
Хĕрлĕ хĕлхем ӳкерет.
Çул çыннисем пуплеççĕ,
Сасă туса утаççĕ;
Пуçĕсене çĕклеççĕ,
Çавна курах кайаççĕ.
„Ку çĕлене антарас,
Улталама йарас мар,
Йаш-кĕрĕме ырă тăвас,
Илĕртмешкĕн парас мар,“
Шикленмесĕр каларĕ
Йуманкка çав сăмаха.
Катăк çĕçĕ кăларҫĕ,
Сулахайпа кайалла
Сылтăм хулпуççи урлă
Çав çĕççине пăрахрĕ,
Сулахай алли урлă
Сурса çапла каларĕ:
„Вĕри çĕлен, вут çĕлен,
Ан çакăнта, вут çĕлен,
Улталаса йашсене
Ан çӳре есĕ ӳлĕмрен!“
Вĕри çĕлен çавăнтах
Ӳкет çиçĕм сиçнĕ пек,
Йуманккаран кайрарах
Упаленет шуйттан пек.
Йуманкка пĕр йулташне
Пилеш хулă кастараҭ,
Унтан катăк çĕççине
Хулли вĕçне сыхтараҭ.
Вара хулла тытаҭ те,
Вут çĕлене çаптараҭ,
Вут çĕленĕн çурăмне
Кастараҭ те кастараҭ!
Вĕри çĕлен пилĕкĕ
Çип пек çеç тăрса йулаҭ.
Унăн вăйĕ-тĕрекĕ
Хĕртнĕçем пĕтсе лараҭ.
Ыйтаҭ çĕлен пулăшу,
Йуманккана йăлăнаҭ,
Лешĕ параҭ пулăшу:
Кастараҭ те кастараҭ!
„Сире ҫĕррĕн йарсассăн,

Есир çиҫҫӗн тухатăр,“
Тесе калаҭ ыйтсассăн
Пирӗн Йуманкка паттăр.
Вăл сисекен ҫӗрипе:
„Ҫӗкеç патне кайаҭ-ҫӗ,“
Тесе ăна хуллипе
Çатлаттарҫе вӗлерҫӗ.

* *
*

Йуманккапа йулташӗсем
Кунӗн-çӗрӗн утаççӗ,
Çапах алли-урисем
Пирӗнни пек ырмаççӗ.
Виççӗмӗш кунне вӗсем
Палан варне çитрӗçӗ,
Ăна курсан ҫӗрисем
Хытă кăлт-кăлт сикеççӗ.
Палан варӗ тарăн вар,
Йепле унта анас-ха,
Ах, апла мар, апла мар,
Анас пулаҭ çапах та.
Пӗр çăкана касрӗç те,
Ун хуппине сӳрӗçӗ,
Йавса вӗрен турӗç те,
Çавăн тăрăх анҫӗçӗ.
Палан варӗн тӗпӗнҫе
Тар йывăççи курăнаҭ;
Йуманкка ун йеннелле
Йулташӗсемпе пыраҭ.
Херех те пӗр курăкпа
Лартнă шывпа Йуманкка
Тар йывăçне аллипе
Сӗркелерӗ темӗн тума.
Унтан мука пуртăпа
Ăна касма пуçларӗ,
Анҫах пуртти паллă та
Йывăç çинҫе тумарӗ.
Вара çапла каларӗ:
„Касăл, касăл, тар йывăç,
Тайăл, тайăл, тар йывăç!“
Каллах касма тапратрӗ.
Каҫ! каҫ! лартаҭ—касăлаҭ,
Тар йывăççи тайăлаҭ;
Каснă çӗртен сӗт йухаҭ,
Йывăç кутне кӳл тăваҭ.
Йуманккаран тар йухаҭ,
Шăпăр шăпăр тутараҭ;
Каснăçемӗн касăлаҭ,
Тар йывăççи тайăлаҭ.
Ӗçес килет Йуманккан,
Вут пек çунаҭ ăшӗ-ҫикки,
Çапах йывăç касасран
Пăрахмасҭ ун ала-ури;
Çитменнине сӗт кӳлӗ
Пуçтарăнаҭ йывăçран,
Çапах та вăл: „тем пулӗ,“
Тесе, ӗçмест çавăнтан.
Уљанккана пурттине
Ывăнсассăн тыттарҫӗ
Тар йывăçне ӳкерме,
Пăртак хăй канма тăҫӗ.
Пӗр вунă хут пуртăпа
Лешӗ каҫ! каҫ! лартсассăн,
Тар йывăççи тайăлса
Ӳкрӗ шалҫи тулсассăн.
Тар йывăççи ӳксессӗн
Куçран-пуçран çухалҫӗ,
Вăл çухалсан кӳлӗрен,
Сарă Ҫӗкеç тухса тăҫӗ.

***

Пăнтăр-пăнтăр параппан
Сассипеле йал йантрат̆,
Йуманккана йалти пуйан
Пайанхи кун хĕр парат̆.
Шап-шурă халăх туй курса
Пуйан патĕнҫе савăнат̆,
Сăрипеле тăранса
Шыв пек ăна тыткалат̆.
Ҫĕрĕпеле туй сикет
Йашсен ҫунне хускатса.
Тул ҫутăлат̆, ҫĕр иртет,
Халăх ҫапах ҫавăнта.
Хĕвел тухса хăпарсан
Туй халăхĕ ҫуй турĕ,
Сарă пысăк кĕлетрен
Пĕркенҫĕкпе хĕр тухрĕ,
Икĕ кĕтеслĕ шыҷăка
Ăна илсе кĕреççĕ;
Ашшĕ-амăшĕ шыҷăкра
Куççулĕпе йĕреççĕ.
Парне парса ҫавăрăнсан,
Татах кил-йышĕ йĕрет;
Ашшĕ-амăшĕ тав тусан,
Пĕркенҫĕкпе хĕр хӯхлет:
Телейне те ыррине
Аттем патĕнҫе куртăм,
Хуйхипе те суйхипе
Хĕр ĕмĕринҫе паллашрăм.
Атте, маншăн куҷанăн
Утă ҫулма кайсассăн,
Ӯлĕм мана астăвăн
Тырă вырма тухсассăн.
Анне, хĕрне астăвăн
Хĕлĕн вăрăм ҫĕрĕнҫе,
Пайтах куççулĕ йухтарăн
Хăвăн тĕпел кукринҫе.
Мамăк минтер хăпармасть
Хăмаҫ пиҫĕ тăвăртан,
Манăн кăкăр ҫавăрăнмасть
Пысăк хуйхă курнăран.
Ҫĕрĕ турат йăмрасен
Ҫил-тăвалта хуҫалат̆,
Хĕр те ашшĕ килĕнҫен
Пĕве ҫитсен уйăрлат̆.
Ҫĕкеҫ ҫапла шыҷăкра
Хӯхле хӯхле йурă йурлат̆,
Шап-шурă халăх йĕри-тавра
Куççулĕне йухтарат̆.
Хапха патне ҫын утат̆
Пĕр пĕринҫен васкаса:
Йулан утпа хĕр кайат̆,
Йĕрсе йурлат̆ хумханса.
Уй хапхинҫен тухнă ҫух
Пĕркенҫĕкĕн ҫийĕнҫен
Саламатпа виҫĕ хут
Ҫапрĕ кĕрӯшĕ хуллен.
Туй халăхĕ тайăлат̆,
Ӯсĕр халăх ҫывăрат̆;
Туй куракан саланат̆,
Туй сăрине вăл мухтат̆.

***

Пирĕн ĕмĕр, йаш ĕмĕр,
Иртсе кайат̆ Ҫĕмпĕрте.
Ăслă пулас терĕмĕр,
Ҫавăнпа епир йут ҫĕрте.
Пысăк ăслă пулсан та,
Йуманккана ҫитес ҫук.

Питĕ çирĕп пулсан та,
Ваттисем пек пулас çук.
Ĕлĕкхи пур ђăвашсем
Пĕђĕккĕнех пĕтеççĕ;
Вĕсен ĕçки-çикисем
Хăйсемпелех пĕтеççĕ.
Кармалта та кађухне
Пысăк ĕçкĕ тумаççĕ;
Çимĕк çинђи вăйăсене
Выђама та пăрахаççĕ.
Хĕлĕн вăрăм çĕрĕнђе
Сарă хĕрсем уллахра
Йуманккапа Ђĕкеçе
Асăнаççĕ йурăра.
Ђĕкеç туйĕ кĕрлени
Йĕри-тавра сарăлнă,
Вăл çухалса тупăнни
Ĕмĕрлĕх йат хăварнă.
Хитре Ђĕкеç йурրине
Халĕ те пулин йурлаççĕ.
Туй халăхне йĕртнине
Халлап туса вакlаççĕ.—
Йĕри-тавра сĕм вăрман
Пулнă ĕлĕк Кармалăн:
Кармал çынĕ уй курман
Уй хапхинђен тухсассăн.
Ăçта пăхнă—сĕм вăрман
Кашла-кашла хумханнă;
Унпа тырă-пулăран
Ытла Кармал савăннă.
Халĕ вăрман хĕррине
Тăрса йулнă çав Кармал,
Йывăççем те кађухне
Сайра кăл-кал ўсеççĕ.
Кармалăн улăхĕсем
Халĕ те утă параççĕ,
Халĕ те Кармал çынĕсем
Утă çулса тарлаççĕ.
Палан варне хам кайса,
Хам куçăмпа хам куртăм,
Тăраннинђен хăраса
Анса анђах курмарăм.
Пирĕн йалти сар хĕрсем
Сăнсăр тискер йашсене:
Палан вартисем! теççĕ,
Çывăха та йамаççĕ.
Çынсем ĕçне ĕçлеççĕ,
Халлапсене йараççĕ;
Вăхăђĕсем иртеççĕ.
Варти шыв пек ђупаççĕ.
Тем тĕрлĕ те шыв йухать,
Тĕрлĕ çĕре алăтать.
Тĕслĕрен çын çуралать,
Пинтен пĕри ђап йарать.

## Хунар çутти.

Итлĕр-ха, итлĕр-ха, пурăнакансем,
Уçăр-ха куçăрсене, халăхсем!
Сĕм вăрмана кам-ши çав йанратать,
Кам-ши хунарпа ăна çутатать?
Аслати сасси пек унăн сасси,
Уйăх çутти пек хунарин çутти.
Аллипе сулсассăн сывлăш кĕрлет,
Малалла утсассăн çĕр кисренет.

Вăл сиввĕн пăхсассăн çиçĕм
çиçет,
Калаçнă ђух вилнĕ çын
ђĕрĕлет.
Пур йывăççем тăрăх çил-
шав кĕрлет,
Вăхăђĕ вăхăђĕпе йан йантраӗ.
Кам пулĕ тетĕр есир çав çынна?
Кам хăват параӗ пулĕ тетĕр
ăна?
Епĕ халĕ пĕлтĕм ĕнтĕ вăл
камне:
Сăмахран сисрĕм вĕрентекене.
Йађĕ çав çыннăн „Тăнлăхуна
çут,“
Унăн хунарин йађĕ „Çырнă
хут.“
Тăнлăх вĕрентет çынсене
пурăнма,
Йывăр кунта пĕр пĕрне
пулăшма.

## ЙАНТРАК ЙАНТ-РАВĔ.

*Ĕмĕр сакки сарлака.*

### 1) Мун-кун.

Ылттăн пек курăнан çутă
хĕвел
Тӯперен, çӯлтен, пĕлĕтсем
çинђен,
Пирĕн çĕр çинђи ђĕрĕ ђун-
сем çинђе
Ылттăнан çутатаӗ пайан
хĕвел,
Кусĕ харшине салатса йарса,
Çӯп-çӯхе тутипе йăл-йăл
кулса.
Çуркунхи пĕлĕт кăн-кăвак
пĕлĕт
Ђатăр пек ăна витсе çеç
тăраӗ,
Пирĕн йенелле çуттине йараӗ
Çил пĕлĕђĕ çеç, шур хулăм
пĕлĕт,
Тӯпене пĕрре те пуçтарăн-
масӗ,
Хĕвеле пăхма хупласа ђар-
масӗ.
Мĕншĕн капла, çутă хĕвел,
пайан
Çутатса пăхма ђарăнмас-
тăн?
Шурă пĕлĕт айне пытан-
мастăн?
Хĕллехи тăвăллă кĕске кун-
тан
Хăтăлнăшăн есĕ савăнатăн-
им?
Йе тăрри йурри астараӗ-и
сана?
Çĕр çине пăхса, çынсене
курса,
Вĕсен ђĕрине куратăн пулĕ,
Çавăнпа пайан хĕпĕртетĕн-
тĕр.
Калла та малалла урам тăрăх
Шап-шурă халăх кунĕ кунĕпе
Вĕркет ĕççĕрех ĕçкĕ-çикĕре.
Уйалла пăхсан, хĕллехи

кĕртсем
Унта та кунта, сулхăн
çĕрсенҫе,
Курăнаççĕ тарăн çырмасенҫе.
Вĕсем те пайан, хĕлĕн аҫи-
сем,
Çурхи шыв пулса йухса
кайаççĕ,
Çул тăрăх сиксе, кулса пы-
раççĕ.
Ак пĕр çырманăн икĕ хĕр-
рипе
Ҫăваш пӳрҫĕсем касси
кассипе
Кайăк йăвисем пек ларса
тухнă.
Хĕвел питĕнҫе унта Шупуç
ларать.
Хăй пĕтҫен вăл çырманăн
пĕр йенне
Сарăлса выртнă пысăкăшĕ-
пе,
Йышăнса илнĕ çурҫĕсемпеле.
Хĕвел тӳртĕнĕнҫе Тип-Варпа
Шăмăш
Шупуçпе тĕлме-тĕл ларса
тухнă.
Çав пускилсене виçĕшне
пĕрле
Мăншу йатлă хунă авалхи
ҫăваш.
Шупуç пек лайăх ҫипер
пускилĕ
Пĕтĕм Мăншу йалĕнҫе те çук.
Шупуç урамĕ сарлака урам,
Сарлака урамра йешĕл курăк,
Урам хĕррипе тĕрлĕрен
йывăç
Каҫăкă каларма пуçланă тин.
Тул çутăлсанах вĕт аҫа-пăҫа
Урамĕ тăрăх выљаса çӳрет,
Ашшĕ-амăшне вăл савăнта-
рать.
Сарлака вăрăм урамра утма
Шурă хăмаҫ кĕпе пайан
килĕшет.
Хут купăссене тăсса каласа,
Урама тăрăх ташласа пыни
Сарă хĕрсенĕн тăнĕ-пуçĕсене
Йашсем йенелле çаварса
йарать.
Урам варринҫе çĕр çулхи çăка
Пĕтĕм Шупуçа илемлетсе
ларать.
Çав пысăк çăка мĕлки сул-
хăнĕнҫе
Сарă хĕрсемпе выљаса кулса
Ҫуҫу йарăнаççĕ маттур каҫ-
ҫăсем;
Ывăçи ывăçипе шурă пĕре-
мĕк
Хĕрсен аллине вĕсем параççĕ,
Пĕрле каласса кулса тăраççĕ.
Йурăсене йурласа урам тăрăх
Йалти пур маттур, сарă каҫ-
ҫăсем
Ташласа утаççĕ хут купăс-
семпе.

Ҫиркў ҫанӗ сасси вӗсен сассипе
Пӗрле хутӑшса йантраса тӑрат,
Савӑнӑҫпала хӑлхана тулат.
Пӗр-пӗринпе пӑраҫник майӗпе
Ваттисем пайан ӗҫсе ҫўреҫҫӗ.
Христос ҫӗрӗлнӗ! Мун-кун йаҫӗпе
Хӗрлӗ ҫӑмартасем пӗҫереҫҫӗ.
Сӗтелли тулли тӗслӗрен ҫимӗҫ,
Кўртсе лартсассӑн ирӗксӗр ҫийӗн,
Апат хыҫӗнҫен пыллӑ сӑра сӗнсен,
Тутине курах ўсӗрӗлсе кайӑн.
Пайанхи кун та савӑнмасассӑн,
Хӑҫан тата пирӗн савӑнӑҫ курас?
Тӑванпа тӑван ҫуп-тумасассӑн,
Пайанхи куна йепле ирттерес?
Иртнӗ кунсенҫе хирӗҫнисене
Пайан манса ҫипер пурӑнӑпӑр,
Хамӑр тӑвана курайманнине
Йӑлтах манӑпӑр та ҫуптӑвӑпӑр.
Ҫапла хӗпӗртет ҫӑн тӗн ҫынни,
Ҫапла Мун-куна вӑл хисеплет!
Аслӑ Мун-кунра вӑл савӑнни
Ҫут тӗнҫе тӑрӑх вӗҫсе сарӑлат,
Вӗҫсе сарӑлса пур ҫӗрӗ ҫуна
Пырса ҫапӑнса хускатса йарат,
Ҫӑмӑл шӑм-шакӑлӑ аҫа-пӑҫана
Ҫулҫӑ пек выљатса ташлаттарат.
Шупуҫ урамӗнҫе ҫуҫу кутӗнҫе
Алӑ ҫупса ташлат сарӑ йаш аҫа,
Маймӑл пек ҫӑмӑл унӑн аллиури,
Ҫўлӗ таканлӑ аттипеле вӑл
Кӗл пек хӑйӑрлат ҫурхи тӑпрана.
Унҫҫен те пулмаст, пӗҫӗк аҫасем:
„Ав Йантрак кунта килет,“ терӗҫ,
Хӑйсем саланса унта та кунта
Урам варринҫен килӗсене кӗҫӗҫ.
Маттур каҫҫӑсем кӑна йулҫӗҫ.
Вырӑсла йурӑ пуҫласа йаҫӗҫ,
Йантрак вӗсене ҫӗлӗкне

илҫӗ,
Кусем ӑна хирӗҫ пуҫ та таймарӗҫ.
Ҫимӗк тӗлӗнҫе ҫумӑр пӗлӗҫӗ
Тӗттӗмленет те, хайарланаҭ те,
Аслати сасси кӗмсӗртетет,
Уйри ҫынсене килелле тартаҭ.
Йантракӑн ҫамки ҫав пӗлӗт пекех
Ҫуҫҫу патӗнҫе тӗксӗмлене тӑраҭ,
Куҫӗпе Йантрак выҫӑ тукмака
Йаш аҫасенӗн асне килтерет.
Йурӑсем йурлама ҫарусӑр йашсем
Йантрак умӗнҫе ҫарӑнмаҫҫӗ те,
Ҫитменинне тата ҫуҫҫу ҫинҫе
Маттур хыҫӗнҫен маттур йарӑнаҭ.
Йантрак тукмак пек аран куҫӗпе
Йарӑнакансене пӑхма ӗлкӗрет.
Йарӑнакан маттур хытӑран хытӑ
Тапса йарӑнаҭ, ҫӑка ҫӗтренет.
Такан ҫумӗнҫе пӑртакҫӑ тӑрсан,
Йантрак кайалла ҫавӑрӑнса кайрӗ.
Вӑл утсаҫҫӑн ах пирӗн аҫасем
Йурӑ йурлама та пӑрахрӗҫӗ.
Йантрака вӗсем: „ей, ҫун сутакан!
Мӑнма кайатӑн-ха“? теме пуҫларӗҫ.
Йантрак вӗсене, пӑртакҫӑ утсан,
Ҫишкипе ҫеҫ йунаса хӑварҫӗ.

Шупуҫ урамӗ пит вӑрӑм,
Вӑрӑм урам варрипе
Ушкӑнӗпе йаш аҫасем
Анаҫҫӗ хут купӑспа.
Хура карттус, хаклӑ карттус,
Ҫалӑш лараҭ пуҫӗ ҫинҫе,
Хут купӑсӗ йаш аллинҫе
Ташлаттараҭ сассипе.
Уртса йанӑ хура сӑхман,
Тӗрӗлӗ умлӑ шурӑ кӗпи
Капӑрӗпе савӑнтараҭ,
Выҫаттараҭ аллине.
Купӑс калаҭ капӑр Уҭак,
Митраппанӑн ывӑлӗ,
Йалта ӑста хут купӑсҫӑ,
Ҫӑмӑлтарах ӑслӑскер.
Аҫасемпе кӗпӗртетсе
Пӗр пысӑк пӳрт умнелле
Пырса тӑҫӗ ҫав Уҭак
Хут купӑсне каласа.
Купӑс сасси ҫарӑнҫӗ те,
Уҭак сасси илтӗнҫӗ:
„Аҭа, Тракка, Тӑв-айӑккине

Килениҫҫен ташлама!
Пымастăн-им есĕ тата,
Ҫĕлхесĕр пек ҫĕнместĕн?
Аҫу-аннӳ йамаст-и-мĕн?
Йе вăрҫасран хăратăн-и?
Йантрак пекки мана хама
Пилĕкĕшĕ кирлĕ-ха!
Аҭа, епир утатпăр!
*Тракка:* Шикленессе шикленместĕп,
Ытла ир мар-ши вара?
*Уҭак:* Каҫ пулаҭ, вăл: ир, тет тата,—
Миҭуксем паҫăрах кайнă.
Аҭа, епир утатпăр.
Аҫасем, ҫĕнер Ивана!
*Пĕр аҫи:* Тракка пырсан пыратăп, тет.
*Уҭак Траккана:* Авă ҫынсем мĕн теҫҫĕ:
Есĕ пырсан пур те пыраҫҫĕ.
Тракка тухрĕ урама,
Уҭак ҫарăнҫĕ йантрама.
Урам тулли аҫа-пăҫа
Кĕшĕлтетсе иксе пыраҭ.
Уҭак калаҭ хут купăсне,
Ҫăварĕ унăн йурă йурлаҭ:
„Ҫӳлĕ ту ҫинҫи ҫил арманне
Тытаканĕ епир мар,
Пирĕн шăллăмăрсем“...
Тракка ҫав йурлакана
Ҫарса ҫапла каларĕ:
„Е, тупнă йурламалли,
Урăх йурă ҫук-и-мĕн?
Тăв-айакки йурри—вăл йурă мар“.
Унтан хытă сассипеле
Тракка пуҫлаҭ йурлама,
Пĕрле пыракан каҫҫăсем
Унпа тăсма пуҫлаҫҫĕ:
Пултарас ҫук, пулă тытас ҫук
Мăн шыв хĕрне мăнма кайас?
Мăншу йалĕ хĕрĕсемпе,
Илессӳ ҫук, мăнма выҫас?
Ташлассу ҫук, сикессӳ ҫук
Тăв-айккийе мăнма килес?
Уллах ҫĕрте сарă хĕрпе
Вăрттăн сăмах мăнма пуплес?
Сăмса тутри шур тутăра
Кăвак шилет касийнҫен
Ташламан ҫух, тарламан ҫух
Мăнма кăларса кăтартас?
Пултаратпăр, пулă тытатпăр,
Ниăҫта намăс курмастпăр,
Анне кинĕ тăвайатпăр
Хамăр йалти хĕрсене.
Ватă ҫынсен, йӳгенисен
Пирĕн ҫумра мĕн ĕҫ пур?
Епир халĕ сикнĕ ҫĕрте
Куштан ҫынсен мĕн ĕҫ пур?“
Уҭак пуҫне пăркаласа
Йурă йурлакан йашсене
Ҫарса калаҭ сăмахне,
Хура куҫне выҫатса:
Итлĕр-ха, паҫăр Йантрак
Пуртăпала урама
Пире касма тухастăн
Пулнă, теҫҫĕ ватăсем.

Тухнӑ пулсан вӑл тупаť-ђӗ,
Ҫурӑмӗ кӗҫтнӗ пулмалла:
Лайӑх хыҫнӑ пулӑттӑмӑр!
Унӑн айак пӗрђине
Пӗррӗн пӗррӗн савӑттӑмӑр.
Йака Тӑв-айккийе те вӑл
Хӑш ђухне пыракан-ха,
Пайан пырса пӑхаť-ши?
Тракка ӑна сӑнаса,
Пӗрре ун ҫине пӑхрӗ те,
Ђарса ҫапла каларӗ:
„Пырсан мӗн тӑвассу пур?
Епир иксӗмӗр сӑмахпа
Ђул ҫурт та лартатпӑр...“
*Уťак:* „Пултараймӑпӑр-и
мӗн?
Пырса курӑнтӑр анђах,
Пирӗн ун валли куђђенеҫ
Виҫӗм ҫулхийех пур-ха!“
*Тракка:* „Курӑпӑр вара мӗн-
лине“.
Пӑртак пур те ђарӑнђӗҫ.
Ак ӗнтӗ Тӑв-айӑкки йенђен
Ахӑлтатни, йурлани
Ҫитсе илтӗне пусларӗ,—
Йака тӑв-айӑкки инҫе мар,
Пухӑннӑ йаш йантратаť,
Авӑ суртсем хушшипе
Шура шупӑр курӑнаť.
Вахађӗ вӑхӑђӗпе,
Ташламалли йурӑсем
Харӑс алӑ ҫупнипе
Пӗрле хутӑшса кайса,
Тӑв-айӑккин йенӗнђен,
Пӗр ҫӑвартан тухна пек,
Пуҫтарӑнакан йашсенӗн
Пырса кӗрет хӑлхине.

Урӑх тӗслӗ пурӑнӑҫ мар,
Урӑх майла йӗрке мар:
Хӗвел ансан тапранаť,
Лӑпах ҫур-ҫӗрђђен пыраť.
Виле ҫинђи хуйхӑ мар,
Ҫурла-ҫава сасси мар,
Йал варринђе йантратаť,
Урӑм-сурӑм ҫуй тӑваť.
Пӑраҫник кунӗ ӗҫлекен
Усӑк пуҫлӑ старик мар,
Кӗтӳве хирӗҫ тухакан
Ватӑ карђӑк-карђӑк мар,
Маншу йалӗ йаш-кӗрӗмӗ,
Вӑрӑм сарӑ йаш-кӗрӗм,
Хӗвел ансассӑн пуҫтарӑнаť
Симӗс йака Тӑв-айӑккийе.
Кӑнтӑрлахи вӑхӑга
Ӗҫсе-ҫисе, ташласа
Ирттернийӗ ҫитмен-ха,
Тата ҫӗрӗпе выљаť
Савӑнаҫлӑ вӑйӑсене,
Пӑраҫник кунӗ йаťӗпе
Карталанса ташласа
Вӗри ђунне савӑнтараť.
Йалӑн вӑта ҫӗрӗне,
Икӗ ҫырма хушшине
Пуҫтарӑнаҫҫӗ маттурсем,
Йӑваш ђӑваш ывӑлӗсем
Хуҫкаланса ташлама,
Сарӑ хӗрсене пӑхтарма.

Сарӑ хӗрсем ҫивӗтне
Пурҫӑнпала йавтарса
Туртса ҫыхнӑ хытарса,
Хӗрлӗ пурҫӑн хырӑм-урлинҫен,
Шурӑ шупӑр ҫийӗнҫен.
Пурҫӑн тутӑр, сарӑ тутӑр
Пуҫӗ ҫинҫе йӑлкӑшать,
Тумтирӗнҫен ытларах
Сӑнӗ-сӑпаҫӗ ҫутӑрах,
Шуррӑн анҫах курӑнать.
Ҫавракарах куҫӗ харши
Хӑпарать те, анать те,
Пӗр вырӑнта тӑраймасть,
Каҫҫӑ ҫинҫен куҫӗ каймасть.
Ҫапла пӑхса тӑнӑшӑн
Каҫҫӑн ҫунӗ хӗпӗртет,
Вӗри ҫӗри хускалать,
Сикет кӗрт кӗрт тутарса,
Ҫамрӑк алӑ-урине
Вӑйӑ выҫатса ташлатать.
Ташламаллах ташлас тесен,
Алӑ ҫупса ташлаҫҫӗ,
Курнӑҫланма тапратсан
Мӑн кӑмӑллӑн курӑнаҫҫӗ,
Пӑхса тӑракан хӗрсене
Пӗр сӑмах та ҫӗнмеҫҫӗ,
Ҫӳҫӗ хӗрри кӑтрине
Силлетсе ҫеҫ irтеҫҫӗ.
Акӑ Тракка ташӑ ташлать,
Кӗлеткипе хумханать,
Пӗрре ҫупма тытӑнать,
Тепӗре ури тупанне
Пӗҫҫи айӗн ҫаптарса,
Шатлаттарса илет те,
Хут купӑсӑн сассипе,
Хӑй ташланӑ майӗпе,
Икӗ аллин пӳрнисемпе
Кушак-кайӑк вӑййине
Выҫантарма тапратать;
Унтан Кури ташшине
Хӑйӗн маттур пӗҫҫисене
Пӗрре пӗрсе, пӗрре сарса
Вӑл ташлать кӑна ҫӳхенсе.
Тракка ташлать йывӑррӑн,
Ташӑ ҫынни пекех мар.
Акӑ сирсе халӑха
Вӗҫсе тухать сирпӗнсе
Тукмак Петӗр ҫырӑ аҫа.
Вӗҫет, сикет: алли-ури
Ҫӗр мамӑкӗ пек ҫӑмӑл.
Карталанса йӗри-тавра
Тӑнӑ ташӑ вырӑнӗ
Вунӑ ҫалӑш тавраш.
Ҫав ташламалли вырӑна
Куҫа хупса илиҫҫен
Вӗттӗн вӗттӗн утӑпа
Виҫ-тӑват хут ҫавӑрнать.
Пӑхса тӑракан йашсене
Пӗтӗм халран вӑл йарать,
Ҫунӗсене хӑпартса,
Ташламашкӑн хӗгӗртет.
Килӗшӳлӗ пилӗкне
Сылтӑм аллипеле тытни
Сарӑ вӑрӑм хӗрсенӗн
Пуҫӗсене ҫаварать,
Шерепелӗ пиҫиххийӗ
Ҫӗре ҫитех усӑнать;

Йалттин йалттин сикнĕ ҫух
Шурă карттус тÿпийĕ
Халăх куҫĕ умĕнҫе
Хут татăкĕ пек вĕҫкелет.
Ҫунаттине хурҫăка
Пĕр хуплаť те, пĕр сараť,
Ҫавăн пекех пирĕн Петĕр
Хăйĕн анлă хулпуҫҫине
Пĕр пĕрет те, пĕр сараť,
Вăйин тĕрекне палăртаť.
Пĕтĕм Мăншу йалĕнҫе
Петĕр пек маттур аҫа ҫук,
Хай те ҫавна вăл сисет
Пĕтĕм пысăк кĕлеткипе,
Ҫавăнпа вăл хăрамасť
Нимĕнле усал ҫынтан та,
Хăй йал пуҫĕ пек пурăнаť
Каҫҫăсенĕн хушшинҫе.
Ăна курсан пур йашсем
Ҫелĕк хывса тайăлаҫҫĕ,
Пĕр вырăна пуҫтарăнсан
Ун ҫăварĕпе пуплеҫҫĕ.
Тав-айăккире ташлама
Халĕ те Петĕр ҫарăнман,
Халĕ те пулин хĕрсене
Пахса тăма йăлăхтарман.
Ташă ташлана майĕпе
Хернĕҫемĕн вăл хĕрет,
Пĕтĕм пĕвĕпе ҫĕтренет;
Патăр-патăр тар йухаť,
Шура тутăр кăларса
Шалса илет ăна вăл.
Вăл ташлана вăхăтра
Йаш аҫасем сисмен те

Вĕсем патне йурласа
Икĕ ҫын пырса тăнине.
Иккĕшĕ те вăтам ҫынсем.
Пĕр ҫынĕ кăшт ватăрах,
Анҫах унăн хулпуҫҫисем
Пит тĕреклĕ курăнаҫҫĕ,
Ҫамки ҫинҫи пĕрĕнҫĕксем
Аслă ҫынна палăртаҫҫĕ.
Ватăраххи йулташне
Йашсем патне йарасшăн мар,
Анҫах лешĕ туртăнаť,
Тав-айăккинелле сулăнаť,
Хăйĕн йăмăкне курас, тет.
Сăмахĕ ҫине тăҫĕ тăҫех
Ҫамрăкрах вăтам ҫынĕ.
Ҫапла ĕнтĕ пырса тăҫĕҫ
Тав-айăккийе ҫав ҫынсем.
„Лайăх-и, ҫамрăк аҫасем?“
Терĕ мăн сасăлăскер.
Аҫасем ҫавăрнса ăна:
„Ху мĕнле, Михали пиҫей,
Пурăнатăн-ха?“ терĕҫĕ:
„Праҫник майĕпе ак епир
Мĕн тунине куратăн:
Ĕҫетпĕр те ташлатпăр“
—„Ĕҫес те пулаť вăхăтпа,
Ташлани те усал мар!
Йепле тата Мун-куна
Сирĕн пек йашсем тумалла?“,
Ҫапла Михали калаҫаť,
Анҫах унăн йулташĕ
Ҫĕлхесĕр пек нимĕн ҫĕнмест.
Вăл тискер куҫĕсемпе
Каҫҫăсем ҫине пăхкалаť

Каҫҫăсем хыҫҫăн йăмăкне
Тинкерсе пăхма тытăнать.
Ҫыра вăрăм йăмăкĕ,
Мăншу хитре хĕрĕсем
Пĕрле тăрсан пухăнса,
Пуринҫен те хитрипе
Тўрех куҫа паларать,
Пĕтĕм йаша пăхтарать.
Пит-ҫăмартисем кăвар пек
Ҫунса анҫах тăраҫҫĕ,
Акăш кĕлетки пек кĕлетки
Шурă шупăр айĕнҫе
Ҫăмарта пек ҫавракa.
Утти унăн хĕр утти,
Ытараймăн курсассăн,
Хыҫҫăн утăн вăл утсан,
Ҫавăн пек хитре хĕре те
Тиркесессĕн ҫын кулĕ.
Ҫитменнине ҫĕлхи-ҫăварĕ
Тата ытла ҫитерет;
Ҫĕри те унăн тем пекех:
Ырă кăмăллă куҫĕпе
Пĕрре те ҫав хирĕҫмест,—
Ахаҫ мар ҫав каланă:
„Сăнĕ мĕнле, ҫунĕ ҫапла.“
Ҫав тĕрлĕ хитре хĕре
Астуни те килĕшет.
Унăн пиҫҫĕшĕ Йантрак,
Хăй усал ҫын пулсан та,
Ăна тăнлăха вĕрентет,
Хăш ҫух хыҫҫăн пăхкалать.
Йантрак йăмăкĕ Кĕтерин
Петĕрпе ăшă сăмах
Калаҫмашкăн йуратать.

Анҫах пиҫҫĕшĕ, Йантрак,
Пирĕн Петĕре йуратмасть:
Калаҫма мар, сăнне те
Курасшăн мар унăнне.
Петĕр ҫавна пĕлет те,
Ҫапах йака Тăв-айăккире,
Йантрак унта пулсан та,
Пĕр хăрамасăр Кĕтеринпе
Ăшă сăмах калаҫать.
Ытти хĕрсем хушшипе
Йантрак ҫавна пăхса тăрса
Ҫиленнипе кăвакарать,
Маттур Тукмак Петĕрпе
Вăрҫма анҫах май шырать.
Петĕр ҫĕртрĕ перускă,
Йалкăштарса ҫеҫ тăрать.
Йантрак унăн патнелле
Хăвăрт утса пыҫĕ те,
Пĕрех ҫапрĕ ҫышкипе
Хĕрлĕ пиҫĕ ҫăмартинҫен.
„Мĕншĕн капла, мĕншĕн есĕ,
Супкаланҫăк, йал йытти,
Мĕскер сана ҫитмерĕ?!“
Терĕ те, Тукмак Петĕрĕ
Тыттарҫĕ йаҫĕ Йантрака
Суллахай хăлхи ҫиккинҫен.
Ҫав вăхăтрах аҫасем
Ҫупса ҫитрĕҫ пулăшма.
Нумай та вăхăт иртмерĕ,
Йантрак ҫырма тĕпĕнҫе
Йăнăшнийĕ илтĕнҫĕ.
Тамăкран пек тухаҫҫĕ
Хĕрлĕ ҫырма айĕнҫен
Тытăнҫаксăр сăмахсем:

„Есĕ перускăвупа
Йала та йарăн хыптарса,
Халăх çинҫе сапала
Мĕн тунине курăн-ха!“
Йантрак йала йантратса
Темĕн ҫухлĕ выртсан та,
Йашсем ăна пăхас çук,
Ҫарăнас çук ташлама.
Паçăрах Йантрак йулташĕ
Кайрĕ унтан килнелле.
Çур-çĕр автанĕ аватать,
Пирĕн Йака Тăв-айăкки
Хăнисенҫен уйăрлать.
Катҫăсемпе сарă хĕрсем
Алă парса уйăрлаççĕ:
Ырă каçпа ырă ыйхă
Пĕрне пĕри сунаççĕ.

## 2) Йуман айĕнҫе.

Сарлака, симĕс, йешĕл курăклă
Улăхсем тăрăх Мăншыв çутăлса,
Пăхăр çĕлен пек йаванса йухать,
Кунĕн-çĕрĕн шывне вăл ăсатать,
Çапах та шывĕ пĕтни курăнмасть,
Çуталать Мăншыв, ҫуна хăпартать:
Ҫăваш аҫисем кунĕпе шывра,
Хурĕсем вĕсен çуйĕпеçавăнта
Йарăнса çÿреççĕ акăшсем пек.
Мăншыв хумĕсем кулса куçаççĕ,
Симĕс курăкпа пăшăлтатаççĕ.
Хăй сăнне пăхса шурă пĕлĕт иртет,
Ҫĕнтĕрлĕ кĕпер урлă хĕр каçать,
Мĕлке ÿкерсе кайăк йаванать,
Пурне те Мăншыв кăмăл курать,
Пурне те йарать хăй хăни туса.
Мăншыва тăрăх саласем, йалсем,
Кайăк йăвисем пек, ларса тухнă;
Унта та кунта шыв арманĕсем,
Тата хăш тĕлте—кăвакал шурĕсем.
Йухса кĕреççĕ Мăншыв улăхне
Икĕ йенҫен те çырма-çатрасем,
Çырмасем тăрăх курăнаççĕ йалсем,
Йалĕсем çинҫе кайăк йаванать.
Мăншыв улăхне пĕр çырма кĕрсе,
Пĕрле хутшăнса кайнă выранта
Мăншу йалĕ ларать лутра

пӳртсемпе.
Мӑншу уйӗнҫе тӑлӑх йывӑҫсем
Унта та кунта йӗрсе лараҫҫӗ,
Авалхи ҫинҫен йурӑ йурлаҫҫӗ:
„Авал епир нимӗн хуйхӑ курман-ҫӗ
Сӗм вӑрман ӑшӗнҫе ларнӑ вӑхӑтра;
Темле вӑйлӑ ҫил килсе кӗрсен те,
Пирӗн тӑрӑсем авӑнмасӗ-ҫӗҫӗ;
Нихӑҫан тавлашу, йатлаҫу пулман,
Пӗр пӗрне нихӑҫан сийен, хур туман.
Ех, иртрӗ вӑхӑт, килмӗ кайалла,
Пуҫланса кайрӗ урӑх самана!
Пӗрле пурӑнма йывӑҫсем сайра,
Пӗр канашлӑ пулма ӑславсем ҫук,
Пӗтетпӗр ҫав пӗҫӗккӗнех ҫапла!“
Ватӑ йумансем, есир ҫӑнах та
Хӑвӑр ӗмӗрте темӗн те курнӑ!
Ҫӗрлехи вӑрра та курнӑ есир,
Таркӑн та сирӗн айра пурӑннӑ,
Ҫӳк ҫӳклени те сиртен пытанман,
Киремет те авал сирӗн ҫумӑрта
Пурӑннӑ хӑратса аслӑаттесене.
Пурне те есир курнӑ ӗмӗрте,
Темӗн те пӗлетӗр ӗлӗкхи ҫинҫен!
Анҫах сирӗн кун инкеклӗ пулнӑ:
Тӑшмансем сире касса сайратнӑ,
Аҫӑрсене ҫитӗнме те паман.
Ҫавӑнпа хуйхӑлӑ есир, паттӑрсем,
Пуҫӑрсене пӗкнӗ, курпунӑрсем тухнӑ.
Пӑртак пурӑнсан сирӗн йӑхӑрсем
Куҫран ҫухалӗҫ, паттӑр йумансем!
Мӑншу йалӗнҫи ҫырма хӗрринҫе
Сарӑлса ларатӗ пӗр ватӑ йуман.
Ун ҫинҫе пӗрмай, лайӑх кун пулсан,
Кӑранклатаҫҫӗ хура кураксем;
Ҫумӑр пулсан, йӑлтӑр-йалтӑр ҫиҫӗм,
Кӗмсӗртеттерсе аслати аватӗ.

Хăш ӡухне çавăнта, лайăх
кунсенӡе,
Мăншу халăхĕ, хура ĕç
çынни,
Хăйĕн ĕçĕсене пĕрле шайлама
Пĕтĕм Мăншу йалĕ вĕçĕ-хĕ-
ринӡи
Лутра пӳртсенӡен пĕр çĕре,
кайăк
Пуçтаранна пек, пухăнса
пырат.
Хăшĕ пыраççĕ пуçĕсене
пĕксе,
Хăшĕ йулташĕпе калаçса
пырат,
Калаçаççĕ, канашлаççĕ пĕр-
ле
Мĕнле ĕçсене майласси çин-
ӡен,
Йепле ĕçмелли тупасси çин-
ӡен;
Хăшĕ утаççĕ пĕр шухăш
çук пек.
Ватă йуман, есĕ манран ытла-
рах
Мĕнле шухăшлă çынсем сан
айна
Пухăннисене пĕлетĕн пулĕ.
Хăвăн ĕмĕрӳнте темĕн те
курнă,
Темĕн те илтнĕ пулĕ çав есĕ
Мăншу йălĕнӡи хура халăх-
ран.
Паттăр нумайӡĕ-и, мĕскĕн
нумайӡĕ-и?
Миçен йал ĕçне тăваӡӡĕç
ĕлĕк,
Есĕ хунав йуман пулнă вă-
хăтра?
Ĕçсенӡе вăрçу-йатлаçу шавах
Халӡхи пек ун ӡухне нумай-
ӡĕ-и?
Йе пур те пĕр тан шухăшлă
пулса
Пĕр çапăçусăр иртет-ӡĕ-и
пуху?
Епир ĕлĕкхи çинӡен пĕл-
местпĕр:
Авалхи ӡăваш çынĕсене кур-
ман,
Илтессе епир илткеленĕ те,
Анӡах илтнипех çынна пĕл-
ме çук,
Çинӡен ватă çынпа пирĕн ĕç
те çук,
Халӡхи çынсемпе хутăшат-
пăр-ха. —
Ак пайан Мăншу хура ха-
лăхĕ
Пуçтаранат çав ватă йуман
кутне.
Хăшĕ утаççĕ вар урлă каçса,
Пĕрле калаçса хытă шав-
лаççĕ.
Хăшĕ пыраççĕ çырма хĕр-
нелле,
Аллисене тытнă çурăм
хыçнелле,

Сӑмахсене кусынсем пемеҫҫӗ,
Сывлӑша кӑлӑхах йантратмаҫҫӗ.
Ак пуҫтарӑнҭӗҫ Мӑншу сынӗсем,
Алӑ парса тухрӗҫ пӗр пӗринпе,
Унтан пуҫларӗҫ хӑйсем шавлама,
Пурӑнӑҫ ҫинҭен каласа пама.
Тумалли ӗҫе тапратакан ҫук:
Стараста килсе ӗҫе пуҫласса
Кӗтеҫҫӗ кусем пулӗ темелле,
Анҭах: пулӗ ҫав темелле кӑна.
Нихӑҫан ҫав ҫынсен канашлас умӗн
Ушкӑн ушкӑнӑн ларса тухмасӑр,
Пӗр-пӗринпеле сӑмах тумасӑр,
Ҫынсем пуҫласса кӗтсе тӑмасӑр,
Ӗҫӗ пуҫланса кайниӗ пулман.
Ушкӑнпа ушкӑн пӗр шухӑшлӑ мар:
Акӑ пӗр ушкӑнта пӗри каласаҭ,
Ыттисем пур те шӑпах итлеҫҫӗ,
Сӑмах хушса пӗри те пӳлмеҫҫӗ.
Тепӗр ушкӑнта пур те каласшӑн
Хӑйсен ӑшӗнҭи хатӗр сӑмахне,
Пӗр пӗрне ҭӗнме ирӗк памасӑр,
Такӑшне итлес вара ҫавӑнта,
Пур те шавлаҫҫӗ сурӑх кӗтӗвӗ пек.
Виҫҫӗмӗш ҫӗрте пӗрмай кулаҫҫӗ,
Кирли ҫинҭен пӗр сӑмах та ҫук хӑйсен.
Акӑ килсе ҫитрӗҫ кантуртисем,
Шӑпах пулҭӗҫ Мӑншу ҫынӗсем.
Клави, тийекӗ, спуршҭӑкӗ пӗрле
Кӑшт каласрӗҫ те, куланай пуҫтарҭӗҫ.
Ӑна пуҫтарсан, Мӑншуран кайрӗҫ
Пӗр ҫумри йала хӑйсен ӗҫӗпе.
Мӑншу ҫынӗсем тӑрса йулҭӗҫӗ,
Тӑрса йулҭӗҫ те, кӗрлеҫҫӗ кӑна
Выҭӑхсем валли апат тупасшӑн.
Нумайӗшӗ ҫапла кӑшкӑраҫҫӗ:
„Халӑх ҫӗрӗ ҫинҭе ҫитерес пулаҭ,
Турӑ панипе улӑхра пур-ха,
Ҫӗртмере апатсӑр аптӑрас

çук!“
Хăшĕ вĕсене хирĕç кăшкăрса:
Вăрманта çитерме илес-ђĕ, теççĕ:
Пĕр ик-виç ерне çитерсен йуратˇ,
Кайран ахаљ те иртĕ-ђĕ, теççĕ.
Йантратˇ, кĕрлет çав Мăншу халăхĕ,
Хĕр-арăмсăрах вăл пасар тăватˇ.
Акă хура çўçлĕ пĕр вăтам çын
Пĕр çынпала пăшăлтатса канаш
Турĕ те, унтан çапла çынсене
Алă тăратса ђарса каларĕ:
„Ей хура халăх, кăшт ђарăнăр-ха,
Манăн пĕр-ик сăмаха итлĕр-ха!
Пĕлтĕр те выçлăх, кăçал та питех
Тыpă пуласса ĕмĕтленме çук,
Хăшĕ-хăшин укçа, вăрман илме мар,
Хĕлле çăнăх илме те çитес çук.
Анђах майĕпе пурин те кĕре
Ђĕрĕкўртесси килет выљăха“
Халăх шăп тăратˇ, кăшт та тапранмастˇ,
Итлет ăна, пĕр сăмах та ђĕнмест.
Йантрак малалла тапратса калатˇ:
„Пур те выљăха лайăх усрасшăн,
Анђах çиме ăçтан тупассине
Нихăш те пирĕн пĕлекенĕ çук.
Епĕ пĕр пит лайăх хыпар илтрĕм,
Пĕр ырă çын ăна вăрттăн каларĕ:
Кăçал выçă çул кĕтў çўреме
Прошени çырса улпута парсан,
Ахалех йартаратˇ тет вăл çитерме
Вăрманти пĕр çывăх хăвартала.“
Çавăнтах халăх кайрĕ кĕрлесе,
Шавлатˇ, çапла сăмахсем вăл калатˇ:
Мĕн тăратпăр-ха тата ухмахсем?
Халех прошени çыртарас пулатˇ,
Йантрак вăл хăй те пит ăста çыратˇ.
Çўрекен çын çав таçтан та пĕлĕ
Ăста халăха уса пурринеʼ

Йантрак, прошени те хӑвах
çырсам!
Прошени çырсан, улпут пат-
не те
Ӑнах йаратпӑр прошени
леçме.“ —
„Йантракран пуçне кама
йамалла?
Йантрак пултарман ĕçĕ те
пулмĕ,
Тесе кӑшкӑрат пуринҫен
ытла
Малтан Йантракпа канаш
тунӑ çын.
Халӑх хушшинҫе кĕрлеççĕ
кӑна çав!
Пур те асӑнаççĕ ӑслӑ Йан-
трака.
„Улпут патне те ӑнах йарат-
пӑр“,
Тесе ĕрлеççĕ Мӑншу çынĕ-
сем.
Йантрак прошени çырса
пĕтерҫĕ,
Пĕтерҫĕ те вӑл çапла ка-
ларĕ:
„Ватӑсем, кама-ха улпут
патне
Йама суйласшӑн хӑвӑр хуш-
шӑртан?“
Çапла ӑслӑ çын каларĕ анҫах,
Пур те пĕр сасӑпа: „сана
хунӑ!
Сана суйламасан кама суй-
лас?
Сансӑр пуçне кам пултарат
унта?
Есĕ пĕлтертĕн, есех кайса
кил!“
Тесе ĕрлеççĕ Мӑншу çынĕ-
сем.
Йантрак: „халӑх! ман вӑхӑт
çук халĕ,
Йерĕшместĕп“, тесе ҫакма
пуçларĕ.
„Вӑл ĕçе пĕҫҫен тума та
йывӑр,
Йулташлӑх кирлĕ ӑслӑ
тепĕр çын,
Вӑхӑта та ахалҍ кам ирттe-
рет,“ тет.
„Сана çӳреме халӑх укçине
Старастаран та илсе парӑ-
пӑр,“
Теççĕ мӑншусем хӑйсен
Йантракне.
Кайса çӳреме виçĕ тенкĕ
шӑпах
Пама пулҫĕç Йантракпа йул-
ташне.
Йулташĕ унӑн паçӑр калаçса
Йантракпа канаш тунӑ çын
пулҫĕ.
Çав кайранхинĕн йаҫĕ Сан-
тӑркка.
Вӑл хӑйулӑскер, намӑса
пĕлменскер,
Ерехшĕн пуçне те сутма

хатӗрскер.
Ерех ӗҫсех ҫав унӑн тутийӗ
Кӗленҙе тути майлӑ тӑсӑлнӑ.
Ӗҫме пӗр пус та пулман
вӑхӑтра
Хӑй ҫӗрне тара парса ӗҫет
вӑл,
Апла тумасан, кӗрӗк сакла-
та
Леҫсе пӑрахаť ҫав Йантрак
патне.
Халӗ вӑл йал хуралҫинҙе
тӑраť.
„Мӗншӗн ҫавӑн пек ӗҫекен
ҫынна
Суйлана халӑх?“ тетӗр
пулӗ есир?
Епӗ хӑвӑртан ыйтса пӑхам-
ха:
„Кам халӑх ҫинҙе ӗҫсене
майлаť
Пирӗн ҙӑваш тӗттӗм йалӗ-
сенҙе?“

Прошени те ҫырнӑ, хатӗр
ӗнтӗ,
Ҫӳремелли ҫынсене те суй-
ланӑ,
Ҫапах мӑнтусем йуман
айӗнҙе.
Мӗскерле ӗҫсем йулнӑ-ши
ҫавсен?
Мӗскер тумалли пур-ши-ха
тата?

Ваттисем те пур, ҫамрӑк-
сем те пур,
Йашсем те ҫавӑнтах лара-
ҫҫӗ.
Вӗсен варринҙе Тукмак Пе-
тӗрӗ,
Вӑл хӑй майӗпе калаҫса ла-
раť,
Ыттисем пур те итлеҫҫӗ
ӑна.
Хыттӑн та мар, хуллен те
мар Петӗр
Йулташӗсене ҫапла сӑмах-
сем
Хулӑм сассипе каласа па-
раť:
„Йантрака тахӑҫанах пӗле-
тӗп,—
Вӑл мӗн те пулин халӑха
лартса,
Ерех ӗҫмелли сӑлттав ту-
пасшӑн,
Йе улталаса ҫынсен укҫине
Хӑйӗн кӑсйине шӑнкӑрт
йарасшӑн.
Ав, вӑрман ҫинҙен калаҫас
умӗн
Кампа калаҫрӗ—куртӑр пу-
лӗ?
Ак мӗн те пулсан туса ху-
раť-ха!
Хам тунӑ ӗҫе астунӑ пекех
Сисетӗп епӗ ҙухӑн ӑсӑмпа
Выҙӑх ҫитерме илес ҫук-

кине!“
Ҫавӑнтах маттур Тракка
каларӗ:
„Ҭӑнах ҫапла ҫав—Сантӑрк-
капа вӑл
Мӗмлесе илҭӗ хӑй калас
умӗн.
Сантӑркка хӑй мӗнле, ӗҫӗ
те ҫаплах:
Йепле пӗлтӗр макаҫи тыр-
рине
Вӑрларӗ те, курман пулҭӗ
хӑй.“
Унтан пӑртакҫӑ пур те ҭа-
рӑнҭӗҫ.
Анҭах нумай та вӑхӑт ирт-
мерӗ,
Сасартӑк халӑх йантра пуҫ-
ларӗ:
„Сыпас-ҭӗ-ҫке пӑртак йӳҫҫи-
не
Ҫакӑн пек ӗҫ хыҫӗнҭен!“
теҫҫӗ.
Ак, пӑхӑр ӗнтӗ, йепле кус-
калаť
Пирӗн Сантӑркка ӗҫесшӗн
ҫунса!
Ак пӗрин патне пыраť те,
ӑна:
„Ҫавӑн укӑлҭа карти наҭар,“
тет;
Тепӗрне тӗртсе, хӑлхинҭен
калаť:
„Ӗнер саккасран ҫавӑ пушӑт-
па
Ҫӗрле килнине куртӑм епӗ,“
тет.
Анҭах ку ӗҫре те мӑншу-
сене
Ӑслӑ Йантраках ҫул тупса
параť.
Акӑ вӑл шӳтле пуҫласа
йараť:
„Халӗ ӗнтӗ, халӑх, ӗҫ хы-
ҫӗнҭен
Ӗҫме кирлӗ-ҭӗ, анҭах ӗҫмеш-
кӗн
Камӑн укҫа ытлашши пур
кунта?
Ҫитермеллинтен аптӑрас ҫук
ӗнтӗ:
Вӑрман парсассӑн, ҫиме лак
пулаť,
Халӑх ҫӗрне сутсан та сийен
мар.
Хамах илеп пӗр ик-виҫ
ҫуллӑха,
Ӗҫмелли халех тупса пара-
тӑп.“
Ҫапла каласанах, хӑшӗ ха-
шӗ:
„Аťӑр сутатпӑр!“ теме пуҫ-
ларӗҫ:
„Вӑл ҫӗрсем кӑлӑхах хытса
выртаҫҫӗ,
Халиҭҭен питех уссине кур
ман,
Выҭӑх ҫитерме вӑрманта

та пур;
Ил, Йантрак, ил! мĕн ҫухлĕ
паратăн?"
Тесе ĕрлеҫҫĕ ерех пиҫĕ-
кисем.
„Хам пĕҫҫен илме вăй ҫи-
терес ҫук,
Акă Михалипе илĕп епĕ.
Михали кил-ха ҫасрах кун-
тарах,
Халăх ҫĕрне сутас тетпĕр
епир,
Аҭа, иксĕмĕр пĕрле илет-
пĕр!"
Терĕ Йантрак Михалийе
курса.
Михали тин-ха хăй ҫитсе
тăҫĕ
Йуман кутĕнҫи халăх патне,
Ҫапах-сисрĕ те мĕскерле
ĕҫне.
Йантракпа унăн ҫыпăҫас
килмест,
Ҫапах та вăл ҫак тупăша
кура
Ҫăтса тăраймарĕ; ҫавăнтах
вара
Ҫĕре илмешкĕн сăмах та
паҫĕ.
Йантракпа пĕрле усă кур-
машкăн
Ҫыру турĕҫ те, алă тытрĕҫ.
Ерех пĕр витре йăтса та
килҫĕҫ.

Йантрак пурне те ĕҫтерсе
ҫӳрет:
Ҫамрăка сĕнет—ҫамрăк кă-
мăл тăваҭ,
Ваттине сĕнет—ватти тир-
кемест,
Йашсене параҭ—йашсем
тытмаҫҫĕ,
Ерех тытнă таҫăка алли ҫине
Сивĕ куҫĕсемпе анҫах пă-
хаҫҫĕ.
„Ĕҫместĕр пулсан, епир си-
рĕнпĕн
Питех кулҫанмастпăр," тесе
иртет
Ҫетвĕрт ерехпе Йантрак
йашсенҫен.
Кăштах Петĕр сиксе тăраҭ-
ҫĕ,
Анҫах Тракка ăна тытса
ҫарҫĕ.
Мăншу ҫыннисем йуман
айĕнҫе
Шыв ĕҫнĕ пекех ерех ĕҫеҫ-
ҫĕ,
Ланкăрт та ланкăрт анҫах
ҫăтаҫҫĕ,
Мăй тымарĕсем ĕнтĕ кăн-
кăвак!
Пăрăнăр ҫынсем! Мăншу
хĕпĕртет
Хăйĕн ҫĕр-шывне сутнă
укҫипе!
Анҫах савăшу унта пулмарĕ.

Вӑрҫу-йатлаҫу пуҫланса
кайрӗ.
„Ҫетвӗрт ҫухалҫӗ! Хӑш шуйттан ӑна
Пытарса хуҫӗ хӑрман аллипе?
Аҭӑр ухтарар!“ тесе кӗрлеҫҫӗ.
Унҫҫен те пулмасҭ—Йантракпа пӗри
Тытӑҫнӑ та, тӑпӑлтараҫҫӗ
ҫеҫ
Хӑйсен пуҫӗнҫи тӗксӗм ҫӳҫӗсене.
Йантрак лешне вӑй тӑва
пуҫласан,
Ҫупса пыҫӗҫӗ вӗсене ҫарма.
Анҫах Йантракӗ ҫараканне
те
Тыттӑрса йаҫӗ вӑйлӑ аллипе.
Вӑрҫаҫҫӗ, турткалашаҫҫӗ
паттӑрсем;
Акӑ, пӑхӑр ӗнтӗ Йантрак
ҫине:
Кӗпи ҫурӑлса, хуралса пӗтнӗ,
Пиҫӗ-куҫӗ ҫӗп-ҫӗрӗ йун
анҫах,
Пӑхма та ирсӗр ҫийӗ-пуҫӗ
ҫине.
Ҫапах та Йантрак аптӑрас
ҫук-ха—
Ҫупса та кайрӗ вӑл хӑйӗн
килне.

Мӗн те пулсан шухӑшлаҭ
пулӗ,
Парӑнаҭ-и вӑл ухмах ҫынсене!
Ӑна: „пӗве пӗвеленӗ ҫӗре
Пӗрре те пымастӑн!“ тесе
ҫулӑхрӗҫ.
Ҫамрӑксем кулса анҫах лараҫҫӗ,
Хутран-ситрен Петӗр кӑна
калаҭ:
„Йантракран пуҫне кам пытармалла?
Иепле шухӑшлатӑр ӗнтӗ
хӑвӑр?
Йантрак хушнӑ тӑрӑх паллах Сантӑркка
Кайран ӗҫмешкӗн ӑна пытарнӑ.
Йантрак хӑй килне ҫупса
кайнӑскер
Ҫупса та ҫитрӗ авӑ кайалла!
Ҫурса пӗтернӗ кӗпи вырӑнне
Пӗр хураскерне тӑхӑнса та
йанӑ:
Вӑрҫма-ҫапӑҫма хатӗрленне
акӑр,“
Тет пирӗн Петӗр йулташӗсене.
„Ӑҫта шӑтӑка тарҫӗ Микита?
Акӑ вӗсене мӗн пур килйышӗпе

Хăйсен килĕнҫех хĕнесе
тухам!“
Тесе кăшкăрат пирĕн паттăр ҫын.
Ҫавăнтах тата йаш ҫынсем
патне
Пыҫĕ тăҫĕ те ҫапла каларĕ:
„Пĕвери шыва ĕҫрĕр-им
есир?
Паҫăр ерехе пĕр те ĕҫмерĕр.
Ҫетвĕрте есир мар-ши пытарнă,
Кайран уллахăн ĕҫсе савăнма?“
Ҫапла ăслă ҫын каларĕ анҫах,
Сиксе те тăҫĕ Петĕр, йаш
паттăр.
Сиксе тăҫĕ те, тӳрех Йантрака
Тыттарса йаҫĕ хăлхи ҫиккиҫен.
Йантрак йăнăшма ĕлкĕрнĕ
ҫĕре
Тепĕр аҫа ҫулĕ унăн ҫине
Петĕр аллинҫен персе те
анҫĕ.
Пулăшаҫҫĕ Петĕре йулташĕсем.
Петĕрĕн ҫĕри—кăвар пек
вĕри,
Пĕҫĕккĕ ҫухне ҫилленнĕ
ҫĕри
Тăшманне ҫапсан лăплансах
кайат,
Ҫиллипе пиҫĕ ҫĕтренсе тăрат.
Акă ĕнтĕ парат ҫышки канат,
Йантрăк ҫурăмĕ кăвакарса
кайат.
Йашсем Йантрака хĕненĕ
ҫухне
Темĕн те пĕр сăмахсем калаҫҫĕ:
„Нумайҫҫен есĕ халăха
ҫапла
Улталаса пурăнас тетĕн-и?
Вăрман тупăн-и-ха, кĕлмĕҫ
ҫӳпҫи!
Халăх ҫĕрĕсене илме пĕлтĕн те,
Анҫах уссине курăн-и-ха ху?
Ерехне таҫта хăй пытарҫĕ
те,
Пирĕн ҫине калат тата йытă,
Хăвăн ерехӳпе хăвах тăран!
Ҫыхăн ĕнтĕ, ҫăхан кусĕ!“
теҫҫĕ.
Ҫапла Йантрак ҫине ҫиленнипе,
Темиҫе тĕрлĕ ăна йат паҫĕҫ:
„Шуйттан, ҫăхан, выҫă йытă!
теҫҫĕ.
Тĕнҫери мĕн пур усал йат
пĕри те
Йулмарĕ пулĕ ҫавă вăрҫăра.
Хĕнеҫҫĕ йашсем Йантрак

пиҫ̆ене,
Ваттисем пӗри те пырса пăхмаҫҫӗ!
Ăҫтан пултарас вӗсен йашсемпе?
Сантăркка пыҫ̆ӗ те, анҫ̆ах хăй те
Лайăхах тупса кайрӗ пулмалла!
Хӗнесен хӗнесен, йашсем ӗнтӗ,
Иантрака пăрахса, унтан кайрӗҫ.
Йантрак пăртакҫă йусаннă курнаŤ,
Хăйӗн килнелле уттара паҫ̆ӗ.
Халăх та килне саланса пӗтет,
Ватă йуман анҫ̆ах тăрса йулаŤ,
Мăншу ҫынӗсенҫ̆ен кулса лараŤ.

Йантракăн пӯрҫ̆ӗ ҫӗнӗ аслă пӯрт,
Ҫав аслă пурҫ̆ӗ икӗ пӯлӗмлӗ.
Пӗр пӯлӗмӗнҫ̆е, ҫ̆и кӗрекере,
ЛараŤ ҫутăлса сăрланă сӗтел.
Сӗтел тавра шав паллă хăнасем,
Мăншу йалӗнҫ̆и паттăр куштансем.
Карăнтăксем ҫине шурă ҫ̆ăршав карнă,
Турăш умне ҫутнă йывăҫ ҫăвӗ,
Сӗтелӗ ҫинҫ̆е ҫ̆етвӗрт кӗленҫ̆и,
Ҫ̆етвӗрт ҫумӗнҫ̆е пӗр витре сăра.
„Ӗҫӗр-ха, ҫийӗр-ха, ырă хăнасем!
Арăм, тултарса пар есӗ пире!“
Кӗрекере ҫапла Йантрак мӗрлет.
Арăмӗ унăн ҫ̆ей куркисемпе
Витрери йӯҫӗ Мун-кун сăрине
Ҫулă тутипе йелпӗрсе анҫ̆ах
Ырă ҫынсене тултарса параŤ.
Йараҫҫӗ кăна ҫ̆ӗннӗ хăнисем!
Пӗр хупăнмаҫҫӗ хăйсен тутисем,
Куҫӗсем хӗрлӗ, ҫуланса кайнă.
Йантрак хăй ҫапла сăмахсем калаŤ:
„Петӗр вӗсенӗн пуҫлăхӗ унта;
Ҫав тăлăх йытта ӯстертӗмӗр те,
Халӗ хамăрах ҫыртма пуҫларӗ.
Ҫук, ҫыртаймӗ-ха, унтан пулас-и?
Кăтартăп-ха епӗ пӗрре ăна

Питёрпе Мускав хушшинҫи
çёре!“
Çурри çывӑрнӑ ўсёр пат-
тӑрсем
Пур те: лахӑл! лахӑл! кул-
са йаҫёç.
„Кётерин ӑçта çўрет çав
тата?“
Терӗ Йантрак арӑмӗ йеннел-
ле.
„Петёрпе çыпӑçат пулмалла
вӑл,
Епӗ ӑна та уйаса тӑмӑп!
Пит ҫарусар-ха хаљхи аҫа-
пӑҫа!“
Йантратат çапла пирён
Йантраках.
Çур-çёр иртсен тин тухса
кайрёç
Унӑн хӑнисем хӑйсен килӗ-
сене.
Хӑйӑ çути сўнтӗ Йантрак
пўртёнҫе.
Лӑпланҫӗ Мӑншу ырӑ ыйхӑ-
па.
Хутран-ситрен çеç йытӑ
вёркелет.

Ҫёрёлнӗ-куна авалхи ҫӑваш,
Хай тёттём пирки, уйама
пёлмен.
Хаљхи ҫӑвашсем апла мар
ёнтӗ:
Ҫиркёве çўреççӗ, кёл-тӑваç-
çӗ,
Кунёпе уйаса ирттереççӗ.
Хёрсем тухаççӗ пёр-пёрин
патне,
Йашсем пёр çёре пуçтарӑ-
наççӗ,
Ваттисем авӑ пёрене çинҫе
Вӑл-ку çинҫен пуплесе ла-
раççӗ.
Авӑ, теçетник туйипе çўрет,
Вӑл йала пуху пуçтарма
тухнӑ,
Ћёнет çынсене хай йуман
патнех:
„Пайан кантур таврашӗ ки-
лет“, тет.
Каллах мӑншусем утаççӗ
иккен
Икшер-виçшерён ват йуман
кутне,
Халӑх пухӑнса çитнӗ çит-
менех,
Килсе те çитрёç кантур
таврашёсем.
Нумай тӑмарёç, каласа па-
ҫёç
Мёскер ёçпеле хӑйсем кил-
нине.
Килнӗ-мён вёсем хупах
ёçёпе:
Хупах вырӑнёшён мӑншу-
сем укçа
Ыйтнӑ тет-мён те, анҫах
Йантрак

Туса та пётернӗ халӑх ёҫне.
Аллӑ тенкёшён мӑнма пулас
мар
Хупах хуҫи майлӑ халӑх
умёнҫе!
Укҫаран тарма Йантрак
ухмах мар:
„Алла алӑ ҫӑват,“ теҫҫё—
ахаљ мар.
„Йантрак вӑрман тупса кил-
нё-ши?“
Тесе шухӑшлатӑр пулё-ха
есир.
Ан та шухӑшлӑр шӑннӑ ёҫ
ҫинҫен!
„Кам вӑрман ҫёрне парат
таптама
Ахалех сире, ҫёрёк ҫӑпата?“
Тесе улпут кулса каланине,
Йантрак хӑйех каласа паҫё.
Пётрё вӑрман та, халӑх ҫё-
рё те!
Лӑпланӑр ёнтё, Мӑншу ҫы-
нёсем,
Ёҫмелли шырӑр хӑвӑр пёл-
нипе!
Тупса памё-ши пайан та
Йантрак?
Ҫук, анта кётёр пайан Йан-
тракран!
Ҫук, апла мар, йӑнӑш тухрё
манӑн.
Ак уҫҫиттёл кайат шкулал-
ла.

„Атӑр ёҫмелли ҫавӑнтан
ыйтар,
Шкул ҫёрне туртса илетпёр,
тесе,
Хӑратӑпӑр ӑна епир“, тет
Йантрак.
Ҫӑнахах та вӑл ёҫмелёх
ыйтрё,
Анҫах уҫҫиттёл кулса ка-
ларё:
„Хысна нихӑҫан та ёҫмеш-
кён памаст,
Урӑх ҫёртен шырӑр ӑна,“
терё.
Ҫынсем ёҫмелёх илеймерёҫ
те,
Шкул ҫёрне уншӑн ҫыпӑҫ-
рёҫ вара.
„Ҫӳреме урам ансӑр хӑвар-
нӑ!“
Тесе ёрлеҫҫё ерех пӑкки-
сем.
Шкул ҫёрне паттӑрсем икё
ҫалӑш
Туртса илҫёҫ-илҫёҫех ҫапла.
Анҫах телейсёр кун пулҫё
вёсен—
Нимён ёҫмесёр пуху салан-
ҫё.
Пулат ҫав ҫапла телейсёр
кун-ҫул!
Тёрёспе сире каласа пар-
сан,
Ку кун пек кунсем сахал

пулаççĕ;
Ĕненместĕр пулсан, йуманран ыйтăр,
Вăл сире лайăх йурласа парĕ;
Вăл йурлаť çын пек, тĕлĕнсех кайăр!
Унăн йурри пуçланаť ак çапла:
„Манăн тымарсем ерехпе ÿсрĕç,
Çулçăмсем—халăх хуйхи сассипе,
Иĕкелĕмсем ÿсĕр çынсем валли
Ерех ĕçнĕ ţух çыртмалли пулţĕç...“
Унăн малалли сăмахĕсене
Шухăшласа тупăр есир хăвăртан.

## 3) Сухати.

*(Ţăваш уйăвĕ).*

Мĕншĕн капла пайанхи кун
Мăншу йалĕ йенелле
Мăн çулсемпе, сукмаксемпе
Шап-шурă халăх тек иртет?
Йăкăр-йăкăр хĕр утаť,
Мĕшĕлтетсе карţăк пыраť,
Каţţă вĕçет вашлаттарса,
Старик васкаť ахлатса.
Пайан унта Сухати,
Авалтан ţăваш уйавĕ.
Çимĕк ыран тенĕ ţух
Мăншу çерем тăваткăлне
Ţăваш çынни пухăнаť:
Каţţă пыраť хĕр пăхма,
Хĕрĕ пыраť пăхтарма;
Çурла-çава илмешкĕн
Старикки те пыратех;
Çĕтĕк-çурăк сутас та,
Вуник çулхи хĕр валли
Хăйу илсе тавăрăнас,
Тесе пыраť карţăк та.
Суту-илÿ тумашкăн
Сухатийе пур таврари
Ţăваш аслă йалĕсенţен,
Пĕр аллă çухрăм таранран,
Çул тусанлине пăхмасăр,
Пыраççĕ сут-тăвакансем.
Акă вĕсем Мăншура
Лавккисене лартрĕçĕ:
Ăшĕсене йĕри-тавра
Тутăр-шăрçа çакаççĕ,
Хăйсен хыçне хăма çине
Пĕренĕк, хĕвел-çаврăнĕç,
Йĕркипе лартса тухаççĕ.
Пасар çĕрĕ çийĕнţе
Лавкасенĕн реţĕпе
Пулса тăнă урамсем.
Урам тăрăх каţţăсем
Йулташланса утаççĕ;
Хĕрсем пуххи пуххипе
Лавкаçăсем умĕнţе
Тутăр-шăрçа суйлаççĕ,
Хăйсем куçĕ айĕпе
Йашсем çине пăхаççĕ.
Пĕтĕм Сухатире те
Мăншу каţţисем пекки

Маттуррисем пит сахал.
Сӗтпе шыва кӳртнӗ пек
Вӗсем таса ҫитӗннӗ,
Ман йумансем хушшинҗе
Каска ҫурса пуранса,
Путмарланна майӗпе,
Пӗрлӗхен пек хӗрелнӗ.
Пуринҗен те маттуртарах
Пӗтӗм пасар варринҗе
Йалти Тукмак Петӗрех.
Пӗрле Тукмак Петӗрпе
Ҫӳрет тепӗр йаш аҗа.
Пасар тарах майӗпе
Уткаласа ҫӳреҫҫӗ.
Тепӗр аҗи пӗҗӗкрех,
Ансар хулпуҫҫиллӗскер,
Какарӗ те ҫав аҗан
Тухса тамасӗ малалла;
Куҫӗ анҗах пит җӗрӗ,
Хура куҫ-харши айӗнҗен
Йалтар-йалтар куранать.
Унан тути-ҫаварӗ
Җаранмасар Петӗрпе
Темӗн самах калаҫать.
Иккӗшне те вӗсене
Пасарти ҫынсем палласҫӗ,
Ҫӗлӗк илсе ирте҇ҫӗ.
Тукмак Петӗр йулташӗн
Тумӗ хура пуставран,
Хура туйа аллинҗе
Валҗтар-валҗтар выљанать.
Унан ҫине хӗрсем мар,
Ваттисем те пахаҫҫӗ.
Пӗри ун ҫине пӳрнипе
Катартса ҫапла самахлать
Хайӗн ҫывах пӗлӗшӗпе:
„Ав, Уй Петӗр ывалӗ,
Вӗреннӗ ҫӗртен ҫулана
Йала килнӗ пуранма.
Нумай ӗнтӗ вал вӗренме
Кайни пулать: пӗр вуна ҫул
Кӗнеке ҫинҗе шуралса
Тем тӗрлӗ аса вӗренет.
Тура пана танне-пуҫне
Кӗнекепе ӳстерет.
Ав халҗӗ Тукмак Петӗрпе
Пӗрле йунашар ҫӳреҫҫӗ."
Вӗсем калаҫса тана җух
Петӗрпе Ҫтапук ҫумне
(Ҫапла җӗннӗ аҗине)
Тракка пырса хутшанҗӗ.
Ака вӗсем виҫҫӗшӗ
Хут купас калана ҫӗре
Пырса таҗӗҫ итлеме.
Маншу капар каҗҗисем
Хут купасне калаҫҫӗ,
Хушаран йура йурлаҫҫӗ.
Ака ӗнтӗ, пах ӗнтӗ,
Каҗҗа ташлать, кур ӗнтӗ:
Ҫулҫа, тийӗн, вӗҫкелет,
Авкаланать ҫӗмӗрт пек.
Аҫтан Маншу каҗҗисем
Килӗшӗве илеҫҫӗ-щи?
Аҫтан ҫаван пек ҫамаллах
Ҫав вахатра тухать-ши?
Саванаҫа курмашкан
Пӗтӗм пасар пуханна.
Җаваш хӗрӗсем, сар хӗрсем,

Пăшăлтатса пĕр пĕрне
Тĕртсе антҫах тăраççĕ.
Сарă вăрăм катҫăсем
Арман пек çавăрăнса
Ташшисене ташлаççĕ,
Сассисемпе йурăсем
Тăса-тăса йурлаççĕ.

Хĕвел анма пуçласан,
Пĕҫĕккĕнех Сухати
Саланмашкăн пуçларĕ.
Пасар тăрăх ÿсĕрсем
Лапсăртатса çÿреççĕ.
Тумтирĕсем тусанлă,
Сĕлехисем йухаççĕ;
Хăйсене кура мар тата,
Пĕренĕксем ҫăмлаççĕ.

Сухати салансан та,
Мăншу йалĕ çыннисем
Хăнисемпе савăнса
Виç-тăваг кун Сухатийе
Хисеплесе ĕçеççĕ.
Мăншу йалĕ ĕçкĕре
Пайанхи кун йанкăшаť.
Ăшă тÿлек сывлăшра
Пĕрре йурă йан кайаť,
Тепре хут-купăс сасси
Ташлакансен сассипе
Йал хушшинҫе çуй тăваť.
Хурăнташсем, пĕлĕшсем
Пĕрлешеççĕ ĕçмешкĕн.
Аларан çÿрен куркине
Пĕрне пĕри савнипе
Тыттараççĕ тав-туса.
Сарă пысăк сăра курки
Хайар хăмла йÿççипе
Пуçĕсем патне пыртараť,
Килĕ хуçине мухтаса
Йурлаттараť йурăсем.

Акă аслă Шăмăшра
Савăнăçлă йурăсене
Йантратаççĕ катҫăсем
Тукмак Петĕр пÿртĕнҫе.
Петĕр пÿрҫĕ шурă пÿрт.
Аслă пÿрте пуçтарса,
Тирпейлесе пурăнма
Пĕр амăшĕ кăна унăн.
Вăл та пайан килĕнҫен,
Йулташĕсем пухăнсан,
Тухса кайрĕ хăнана.
Вунă çулта ашшĕнҫен
Йулнă Петĕр тăлăха;
Çапах Пÿлĕх пÿрнипе
Майĕпеле пурăнаť,
Амăшĕпе килĕштерсе,
Çынсенҫен те ҫаплăрах
Тăваť ĕçки-çикине.
Акă кĕçĕр йулташĕсем
Кĕрекене йĕри-тавра
Ларса тухнă йĕркипе.
Пуринĕн те аллинҫе
Йÿçĕ пыллă сăра курки.
Пысăк сĕтел умĕнҫе
Петĕр тăраť сарăлса.
Пирĕн ҫăваш йĕркипе
Йултащĕсен куркине

Хӗрипе тан тултарат̆.
Иулташӗсем ӗҫеҫҫӗ,
Ӗҫеҫҫӗ те йурлаҫҫӗ;
Йурламашкӑн ӡарӑнсан,
Тытӑнаҫҫӗ калаҫма.
Пуринӡен те ытларах
Кил хуҫийӗ калаҫат̆,
Унӑн ҫамрӑк хӑнисем
Шӑпах пулса итлеҫҫӗ.
Тракка анӡах хӑш ӡухне
Унӑн сӑмахӗ хушшине
Хӑйӗн кӗске сӑмахне
Кӳрте кӳрте ларткалат̆.
Ҫур-ҫӗр ҫитес умӗн тин
Тукмак Петӗр пӳртӗнӡе
Хӑйӑ ҫутине сӳнтерӡӗҫ.
Ҫутӑ аслӑ шурӑ пӳртрен
Йанкӑшакан маттурсем
Тухса кайрӗҫ ушкӑнӗпе.

Петӗр амӑшӗ, кӑвак ватӑ
карӡӑк,
Еҫкӗ-ҫикӗрен тавӑрӑнӡӗ
килне.
Аслӑ шурӑ пӳртне хуллен
кӗӡӗ те,
Пушӑ пӳртӗнӡе хӑраса кай-
рӗ.
Йӗри-тавра ватӑ пуҫне ҫа-
вӑрса,
Пӗртен пӗр ывӑлне куҫӗпе
шырат̆.
Сӑрланӑ сӗтел кӗрексрех те,
Сӑра витри те ун ҫинӡех
ларат̆,
Анӡах ҫук Петӗр сӗтел
хушшинӡе.
Хӑйӗн вырӑнӗ ҫинӡе те вӑл
ҫук.
Ҫӳрет пулӗ ҫав мӑнтарӑн
аӡи
Таҫта урамра йулташӗсем-
пе.
Мӗншӗн тата выртса ҫывӑр-
ман-щи
Ӡипер ӗҫсе-ҫинӗ хыҫҫӑн
ухмах?
Тесе шухӑшлат̆ Петӗр амӑ-
шӗ.
Шӑпӑр-шӑпӑр тумлам пек
куҫҫулӗ
Пиӡӗ ҫине унӑн тумласа
анӡӗ.
Мамӑк тӳшекне сарса хуӡӗ
те,
Ҫине йӑрӑмлӑ пысӑк ҫӑм
ҫитти
Витсе йаӡӗ вӑл ырхан ал-
липе.
Унтан кӑвак пуҫне усса
ларӡӗ те,
Пысӑк хуйхӑлӑ шухӑща
кайса,
Тӑм кӗлетке пек хытса кай-
рӗ вӑл.
Унӑн пуҫӗнӡе Петӗрпе
ашшӗ,
Ырӑ пурӑнӑҫ, телейлӗ кун-

сем,
Çил вӗрнӗ пекех килсе ир-
теççӗ.
Хӑй йулташӗсем унпала
ларни,
Каçпа пухӑнса вӑйӑра вы-
љани,
Тӑлӑх амӑшӗпе кӗпе-йӗм
çуни,
Йӑмра айӗнҫе тӗр туса лар-
ни,—
Пур те пӗрле пухӑнса килсе,
Хӑнара пӑртак хӗрнӗ пу-
çӗнҫе
Пӗрин хыçӗнҫен тепри ир-
теççӗ.
Унтан увӑн йывӑр шухӑшӗ-
сем
Хӗр ҫухнехи пурӑнӑçӗ çин-
ҫен,
Арӑм пулсассӑн, Васукпа
йепле
Пурӑнни çине куçса кайрӗ-
çӗ:
Хуњамӑшӗ усал пулсассӑн та,
Васук, Петӗр ашшӗ, пит
аван çын-ҫӗ:
Шӑратса йарса ӗçе ӗçлет-
ҫӗ,
Нимӗнле çынна та парӑн-
маст-ҫӗ,
Унпа нихӑçан пӗрре йат-
лаçман.
Анҫах çыннӑн телейлӗ кун-

çулӗ
Вӑрӑм пулмалла пит сайра
пулат.
Турӑ Васука çуратнӑ ҫухне
Кӗске ӗмӗрлӗ çырнӑ пул-
малла!
Вилҫӗ хӗллехи çил-тӑвӑлта
вӑл.
Ӗмӗт парса пӑхса савӑнтар-
ма,
Пӗртен пӗр Петӗр йулҫӗ
Васукран.
Нумай та пулмаст-ха вӑл
аҫа-ҫӗ,
Халӗ çитӗнсе ар пулҫӗ ӗнтӗ.
Çапла шухӑшласа ларнӑ
çӗртех
Петӗр амӑшӗ çывӑрса кайрӗ.
Çывӑрнӑ çӗрте вӑл тӗлӗк
курат:
Петӗр туйаннӑ йӗпкӗн хура
ут;
Пит нумай пулат çӳресе
курман
Пӗлӗшсем пагне вӗсем çӳ-
реççӗ.
Петӗрне вӑл ӗнтӗ авланта-
растӑн:
Хӗрне суйланӑ, çураçма акӑ
Хура лашана кӳлсе кайаç-
çӗ.
Çул çинҫе Петӗр ут пулҫӗ
тӑҫӗ;
Пӗрле пыракан йӗвкӗҫи вӗ-

сен
Ӑна, ут пулсан, урапана
кӳлтҫӗ,
Хура лашине тӑварса йаҫҫӗ.
Урапана пӗҫҫен вӑл туртса
ҫупаҭ.
Унҫҫен те пулмасҭ, тӑварӑнса кайрӗ,
Тӑварӑнса кайса куҫран ҫухалҫӗ.
Хӑй вӑл пӑртакран хӗсӗк
ҫырмара
Хуйхӑлӑ пуҫне пӗкнӗ те,
ларат.
Вар йӗри-тавра сӗм вӑрман
кашлат,
Варӑн тӗпнелле ҫитӗнсе
анаҭ.
Ҫавӑнтах тата вӑл кӗрле
пуҫларӗ:
Йывӑҫ авӑнса ҫӗре пуҫҫапаҭ,
Урлӑ та пирлӗ тискер кайӑксем
Уласа кӑна ҫупса ҫӳреҫҫӗ,
Ҫӳлте йавӑнаҭ хуп хура
пӗлӗт.
Ҫавӑнтах тата йӗпкӗн хура ут
Выҫа кашкӑрсем тапӑннӑ
пирки,
Хай тарӑн вара пырса тирӗнет,
Тирӗнет те вӑл ҫавӑрӑнса
кайса,
Лӑп лапашкана тӑсӑлса выртаҭ.
Унтан аслати авӑтма пуҫлаҭ.
Шатӑртаттарса аҫа ҫапрӗ
те,
Кашкӑрсем пур те ҫырма
тӗпнелле
Йӑванса кайса сирпӗнсе
анҫӗҫ;
Вар айӑккинҫен татӑк-сыпӑксӑр
Айалалла вӗт ҫул ӳкме тытӑнҫӗ.
Ларса ҫывӑракан ватӑ карҫӑк,
Темӗнле сасартӑк хӑранипе,
Ҫӗтресе кайса вӑранса кайрӗ.
Пӳрт-умӗ алӑкне тултан шакаҫҫӗ.
Паҫӑр килнӗ ҫух, Петӗр
килте пулӗ
Тесе, алӑка кӗле хунӑ вӑл,
Халӗ ҫасрах тухса уҫрӗ
ӑна.
Алӑкне уҫрӗ, ывӑлӗ тӑраҭ,
Тӑра параҭ, хӑй нимӗн те
ҫӗнмест;
Мӗншӗн ҫасрах уҫмарӑн?
тесе те
Ҫӗнмесӗрех вӑл пӳртнелле
кӗҫӗ.
Амӑшӗ те унӑн ҫӗнмесӗрех

Унăн хыçĕнҫен пўртелле
кĕҫĕ.
Петĕр васкаса аттине хыв-
рĕ,
Унтан сак çине выртса çы-
вăрҫĕ.
Нимĕн сармасăрах выртни-
не курсан,
Амăшин путăк пиҫĕсем тă-
рăх
Куççулĕ, шыв пек, тумласа
анҫĕ.
Унтан пăртакран тўшекки
çине
Шăмми-шаккине тăса хуҫĕ
вăл.
Анҫах ыйăх унăн кĕлетки
çине
Хăйĕн тутлăхне антарса
парса,
Шывлă куçĕсене хуптарай-
марĕ.
„Тем хăтланман-ши, темскер
туман-ши?
Пит хăрушă тĕлĕк тĕлленнĕ,
Ăçта çур-çĕрҫҫен çўренĕ-ши
ку?"
Тесе хуйхăрса анҫах-выртаť
вăл.

Шăпах çывăраť халăх Тип-
Варта,
Сайраран çеç йытă лĕркесе
улаť.

Лутра пўртсенҫе хăйă çу-
тисем çук,
Урамĕ тăрăх утакансем çук.
Ўсĕр çынисем йывăр ыйхă-
па
Вилнĕ çынсем пек çывăраç-
çĕ çав.
Акă хулленĕн йалăн уй
хапхи
Уçăлса хупнин илтĕнҫĕ сас-
си.
Пĕр пысăкрах пўрт киҫкар-
ти умне
Йулан утлă çын пырса ҫа-
рăнҫĕ.
Вăл хапхана пит хытă шак-
карĕ.
Кил хуçине пыл пек тутлă
ыйхăран
Вăратса ҫĕнсе илҫĕ хăй
патне.
Шăппăн иккĕшĕ пĕр пĕ-
ринпе
Тĕмĕнле ĕç çинҫен калаçса
илҫĕç.
Ўсĕр килĕ хуçи анасла тă-
раť,
Çапах темĕн тума сăмахне
параť.
Унтан йулан çын кайалла
кайрĕ.
Сĕм тĕттĕм çĕр, нимĕн те
курăнмасť,
Тўлек сывлăша ним те йант-

ратмасť.
Йулан утлă çын кайсан, пăртакран,
Урам тăрăх çын утни илтĕнҫĕ.
Ак уй хапхине уçса йаҫĕ те,
Ӳсĕртерехскер тайăлмасăрах,
Урă çын пек, тухса çулпала утрĕ.
Анҫах нумай та çулпа утаймарĕ,
Такам çухинҫен çатăрласа тытрĕ.
Унăн куçĕсене тăла варрипе
Хупласа тытса хытарса çыхрĕç.
Çăварне пĕри паранкă ҫикрĕ,
Унтан вĕренпе çăварлăх парса
Кайалла туртса çыхса та лартрĕç.
Ни кăшкăрма çук, ни курмалла мар,
Аптăрарĕ çын: аллипе сулас,
Алли итлемест—тапăнакансем
Малтанах ăна шатăртаттарса,
Шăнăр татăлас пек, кайалла
çыхнă.
Тĕлĕкре мар-ши ку, тесе шухăшлаť
Кăпкăна ленкнĕ мĕскĕн ӳсĕр çын.
Тăшманĕсем унăн пăрмай ĕçлеççĕ:
Ăна хирелле сĕтĕрсе кайрĕç,
Унтан лакăм-тĕкĕмсем тăрăх
Урлă та пирлĕ турта пуçларĕç.
Илтĕнҫĕç вара ун хăлхи çинҫех
Асаплантаракансен сăмахĕсем:
„Йепле-ха, Йантрак, пирĕн йал патши!
Сăмах патăн-çке йертсе каймашкăн
Петĕр Çтаппанĕ патне есĕ пире,
Ма тата халĕ йертсе каймастăн?
Сăмахуна вырăна кӳместĕн?
Хĕрхенетĕн-им хăнтан ăслине?
Ех, ухмах, ухмах, апла Мăншура
Çынсем итлеме пăрахĕç сана!
Йертсе кай пире, йертсе кай ҫасрах!
Турă пул, ырă ту: йертсе

кай пире!“
Ҫапла мăшкăлласа кулнă
хыҫҫăн
Пирĕн Йантрак ҫине йывăр
ҫăмăрсем
Пере те пере анма пуҫларĕҫ.
Иашсем Йантрака хĕнесен
хĕнесен,
Пĕр лаша ҫине урлă хуҫĕҫ
те,
Тип-Вар йенелле ҫуптарса
кайса,
Хура ҫур-ҫĕрте курăнми
пулҫĕҫ.

Ирхи тĕтре йăлт саланса
пĕтрĕ,
Хĕвел те тухса ҫӳле хăпарҫĕ,
Анҫах Мăншура халĕ те
ҫынсем
Урам варрине тухса пăхмаҫҫĕ.
Вырăс апаҫĕ ҫийес умĕн
тин
Кĕтӳве хуса сарă хĕрсем
йаҫĕҫ.
Шыв патне ирех кайакан
хĕрсем
Кăнтăрла умĕн тин кайса
килҫĕҫ.
Сивĕ шывпа ашшĕ-амăшĕсем
Мухмăрсем уҫма ҫăвăнаҫҫĕ
ĕнтĕ.
Кăнтăрла иртсен, Мăншура
каллах
Тапранса кайрĕ Сухати вĕҫĕ.
Мухмăра ҫĕртме ҫынсем
утаҫҫĕ
Ăҫта пур пĕлĕш-хурăнташ
патне.
Пĕлĕшĕ патне ҫитсе тăраť
пĕри,
Лешĕ ун патне тухса утнă
мĕн.
Хăш ҫухне ҫапла пĕр пĕрне вĕсем
Шырама тухсан, урăх ҫын
патне
Мухмăр уҫмашкăн кĕрсе
кайаҫҫĕ.
Йантрак та мухмăр уҫасшăн курнаť—
Урам тăрăх вăл сулланса ҫӳрет.
Таҫта лапара ҫĕр каҫнă пулĕ,
Тесе шухăшламалла куракаң ҫын.
Тумтирĕ пылҫăклă, хуралса
пĕгнĕ,
Ĕнер тăхăннă пасар кăвак
йĕмĕ
Йытă тулалнă пек ҫурăлса
пĕтнĕ,
Салтак картусĕ ҫара лапра

çеç.
Вăл пĕр çын патне пăрăнса
кĕҫĕ,
Пӳртне кĕрсессĕн сăх-сăхса
илҫĕ,
Унтан пурне те алă парса
тухрĕ.
Хуçи, Михали, пĕр витре
сăра
Ăсса килтерсе кĕрекене
лартрĕ.
Пăртак ларсассăн, сăмах
майĕпе
Йантрак мухмăр уçма ерех
ыйтрĕ.
Хуçа çавăнтах кăмăлне ту-
рĕ:
Пĕр ҫеркке ăна тултарса
паҫĕ,
Унăн хыççăнах тепре те
йаҫĕ.
Пуçларĕ вара Йантрак ка-
лаçма,
Темĕнле тĕлĕк каласа пама:
„Те куç кĕрегех, те тĕлĕкре
мана
Шуйттан пек çынсем хĕне-
рĕç çĕрле.
Вĕт ҫулсем тăрăх калла та
малла
Турткалана пек, астăвап
епĕ;
Темĕн ун умĕн ҫĕнҫĕç пек
мана,
Кантур таврашĕ килмелле
тесе...
Халĕ йăлтах манса пĕтнĕ
ĕнтĕ,
Астăваймастăп тĕлĕкри ĕçе.“
Йанктрак калаçса ларнă
вăхăтра
Урам тăршшĕпе йулан утлă
çын
Тĕпĕртеттерсе сиктерсе кай-
рĕ.
Сасартăк Йантрак шухăша
кайрĕ,
Хăй хура пуçне çĕрелле
усрĕ,
Тем астăвасшăн çамкине
тытрĕ.
Тĕксĕмленҫĕç унăн хура ку-
çĕсем,
Алли-урисем çемçелсе кай-
рĕç.
Çапах та хăй вăл хуça па-
тĕнҫен
Килнелле тухса утма вăй
тупрĕ;
Тав тумасăрах тухса супăн-
ҫĕ.

## 4) Йытă варĕ.

Пирĕн Йантракăн пахҫи
хыçĕнҫе
Хĕрлĕ тарăн вар алăтса
кайнă.
Çав вар тĕпĕнҫе вĕтĕ ҫул

кăна,
Тата ашкăнса вĕлтĕрен ўсет,
Шыв тавраш̆ĕ мĕн çуркунне анђах
Йĕпеткелесе кайаҭ вăл вара.
Çавăнта никам та ирĕклĕ пуçпах
Мăншу çынĕсенђен анакансем çук:
Ансан тухма пит йывăр çав унтан.
Унта йытăсем анђах çўреç-çĕ,
Çавăнпа та вăл „Йытă варĕ“ йатлă.
Акă кĕçĕр çав вар тăрăх пĕр çын
Упаленсе пыраҭ Иантрак хыçнелле.
Акă йăпшăнса Йантрак пахђине
Карта урлă вăл каçса кĕђĕ те,
Киљкарти йенне уттара пађĕ;
Киљкартинђе вăл пўрт-умне кĕђĕ.
Тĕлĕнмелле шăп Йантрак пўртĕнђе,
Хăш ђухне анђах йăнăшса йараҭ
Мăн тўшек çинђе сывăмар Йантрак.
Алăка уçса пирĕн çын кĕрсен,
Вăл: „кам вара есĕ?“ тесе ыйтрĕ,
„Тĕттĕм пирки паллаймастăп“, терĕ.
Лешĕ хирĕç: „епĕ, Йантрак пиђђе,
Сан патна пĕр ĕçпе килтĕм“ терĕ,
„А, Уҭак, ларах кунталла иртсе,
Мĕнле ĕç пур санăн?“ терĕ Йантрак
Çиленнĕ пек сасăпа Уҭака.
Уҭак: „Ан çилен, Йантрак пиђђе,
Малтанах, сăмаха калаҭђенех,
Епĕ сан валли пит кирлĕ хыпар
Илсе килтĕм,“ терĕ те, малалла
Йантрак патнерех пырса тапратрĕ:
„Иртнĕ каçпала сана çурçĕрте
Касак килсе ђĕнсе тухрĕ-и уйа
Петĕр Çтаппанĕ патне йертсе кайма?
Вăл хăйсем ухтарма килни çинђен
Каласа пађĕ-и сана ун ђухне?“
Йантрак куçĕпе çавăрса

илсе,
Томĕн астуса илнĕ пек пулҫĕ.
Унтан вăл: „Ну, вара мĕн? малалла?“
Тесе Уҫакран ыйтрĕ хулленрех.
Хăй унăн ҫине сăнаса пахаҫ,
Итлес те килет, пĕлтерес те килмест
Унăн йаш Уҫака ĕнерхи ҫинҫен.
Уҫак Йантрака малалла калаҫ:
„Ĕнер каҫ сана ҫĕнсе тухакан —
Касак мар вăл: Тукмак Петĕрĕ вăл.
Вăл йури сана ҫывăрна ҫĕртен
Таса хирелле астарса тухрĕ.
Сана мĕнле асаплантарнине
Пăртак та пулсан астăван пулĕ-ҫке?
Петĕр хĕтĕртнипе епир сана
Хĕнерĕмĕр ҫĕрле йаш аҫасем“.
Ҫапла йаш Уҫак каларĕ анҫах,
Йантрак выртакансkер тăрса ларҫĕ;
Ҫиленсе пĕрре шуралса кайаҫ.
Тепре кăвакарса ҫĕтре пуҫлаҫ,
Унтан сасартăк Уҫака мăйран
Пăвса тытаҫ те ҫапла кăшкăраҫ:
„Есĕ те унтах пултăн-и пĕрле?
Халĕ ҫийĕнҫен кулса ҫӳретĕн-и?
Ҫакăнтах пуҫна пуҫтарса хурам!
Шăмму-шаккуна ҫунтарса йарам!
Ӳлĕмрен сан пек каҫрашкасене
Ҫынсенҫен кулса ҫӳреме вĕрентем!
Хĕнес те кула-ас!“ терĕ те, Йантрак
Ҫавăнтах Уҫака туртса пăрахрĕ
Хăй тăрса ларнă выранĕ ҫине.
Уҫак хăраса ҫĕнейми пулҫĕ,
Калас сăмахне те манса кайрĕ.
Унăн телейне Йантрак ҫарăнса:
„Ыра хыпарпа килтĕм, терĕн есĕ,
Кала тата халĕ?“ тесе кăшкăрҫĕ.

Уҫак саванса ҫăварне уҫрĕ:
„Петĕр ĕнер сана хĕнерĕ те,
Кĕҫĕр йăмăкна кăларса
кайас тет.
Ҫавна пĕлтерме килтĕм сан
патна.
Куратăн пулĕ: саншăнах
килтĕм,
Йар ĕнтĕ мана“, тесе пĕтер-
ҫĕ
Иантрак айĕнҫе выртакан
Уҫак.
Иантрак ҫавăнтах ăна йаҫĕ
те
Пит йăвашшăн калаҫма ты-
тăнҫĕ.
Иăмăкне кăларма Тукмак
Петĕрĕ
Хăш вăхăтра, миҫен ки-
лессине,
Иăлтах тĕпҫесе пĕлҫĕ вăл
унтан.
Уҫак Петĕрпе ыттисем ҫине
„Ҫăмăлттай“ тенĕшĕн ҫилен-
нĕ иккен,
Тата ҫитменнине Кĕтерине
те
Илесшĕн пурăннă тахăҫан-
танпах.
Ҫак икĕ йапала пирки вăл
пайан
Сынсем курман ҫĕртен Иан-
трак патне
Пырса кĕҫĕ те, хăй йулта-
шĕсен
Вăрттăн канашне каласа
паҫĕ,
Ҫийĕнҫен пăртак патак та
ҫисе тухрĕ.

Катаран тĕтре ҫутăлса ки-
лет,
Ҫурăм-пуҫ-ҫăлтăр хăпарнă
анҫах—
Мăншу ҫынĕсем ура ҫинҫе
те,
Пăлханса Тип-Вара ҫупаҫҫĕ
пур те,
Хашкаса ахлатса пыраҫҫĕ
хăйсем.
„Йытă варĕ хĕрринҫе ирхине
Тукмак Петĕрне Иантрак
сенĕкпе
Ҫиксе вĕлернĕ“, тесе ҫупаҫ-
ҫĕ.
„Хĕр кăларма кайнă та, хăй
пуҫне
Пĕтернĕ-ĕҫ-кам мăнтарăн
аҫи“,
Тесе карҫăксем те ҫавăнтал-
лах
Вĕтĕ утăпа утса кайаҫҫĕ.
Иантрак пахҫи вĕҫĕ ҫумĕ-
пеле
Йытă варĕ тăрăх сукмак
выртаҫ.
Ҫав сукмак ҫине халăх
пухăннă,

Йантрак пахҫине те нумай
тулнӑ.
Иантрак пахҫинҫе, паранкӑ
лартнӑ
Хура ҫӗр ҫинҫе шурӑ кӗпе-
йӗмлӗ
Маттур Петӗрӗн виллийӗ
выртаҭ.
Ҫӗрӗ ҫын пекех вӑл хӗрлӗ
сӑнлӑ,
Тутийӗ кӑна пӑртак пӑр-
наҫнӑ.
Хӑрах аллипе ҫӳҫӗнҫен тыт-
нӑ,
Тепӗр аллийӗ кӑкӑрӗ ҫинҫе.
Кӑкӑрӗ ҫинҫе, ҫӗри тӗлӗнҫе
Сенӗкпе ҫикнӗ вырӑн ҫара
йун,
Иунӗ те унӑн таса, хура
йун мар.
Петӗртен пӑртак ҫеҫ ката-
рахра
Вӗренпе ҫыхнӑ Иантрак
лараҭ,
Ҫынсем ҫинелле куҫӗ айӗн
пӑхаҭ,
Темскер ҫӑмласа ларнӑ пек
лараҭ.
Халӑх хушшинҫе Тракка
Ҫтаппана
Иантрак Петӗре вӗлерни
ҫинҫен
Акӑ ҫапла каласа кӑтӑртаҭ:
„Епир Кӗтерин йапалисене
Йӑлт сукмак ҫине йӑтса
тухнӑ-ҫӗ.
Сасартӑк Йантрак сиксе ту-
хаҭ те,
Сенӗк йӑтса пирӗн пата
ҫупаҭ.
Епир майӗпе йапаласене
Урапа патне йӑтса утатпӑр.
Урапа уйра тӑраҭ-ҫӗ пирӗн.
Петӗр пахҫаран тухман-ҫӗ-
ха,
Вӑл Иантрака хирӗҫ ҫавӑ-
рӑнҫӗ те,
Ӑна: „Мӗн хӑтланатӑн вара
капла?
Малалла пӗрле ӗҫсе-ҫимел-
ле,“
Тесе ӳкӗтлесе ҫарма хӑт-
ланҫӗ.
Лешӗ ҫитрӗ те тӳрех кӑкӑр-
тан
Сенӗкпе ҫиксе шӑтарҫӗ ӑна.
Петӗр пит хытӑ кӑшкӑрса
йаҫӗ,
Унтан нимӗн те хӑрамасӑ-
рах,
Иантрак ҫинелле вӑл тӳрех
сикрӗ,
Сикрӗ те ӑна пусса антар-
ҫӗ.
Анҫах епир ҫупса ҫитнӗ
ҫӗре
Иантрак ҫийӗнҫен ишӗлсе
анҫӗ,

Кăкăрне тытса „Кĕтерин!“
терĕ,
Кĕтерин терĕ те вилсе кай-
рĕ.
Амăшне никам та вăл вил-
ни çинҫен
Кайса калакан пулман ку-
рăнаť-ха“,
Терĕ те Тракка шăпах ҫа-
рăнҫĕ,
Пĕрре йывăрăн сывласа
илҫĕ.
„Амăшĕ килет, амăшĕ ки-
лет,“
Теме пуçларĕç пухăннă çын-
сем.
Киљкарти йенҫен ҫăнах пĕр
карҫăк
Пуçне ҫĕтретсе пахҫана
кĕҫĕ.
Вăл тӳрех Петĕр патне
пыҫĕ те,
Унăн вилли çумне усăнса
анҫĕ.
Унтан вăл ăна çырĕ пуçĕн-
ҫен
Ыталаса тытрĕ те хытса
кайрĕ.
Пĕтĕм халăх унăн çине пă-
хаť.
Вăл ларҫĕ ларҫĕ те пуçне
çĕклерĕ,
Унтан урисем çине тăҫĕ те,
Вата кучĕсем çутăлса кай-
рĕç,
Çийес пек пăхаççĕ Йантрак
çине,
„Пĕт! Пĕттĕр санăн ăрăву-
йăху!
Санăн кил-çурту кĕл пулса
вĕçтĕр!
Унăн вырăнне вĕлтĕрен
пустăр!
Е-е-ех, Йантрак, Петĕре
есĕ...“
Терĕ те карҫăк татăлса
анҫĕ.
Татăлса анҫĕ те, тăсса хунă
пек,
Ывăлĕ çумне тăсăлса вырт-
рĕ.
„Амăшĕ те вилҫĕ“, терĕç
те, çынсем
Хĕвел тухăçĕ йенелле пăх-
са,
Пур те виçĕ хут сăх-сăхса
илҫĕç.
Пĕр Уťак анҫах тӳп-тӳрĕ
тăраť,
Вилнĕ çынсемшĕн Турра
пуççапмасť.
Унтан сасартăк вилĕсем
патне
Утса пырса ҫăркуçланса
ларҫĕ.
Ларҫĕ те, Петĕр йунне çу-
ласа,
Кăшкăрҫĕ пĕтĕм халăх

илтмелле:
„Епĕ вĕлертĕм, каçарăр!“
терĕ.

Çак ĕçсем пулни вунă çул
иртрĕ,
Мăншура унтанпа нумай
улшăнҫĕ.
Тип-Варта Йантрак çурҫĕ
вырăнне
Вĕлтĕрен пусса хупласа
илнĕ.
Карҫăк ылханĕ вырăна çит-
рĕ.
Иантрак пуçĕпех Çĕпĕре
кайрĕ,
Унта ылттăн тăпри ҫавнă
çĕрте
Çĕр айне пулса вилнĕ, теççĕ
хăшĕ.
Арăмĕ унăн каҫҫа кайрĕ
те,
Çурҫĕ-йĕрне те турттарса
кайрĕ.
Кĕтерин халĕ Çĕрпӳ хулин-
ҫе
Хĕр ĕмĕрне монастырте пу-
рăнса
Турра пуççапса ирттерет
ĕнтĕ.
Тукмак Пĕтĕрĕн мĕн пур
килђ-çуртне
Сутрĕç те, укçине ҫиркĕве
хуҫĕç.
Пĕлтĕр çула унăн çурҫĕ
вырăнне
Ывăлĕ валли Михали илҫĕ.
Ĕлĕк çăмăлтарахскер, халĕ
Уйак
Тăнлă çын пулса хăй хуçа
пулҫĕ.
Унăн çумĕнҫе Тракка пу-
рăнаӳ.
Вĕсене иккĕшне те Шупу-
çĕнҫе
Лайăх çынсем тесе хисеп-
леççĕ.

## НАРСПИ.

### 1) Силпи йалĕнҫе.

Пуш-уйăхăн вĕçĕнҫе
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи ҫăваш йалĕнҫе
Йур ирĕлҫĕ васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура
Йурĕ кайса пĕтнĕрен,
Тухаӳ курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ, хайар хĕл иртет,
Кайаӳ йĕрсе, хурланса;
Сивĕ куççулĕпе йĕрет
Иртнĕ кунпăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анҫах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хĕл куççулĕ шавласа
Йухса кайрĕ çырмара.
Аҫи-пăҫи выљаса,

Ҫупса ҫӳрет урамра.

***

Килҫӗ ыра ҫуркунне,
Килҫӗ, йаҫӗ ӑшӑтса.
Хӗвел саваҭ тӗнҫене,
Хӗл ӑйхинҫен вӑратса.
Тӗттӗм вӑрман ҫӗрӗлет,
Йешӗл тумтир тӑхӑнаҭ,
Ҫеҫен хир те йешерет,
Илемӗпе мухтанаҭ;
Тӗрлӗ тӗрлӗ ҫеҫексен
Ыра шӑрши сарӑлаҭ.
Пур ҫӗрте те кайӑксен
Лайӑх йурри йанӑраҭ,
Ҫӳлте, пӗлӗт айӗнҫе
Тӑрри йурри илтӗнет,
Ҫемҫе курӑк ҫийӗнҫе
Путек-сурӑх сиккелет.
Хӑй кӗтӗвӗ патӗнҫе
Аҫа шӑхлиҫӗ калаҭ:
Хырӑмӗ пит выҫнипе
Силпи йалнелле пӑхаҭ.

***

Силпи йалӗ пуйан йал,
Лараҭ вӑрман ӑшӗнҫе.
Кантур пекех ҫурҫӗсем
Ват йӑмрассем айӗнҫе,
Йалӗ тавра укӑлҫа,
Ҫӗнӗ ҫатан укӑлҫа,
Кив капанлӑ анкарти,
Тӗрлӗ ҫимӗҫлӗ пахҫа;
Аслӑ урам тӑрӑшшӗпе
Хӑма витнӗ ҫурҫӗсем,
Урам икӗ айӑккипе
Йем-йешӗлех саҫӗсем.
Ҫуртсем тавра кил-карти
Ҫул хӳме пек ҫавӑрнӑ.
Сарӑ хапха килсерен
Ҫӗнтӗрленӗ тӑрӑлӑ.
Силпи йалӗ аслӑ йал,
Хула тийӗн инҫетрен.
Ахӑр кунти ҫӑвашсен
Мулӗ пуртӑр ҫав вӗсен.

***

Ҫырма йухаҭ кӗрлесе
Аслӑ йалӑн ҫумӗпе.
Хӗвел тӗрӗ тӗрлесе
Вылаҭ унӑн шывӗпе.
Тӑрӑ шывӑн ӑшӗнҫе
Кӑвак пӗлӗт йавӑнаҭ,
Ватӑ йӑмра тайӑлса
Тӗсне пӑхса савӑнаҭ.
Авӑ кӗпер ҫийӗнҫе
Старик лараҭ вӑлтапа:
Йапӑрт-йапӑрт пуллине
Улталасшӑн ӑманпа.
Ав аҫасем ҫӳл йенҫе
Шывра ишсе ҫӳреҫҫӗ,
Пулӑ тытан ваттине
Хирӗҫтерме пӗлеҫҫӗ.
Акӑ пӗр ҫын кӗперпе
Каҫса пыраҭ ҫырмана.
Ҫырма урлӑ каҫрӗ те,
Кӗрсе кайрӗ вӑрмана.

***

Ҫӑтмах пекех туйӑнаҭ
Силпи ҫӑваш йалӗнҫе,
Вӑхӑт иртни сисӗнмест

Савăнăçла кунсенҫе:
Кайăк йурри, çын сасси
Йан-йан йарать таврана;
Çуркуннехи хавас йурă
Килсе кĕрет хăлхана.
Урам тăрăх çыннисем
Улпут пекех утаççĕ.
Пўрт хыçĕнҫе шавласа
Аҫи-пăҫисем выљаççĕ.
Нар пек хитре хĕрĕсем
Акăшсем пек утаççĕ.
Ҫăнкăр-ҫанкăр тенкисем
Йалтăртатса пыраççĕ.
Çĕр çĕмĕрсе каҫҫăсем
Ташлать хапха умĕнҫе.
Пуранăççем ах, аван
Аслă Силпи йалĕнҫе!

*
* *

Çакă çутă тĕнҫере
Вăйли çук та етемрен:
Шывсем çинҫе, çĕр çинҫе
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анҫах вăйлă етем те
Хăй тĕнҫине пăхăнать.
Укçапала ерехех
Сынна ăсран кăларать.
Асла Калăм ернинҫе
Мĕнле ҫаваш ĕçмен-ши!?
Тарăн нўхреп ашĕнҫе
Мĕн ҫухлĕ сăра пĕтмен-ши!?
Еçнĕ те çав, çинĕ те,
Йĕркипеле сикнĕ те,
Унсăр пуçне йеплелле
Тăвас тетĕн праçнике?

Кун иртнĕçем урамра
Усĕр çынсем нумайрах,
Каç пулнăçем вăрмана
Сасă кайать хытăрах.
Ĕçе ĕçе kaçалла
Ўсĕр ҫăваш ывăнать,
Çуркуннехи пыљҫăк та
Канма çемçе туйăнать.
Выртать ҫаваш улпут пек,
Шухăшламасть ăçтине,
Пĕтĕм урам тăрăшшĕне
Кăшкăрать хăй йуррине:
Нумай ĕçле нўмай çи,
Хытă тарла хытă ĕç.
Ерех тесен, ĕç çынни
Нихăшĕ те тиркемест.
Вăхăҫĕпе ĕçлĕпĕр,
Вăхăҫĕпе ĕçĕпĕр.
Килте ĕçме пулмасан,
Кўршĕ патне кĕрĕпĕр.
Кўршĕн ĕçме пулмасан,
Уйранне те ĕçĕпĕр.
Уйранĕ те пулмасан,
Тура парасса кĕтĕпĕр.

*
* *

Калăм иртет, йур пĕтет,
Çурхи суха та çитет:
Ҫăваш ҫасах уралмасть,
Мухмăр иртсе кайаймасть.
Ĕнтĕ ўсĕр ҫăвашсем
Урăр çине тăрăр-ха!
Йем-йешĕлех çўл тусем,
Шыв та ҫакнă çырмара.
Ей пиҫҫесем, тăрăр-ха,

Урлă-пирлĕ пăхăр-ха:
Ака пуçне тӳрлетес,
Урапуна тирпейлес;
Сивĕ шывпа çăвăнсан,
Питне-куçна тĕс кĕтĕр,
Авантарах апатлан,
Ака тума вăй кĕтĕр.
Кӳлес ĕнтĕ лашана,
Тухса кайас акана.
Ей Турăçăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар!

## 2) Сарă хĕр.

Йешĕл курăк хушшинҫе
Сап-сарă ҫеҫек ӳсет,
Ăслă Силпи йалĕнҫе
Нарспи йатлă хĕр ӳсет.
Пиҫĕ-кӳçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă ҫеҫек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
Йавăнаççĕ хыçалта
Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса утса пынă ҫух,
Шăнкăртатаť тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă ҫух,
Каҫҫăн ҫĕри çĕкленет.
Çӳхе тути кулнă ҫух,
Каҫҫă ҫунĕ çемçелет.
Хирти сарă ҫеҫеке
Ăшă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каҫҫă йуратмĕ?

Хĕвел анса ларсанах
Питне çăваť, шăлăнаť,
Вăййа тухма шĕлкеме
Кăкăрĕ çине çакаť,
Шăнкăр-шанкăр теветне
Хулпуççи урлă йараť,
Хĕрлĕ пурçăн тутăрне
Хĕрле çавăрса çыхаť.
Вăйăсенҫе ун сасси
Кайăк сасси йевĕрлĕ,
Ахăлтатса кулнă ҫух,
Çирĕп çын ку темелле;
Вăйă саланиҫҫенех
Савăнтараť сассипе.
Ирхи çăлтăр хăпарса
Йал-йăл кулаť тӳпере.
Хăйĕн ашшĕ килĕнҫе
Нарспи канлĕ çывăраť:
Ыра тĕлĕксем курса
Тĕлĕкре те савăнаť.
Ирех тăраť, тумланаť,
Нарспи ĕçе тытăнаť:
Йе пурçăн çип илет те,
Йурла йурла тĕрĕ тăваť;
Йе çĕлеме лараť те,
Çĕвви шăрçа пек пулаť,
Сӳс хурелĕ хурçă йыгă
Пĕр кĕрет те, пĕр тухаť
Йе пир тĕртме лараť те,
Выльантараť ăсине;
Йе хултăрҫă тытаť те,
Çипне тийет çĕррине;
Йе сак çинҫи кушакĕ
Питне çăва пуçласан,

Апат хатĕр хăнашăн,
Алли-ури çăмăлран...
Аван иртрĕ пурăнăç
Хĕрĕн çулĕ тулиҫҫен,
Ашшĕ килне хăтана
Çиҫĕ йутран килиҫтен.

* * *

Нарспи ашшĕ Михетер
Çĕрме пуйан пурăнаť.
Вал хăй хĕрне йуратаť,
Нарспийĕпе мухтанаť:
„Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пӳрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак çуки хĕрĕмĕн?
Çӳрет-и вăл тенкĕсĕр?
Силпи йалĕ ĕмĕрне
Ун пек хĕрсем курас çук!
Пĕр ҫăваш та хăй хĕрне
Михетер пек пăхас çук!
Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-ши çуртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-ши-мĕн çӳпçемре?
Тырă-пулă туллийех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра пыл,
Тулли мар-и нӳхрепре?“
Ҫăн сăмахăн суйи çук:
Михетерĕн мĕн çитмест?
Пĕтĕм йалта пĕр пуйан,
Ăна никам çитеймест.
Унăн çурҫĕ хула пек,
Кĕрсен витĕр тухма çук.
Хуралтисен тăррине
Ҫăх-ҫĕп вĕçсе çитмс çук.
Карташ тулли йапала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.
Урхамах пек лашисем
Ута-сĕлĕ çийеççĕ:
Унăн выҫăх-ҫĕрлĕхсем
Пиҫĕке пек çӳреççĕ.
Тури касри çак кил-çурт
Айакранах курăнаť —
Пирĕн ватă Михетер
Тивĕçлипе мухтанаť.

* * *

Çак ырă çын Михетер
Хăйĕн хĕрне йуратса,
Аслă çăварни хыççăнах
Хуҫĕ ăна çураçса.
Пулас туйа йал йышсем
Тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:
Икĕ пуйан пĕрлешсен,
Шеп те пулĕ туй! теççĕ:
Çинçе хăçан çитĕ-ши?
Йепле вăхăт иртгерес?
Çимĕк кунĕ инçе-ши?
Йепле унҫҫенех тӳсес?
Михетерĕн килĕнҫе
Парне валли çĕлеççĕ.
Туйăн хăватне сиссе,
Вăйран тухса ĕçлеççĕ.
Анҫах Нарспи сарă хĕр
Туй пуласран хурланаť:
Вăрттăн вăрттăн вăл йĕрет,
Сетнер йатне асăнаť.

Йал вӗҫӗнҗе тукасра
Пӗҗӗкҫеҫҫӗ пӱрт лараҭ.
Амӑшӗпе ҫак пӱртре
Сетнер аҗа пурӑнаҭ.
Җипер аҗа Сетнерӗн
Пӗр урхамах лаши пур,
Ватӑ карҗӑк амӑш пур,
Вӗри йунлӑ җӗри пур,
Икӗ вӑйлӑ алли пур.
Тӑшман пуҫне пӗтерме
Вӗри вут пек ҫилли пур.
Унтан урӑх Сетнерӗн
Нимӗн те ҫук йапала
(Антах асту: Михетер
Хӗрне памасҭ ҫукалла).
Пирӗн Нарспи, сарӑ хӗр,
Ҫав Сетнере йуратаҭ,
Ҫавӑнпала сарӑ хӗр
Туй пуласран хурланаҭ.

*
* *

Ҫӱлӗ валак патӗнҗе
Ватӑ йӑмра йеҫерет.
Куллен ирех ҫавӑнта
Сетнер Нарспийе кӗтет,
Кӗте кӗтех шӑвараҭ
Урхамах пек лашине.
Шыва анаҭ витрепе
Нарспи куллен ирхине.
Нарспи икӗ витрипе
Шӑлтӑр-шалтӑр килет-ҫке,
Савӑннипе Сетнерин
Җӗри кӑлт-кӑлт сикет-ҫке.
Нарспин ҫӱхе тутисем
Кулаҫҫӗ-ҫке таҫтанах,
Ҫулӗ валак пуҫӗнҗе
Сетнер тӑраҭ ҫутӑлсах.
Йӑлтӑр-йалтӑр куҫӗсем
Сарӑ хӗр ҫине пӑхаҫҫӗ,
Сар мӑйӑхлӑ тутисем
Ӑпӑ сӑмах калаҫҫӗ.

## 3) Ҫимӗк каҫӗ.

Шӑнкӑртатса шыв йухаҭ
Ҫулӗ валак пуҫӗнҗе.
Кӗмӗл пекех йалтӑраҭ
Шывӗ хӗвел ҫуттинҗе.
Кӗмӗл-мерҗен тухйапа
Сарӑ хӗрӗ шыв ӑсаҭ,
Сарӑ каҗҗӑ калаҫса
Хӑй лашине шӑвараҭ.
Ҫулӗ йӑмра ӑшӗнҗе
Кайӑк йурлаҭ йуррине,
Лаши ӗҫсе тӑнӑҫем
Каҗҗӑ калаҭ сӑмахне:
„Ҫаплах вара, Нарспиҫӗм,
Ҫук-шим манӑн ӑрӑскалӑм?
Ҫаплах сана йут ҫӗре
Илсе кайӗ-шим усал?
Ах, телейӗм суктӑр ҫав,
Аҫу-аннӱ пит пуйан!
Хӑйсен пуйанлӑхӗпе
Пӑрӑнаҫҫӗ ҫук ҫынран“.
—„Ан ӱпкелешсем Сетнер,
Мӗншӗн ҫынна ӱпкелес?
Ӑҫта тарса кайас-ха
Пуйан атте-аннерен?
Атте-анне ухмах ҫав,

Мĕн каласа кăнтарас?
Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас?
Хĕвел ансан, каç пулсан,
Пайан туйа лартаççĕ,
Хушăлкари пуйанпа
Манăн туйа пуçлаççĕ.
Тăшман ытла хайар тет,
Йепле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Ăçта кайас, мĕн тăвас?
Сана тем пек йуратса,
Савса епĕ пурăнтăм,
Анҫах çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм".
—„Пĕртен пĕрех пуçăм пур,
Вĕри йунлă ҫĕрĕм пур,
Ватă карҫăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур,
Вĕсенҫен те хаклăрах
Ҫунăм савни есĕ пур,
Анҫах сана та пайан
Туртса илен тăшман пур,
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анҫах ăна пĕтерсен
Унтан усал тĕнҫе пур.
Хăвăн кăмăлу пулсан,
Лашам çине лартăттăм,
Айаккаллах ку йалтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм".
—„Сетнер таврăн хăвăртрах,
Шыва анаť пĕр арăм...
Ҫун савнипе калаçса
Уйрăлассăн туймарăм".
—„Сывă пул еппин, Нарспи,
Ан ман еппин мĕскĕне!"
Лаши сикрĕ, ыткăнҫĕ,
Вĕçсе кайрĕ килнелле.
Нарспи ăна хурланса
Пăхса йулҫĕ хыçĕнҫен,
Хускалмарĕ вырăнтан
Савни куçран кайиҫҫен:
„Сывă пулах, сывă пул!
Йепле сана манăп-ши.
Санпа пĕрле пулмасан,
Йепле йутра пулăп-ши.?"
—Мĕншĕн Нарспи хуйхăратăн?
Катҫу ытла ватă-им?
Парнў ытла сахал-им?
Терĕ арăм çитрĕ те.
Нарспи шывне ăсрĕ те,
Килне утрĕ хуйхăрса,
Килне çитрĕ, йĕрсе йаҫĕ
Сетнерĕшĕн хурланса.
Пўртре ватă карҫăкĕ
Вăрçса çўрет ахаҫех.
Сиплет тулта Михетер
Туй кўмине пĕҫҫенех.
Ĕçлет ватă пуçĕпе, .
Пурттипеле каскалаť.
Савнă хĕршĕн тăрăшса
Пиҫĕ тăрах тар йухаť:
—„Мĕн кĕçĕнрен ўстертĕм,
Çак тарана çитерме,
Ĕнтĕ пайан йулашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.

Ӳсрĕ çитрĕ, пулђĕ хĕр—
Пуйан упăшка кирлĕ,
Упăшкине тупрăмăр—
Кӳми лайăхрах кирлĕ.
Çитрĕ ĕнтĕ Çимĕк те,
Хĕрĕн туйне тумалла.
Тантăшăмсем пухăнсан,
Кĕçĕр туйне лартмалла."

*
* *

Михетерĕн килĕнђе
Сăра пиђĕки кусаť,
Йалти тантăш-тăвансен
Пырĕ тĕпĕ йарăнаť.
Икĕ пысăк кăмака
Тĕрлĕ апат пăсланаť,
Йалти тантăш-тăвансен
Тута-çăвар çуланаť.
Хура пӳртре шăпăрçă
Лараť шăпăр тӳрлетсе,
Йалти çамрăк кађђăсен
Ури кайаť çĕкленсе.
Туйăн хăватне кĕтсе
Пур те вĕçсе çӳреççĕ,
Килти пĕр ђун хуйхине
Пĕртте вĕсем сисмеççĕ.
Нарспи лараť лаççинђе
Икерђĕсем çуласа,
Çураçнине асăнса,
Лараť мĕскĕн хуйхăрса:
—Çиђĕ йутран килђĕ йут
Атте килне хăтана.
Сарă хĕре çураçаť
Çиђĕ йутри пуйана.
Атте-анне ан васкăр,
Тата пĕр çул тăрăр-ха,
Пĕртен пĕрех хĕрĕре
Тата пĕр çул усрăр-ха.
Атте-анне ӳсĕрпе
Хĕрне итлес темерĕ,
Кађђи пуйан тенипе,
Хĕрин ђунне пĕлмерĕ.—
Ватă ђун та хытнă ђун,
Хытса кайнă кĕççе çав.
Çамрăк ђун та, пĕђĕк ђун,
Ђунĕ ытла çемçе çав.
Кайăк ђунĕ пулсассăн,
Йĕрĕ-ђĕ те кулĕ-ђĕ;
Çунађĕсем пулсассăн,
Вĕçĕ-ђĕ те кайĕ-ђĕ.

*
* *

Хĕвел анђĕ хĕрелсе
Хура вăрман хыçнелле.
Кĕтӳ анђĕ кĕрлесе
Аслă Силпи йалнелле.
Ав унта хитре хĕрсем
Ĕни хыççăн ђупаççĕ,
Ђейе маттур кађђисем
Вĕсен хыççăн йулмаççĕ.
Акă пĕр етем ђупаť,
Ула ĕни мĕкĕрет,
Сĕмсĕр сысни çухăраť,
Пĕтĕм йала çĕмĕрет,
Кĕтӳ хыççăн урампа
Хура тусан хăпараť.
Акă тусан ăшĕнђе
Карђăк аран-çеç утаť.
Хăй вăл хăрах аллипе
Йатнă сăра ђĕресси:

Ай-ай хӗн пек ҫӗклесси,
Ай-хай ҫӑмӑл ӗҫесси!
Пирӗн вата Михетер
Тантӑшсене йыхӑрат:
Унӑн вата карҫӑкки
Сӑра йатнӑ, уттарат.
Тантӑш патне кӗрет те,
Уҫат сӑра ҫӗресне.
Туйа пыма йыхӑрса,
Ӗҫтерет туй сӑрине:
„Ырӑ тантӑш-тӑвансем,
Пире хисеп тумӑр-ши?
Хӗре каҫҫа паратпӑр,
Тури касса утмӑр-ши?“
—„Пырӑпӑрах пырӑпӑр,
Пымасӑрах йулмӑпӑр!
Турӑ пӳрсен, сывӑ пулсан,
Кӑмӑлӑра татмӑпӑр!“
Карҫӑк йала ӗретлет,
Тӗттӗм те пулса ҫитет;
Карҫӑк ҫӳрет килӗнҫе,
Ҫӑкӑр-тӑвар хатӗрлет.

*
* *

Ырӑ тантӑш-тӑвансем,
Тури касса уттарар!
Перекетлӗ сӑрана
Ӗҫе-ӗҫе туй лартар!
Пирӗн тӑван хӗр парат,
Пире унта йыхӑрат.
Хайӗн савнӑ хӗрӗшӗн
Урӑм-сурӑм туй пуҫлат.
Туйне-пуҫне пуҫличчен,
Авал ҫӑваш йӑлипе,
Ваттисене асӑнса
Тӑкар ҫӑкӑр-тӑварне:
Ват аттесем, аннесем,
Ырӑ курӑр ҫӑтмахра,
Пирӗн ҫӑкӑр-тӑварсем
Пулҫҫӑр сирӗн умӑрта.
Пирӗн савнӑ Нарспийе
Парӑр ырӑ пурӑнӑҫ,
Парӑр унӑн телейне
Ырӑлӑхпа савӑнӑҫ! —
Ваттисене асӑнҫӗҫ
Авалхисен йӗркипе.
Унтан туйа пуҫлама
Кӗҫӗҫ шурӑ кӗлете.
Курка тулли сӑрипе
Ашшӗ-амӑш пахилле
Ашшӗ-амӑш умӗнҫе
Хӗрӗ хурланса йӗрет:
—Нарспи, хӗрӗм, пиҫ
Упӑшкуна ан пӑрах,
Аван пурӑн унпала,
Тату пулӑр йаланах.
Итле ӑна, йӑваш пул,
Усал ҫынпа ан ҫыхлан,
Ӗҫне ӗҫле, ӗҫҫен пул,
Кирлӗ марпа ан хӑтлан!
Атте-анне ӳкӗтлет
Хӗр куҫҫулне йухтарса.
Шӑпӑр сасси ҫайлатат,
Туйа йаҫӗҫ пуҫласа.

*
* *

Силпи йалӗ харлатса
Вилнӗ ҫын пек сывӑрат.
Тӗнҫе лӑпкине курса,
Ҫӳлте уйӑх савӑнат.

Керсе пĕтнĕ вăйăран
Сарă хĕрсем, каҫҫăсем.
Туй халăхĕ ҫывăрат,
Ҫывăраҫҫĕ хуҫисем.
Ăшă сывлăш сивĕнет,
Саса-ҫĕвĕ илтĕнмест;
Пĕр йытă-ҫеҫ вĕркелет,
Ҫăвар карма ÿркенмест.
Автан ҫур-ҫĕр авăтат,
Ларнă сĕрте ҫывăрат,
Хуллен хуллен уйăх та
Вăрман хыҫне пытанат.
Ырă тутлă ăйхăпа
Ҫăваш сынни ҫывăрат.
Пĕр ҫунăн-ҫеҫ хуйхăпа
Ҫăв каҫ ҫĕри ҫурăлат.

## 4) Туй.

Хĕвел тухнă тухманах,
Тĕтĕм кайрĕ йал ҫинҫе.
Куҫне уҫнă уҫманах,
Ҫăваш ларат мунҫинҫе.
Ҫимĕк кунĕ йăлипе
Ҫынсем мунҫа кĕреҫҫе,
Ҫимĕк курăкĕпеле
Ҫан-ҫурăмне хĕртеҫҫĕ,
(Ват аттесем, аннесем
Ҫапла хушса хăварнă)
Ҫапла пайан ҫăвашсем
Мунҫа кĕрсе тасалнă.
Ҫĕнĕ кĕпе-йĕмпеле
Тухрĕҫ вĕсем урама,
Тухрĕҫ вĕсем йеррипе,
Утрĕҫ ирех туй курма.
—Акă туй та акă туй,
Пирĕн туйсем ҫапланла!
Тури касри туй сасси
Йантăратат ҫур йала.

*
* *

Михетерĕн кил-ҫурҫĕ
Айакранах курăнат.
Урам йенҫи хапхаран
Ҫын кĕрет те ҫын тухат.
Пÿрт умĕнҫе ҫын нумай,
Килнĕ вĕсем туй курма.
Ваттисем те сахал мар:
Килнĕ вĕсем сăра ĕҫме.
Йарăнтарса йавăнса
Шăпăр кĕвви ташлатат.
Ырă хуҫа хушнипе
Туй халăхĕ туй тăват.
Туй халăхĕ туй туса
Ывăнат те савăнат.
Шăпăр сасси ҫарăнсан,
Туй йурриĕ пуҫланат:
Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн щăппăн лармашкăн
Шăпҫăк ҫĕппи мар епир.—
Анҫах шăпăр хăлăхсар:
Татах ташлама ҫĕнет.
Кĕрĕс кĕрĕс ташласа
Пÿрт урайĕ силленет.
Ырă хăнасем тĕпелте
Ĕҫсе-ҫисе савăнаҫҫĕ.
Хĕрĕпеле каҫҫине
Ырă кунсем сунаҫҫĕ:

Сывă пулӡӡăр, пур пулӡӡăр,
Аӡа-пăӡала пулӡӡăр;
Ырă-тату пурăнӡӡăр,
Усал сăмах ан илтӡĕр.
Еçер-çийер, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар!
Хĕрпе каӡӡа йуратса,
Атăр шепрех туй тăвар!
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ,
Йепле ташлаҭ ваҭ хуçа!
Хĕрин туйин савăнăçĕ
Çĕклет иккен ват пуçа!
Маттур пуса-каӡӡисем
Вăйран тухса сикеççĕ.
Вĕсен хыççăн хĕрĕсем
Такмакĕпе сĕтеççĕ...
Пурçăн çӳçелĕ ӡаршав
Маӡӡаранах сулланаҭ.
Хĕрлĕ ӡаршав хысĕнӡе
Пĕркенӡĕкпе хĕр лараҭ.
Хĕр лараҭ те, хĕр-йĕрет,
Пĕркенӡĕкне çĕклемест.
Хĕр-çуммисем йурласа
Унăн сасси илтĕнмест.
Хĕр-çуммисем йурринӡе
Асăнаççĕ Нарспийе.
Михетерĕн Нарспине
Тăваççĕ мĕн ун туйне.
Шурă сухал Тăхтаман
Упăшкийĕ пулмалла.
Хайĕн ӡунĕ савнинӡен
Каймаллипех каймалла.
Есĕ йута кайсассăн
Мĕн тăвĕ-ши Сетнерӳ?
Ырă Нарспи аппаçăм,
Ăçта санăн телейӳ?

***

Туй тăваççĕ çĕмĕрсе,
Унăн вĕçĕ-хĕрри çук.
Тантăш патне çӳресе,
Йалта тантăш пĕтес çук:
Çӳлĕ сăран кӳмийĕ
Тантăш патне çӳретет.
Хĕр-çуммисен йуррийĕ
Таçта çитех илтĕнет.
Кунĕн-çĕрĕн выӡама
Шăпăрĕ те ӡарăнмаҭ,
Кунĕн-çĕрĕн ташлама
Пуса-каӡӡи ывăнмаҭ.
Пĕтĕм йалти аӡа-пăӡа
Туйĕ хыççăн хăвалаҭ.
Вилес пекех ватă çын
Пӳрт хысĕнӡе çывăраҭ:
Туй тăвăр та, шеп тăвăр,
Ватă çыннăн халĕ çук,
Выртнă çĕрте сиккелет.
Анӡах тăма вайĕ çук.

### 5) Йумăç патĕнӡе.

Пĕӡĕкçеççĕ хура пӳрт,
Шурă старик сак çинӡе.
Çутă кӳртмест нимĕн те
Тĕнĕ пек-çеç ӡӳреӡе.
Уçса хунă алăк-çеç
Пӳртĕн ăшне çутатаҭ:
Хĕвел çутти пайăрки
Урай тăрăх ав шăваҭ.

Ларат старик тĕпелте
Çăпатине сапласа,
Ват алура йĕркипе
Мĕшĕл-мĕшĕл маташса.
Акă хĕвел çуттийĕ
Шуса шуса пытӳĕ те,
Сиксе ларӳĕ старикĕн
Кăвак-çӳçлĕ пуç çине.
Çимĕк çуйĕ урамран
Çĕклентерет ӳĕрине,
Хĕвелĕ те выҫаса
Çутатат çӳç пĕрӳине.

*
* *

Мăкăртатса мăшлатса
Çăпатине сапласа
Ларнă çĕрте, симсен те,
Çын килнине пĕлмен те:
Уçă алăк умĕнӳе
Карӳăк тăра парат мĕн,
Кăвак çӳçлĕ старике
Ăшă сăмах калат мĕн.
Ăшă сăмах калакан
Сетнер амăш пулнă мĕн.
Ун ывăлне Сетнерне
Усал-тĕсел йернĕ мĕн.
Çавăнпала амăшĕ
Йумăç патне уттарӳĕ.
Ах-ахлатса хуйхăрса,
Хăй хуйхине каларĕ.
Нумай вĕсем старикпе
Ларӳĕç сăмах калаçса,
Калаçнă ӳух хушăран
Ĕлĕкхине асăнса,
Йулашкинӳен тин вара
Килĕшрĕ леш старикки.
Мăшăр ӳăлха пĕр кĕпе
Пама пулӳĕ карӳăкки.
Вара старик тăӳĕ те,
Хăйĕн ĕçне пăрахса,
Хупса хуӳĕ алăкне,
Турӳăкипе çаклатса;
Çине кĕрĕк тăхăнса,
Çĕлĕк тытрĕ хул айне;
Ури айне шăрт хурса,
Укçа хуӳĕ хăй умне;
Унтан шурă сухалне,
Кăвак çӳçне йакатса,
Укçа çине, суккăрскер,
Пăхрĕ куçне ӳакăртса.

*
* *

Пăхса тăӳĕ тăӳĕ те,
Шур сухалне йакатса,
Каларĕ вăл йеррипе
Карӳăк йенне çаврăнса:
„Çамки шăтăк—хупăнмĕ.
Ӳĕри тăтăк—сыпăнмĕ.
Пӳлĕх Турă пӳрнинӳен
Нимĕнпе те иртеймĕ.
Пана ăна Пӳлĕхçĕ
Вĕри йунпа çемçе ӳун.
Пӳрнĕ ăна Пӳлĕхçĕ
Кĕске ĕмĕр, йывăр кун.
Сивĕ кунсем килĕç те,
Шăнса кайĕ вĕри йун.
Хытă кунсем килĕç те,
Хытса кайĕ çемçе ӳун.
Вĕри кунсем килĕç те,
Вĕриленĕ шăннă йун,

Хытнă çěртен, ирěлсе
Çунса кайě çемçе ӡун."
Унтан старик ӡарăнса
Шухăшласа тăӡě те,
Кěрěкěпе çěлěкне
Сакки çине хўӡě те,
Çапла чатах каларě
Карӡăк йенне çаврăнса
(Лараҭ карӡăк сак çинӡе
Урлă-пирлě тайăлса):
„Тěрле усал-тěсел мар,
Киреметри хывни мар,
Ӡир-ӡěр йертен йěрěх мар,
Çын тухатса хуни мар,
Çук, кин, санăн ывăлна
Турă çырни çаплалла.
Ан йěр, кинěм, Пўлěхçе
Йепле хирěç пымалла?"
Старик çапла каларě,
Нимěн тума пěлмерě,
Хăйен ěçне тытрě те,
Пěр сăмах та ӡěнмерě.
Пуçне усса хурланса
Тухса кайрě карӡăкě.
Çăпатине сапласа
Ларса йулӡě старикě.
Мăкăрлатса, мăшлатса,
Антăраса лараҭ вăл:
„Мěнле вара ку пайан?"
Хăй ăшěнӡе ыйтаҭ вăл:
„Халиӡӡенех çынсене
Йумаç пахса параттăм,
Суйа сăмах суйайса
Улталаса йараттăм—
Мěнле вара ку пайан?
Ӡěре ӡăнах пěлӡě-шим?
Суйса парас теnĕ-ӡě—
Ак тамаша! тěрěс-шим?"

## 6) Тарни.

Хěвел анса пытанаҭ,
Силпи йалě лăпланаҭ.
Тěттěм пулса çитеспе
Пирěн туй та саланаҭ.
Йалти хěрсем, каӡӡăсем
Вăййа тухнă выӆама,
Тухнă пирěн Нарспи те
Хěр ěмěрне ăсатма:
Йулашки каç выӆаса
Йулас арăм пулиӡӡен,
Йулашки каç Сетнере
Курас йута кайиӡӡен.
Сетнер тăраҭ çавăнтах
Пуçне усса хуйхăрса.
Сарă хěрěн куçěнӡен
Анаҭ куççуле йухса.
Вайă çынни салансан,
Пайтах вěсем калаçрěç.
Ыталаса пěр пěрне
Тěттěм çěрте çухалӡěç.

*
* *

Вěт çăлтăрсем тахçанах
Пěлěт айне хупланӡěç.
Вăрман тěлне хуп-хурах
Сěм пěлěтсем капланӡěç.
Çумăр çăваҭ, шыв йухаҭ,
Хура вăрман кěр кěрлет.

Çил тухаť те çил кайаť,
Выçă кашкăр пек ўлет.
Çиçĕм пĕрмай çуттипе
Вăрман ăшне çутатаť.
Тĕттĕм вăрман ăшĕпе
Пĕр йуланут кустараť.
Лаша пыраť тăлхăрса
Вăрман ăшне йантратса.
Иккĕн ларнă утланса,
Лаша ситет ывăнса.
Йывăç лараť улăп пек
Тĕттĕм çĕрте кашласа,
Ђипер кайăр! тийет те,
Пуçне тайаť çул парса.

* * *

Çурăм-пуçĕ çап-çутах,
Хĕвел тухас пек тăраť.
Çурăм-пуçĕ шурсанах,
Туй халăхĕ пухăнаť.
Хăй йĕркипе ташлама
Вăхăт пуса-каťђисен.
Хăй йĕркипе йурлама
Вăхăт ситнĕ хĕр-çумсен.
Шăпăр сасси илтĕнмест,
Шăпăрçи те курăнмасť.
Ырă хăна хушшинђе
Ерех-сăра тăкăнмасť.
Старикки пе карђăкки
Хура пўртре вăрçаççĕ.
Мĕн пулнă-ши çав тĕрлех—
Пурте шăппăн лараççĕ?
Шăппăн шăппăн лармасăр:
Вĕсен хĕрĕ çук пайан,
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнă вăйăран.

* * *

Виç йуланут вăрманта
Йĕр йĕрлесе çўреççĕ.
Пĕри кунта, леш унта,
Темĕнле йĕр йĕрлеççĕ.
Йĕр йĕрлеççĕ, итлеççĕ:
Пĕрер сасă пулмĕ-ши,
Хĕвел пăхаť çутатса—
Кирлĕ çула уçмĕ-ши.
Анђах нимĕн паллă мар,
Кĕрес тата шаларах.
Вăрçас килет çиллипе:
Тупас-ђĕçке хăвартрах!
Вăрман çăра, пит тискер,
Унăн ăшĕ ђăв та ђав!
Йĕр ниçта та паллă мар,
Ниçта кайма аптăрав!
Виç йуланут вăрманта
Йĕр йĕрлесе çўреççĕ.
Пĕри кунта, леш унта,
Темĕнле йĕр йĕрлеççĕ.

* * *

Сетнер тутлă çывăраť
Çўлĕ йуман кутĕнђе,
Нарспи лараť тĕлĕрсе
Сетнер пуçĕ вĕçĕнђе.
Нарспи тĕлĕк тĕлленет:
Ашшĕ йытă пулнă та,
Шăлĕсемпе шаккаса
Сиксе çўрет вăрманта:
Ăçта тартăн усал хĕр?
Пуçна çийĕп тупăнсан!
Йытă ури айĕнђе

Шатăртатаť сĕм-вăрман.
Çывăх, çывăх, ак çитет!
Нарспи йалтах вăранаť.
Пăхаť: хăйĕн патнелле
Виç йуланут кустараť.
—Сетнер, Сетнер! тытрĕç-
çке!
Тăр, тăр! тарса хăтăлар!
Ай пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр—
Ăçта тарса пытанар!

*
* *

Маттур шăпăрçă пайан
Икĕ пуса-каҫҫипе
Тытса килҫĕ вăрмантан
Сетнерпеле Нарспийе.
Карҫăк вĕçсе тухрĕ те,
Çÿçрен йаврĕ Нарспине.
Старик ҫупса тухрĕ те.
Ҫышкă паҫĕ Сетнерне.
—Ей аннеçĕм, аннеçĕм,
Мана çÿçрен ан сĕтĕр,
Мана апла вĕрентсе,
Манран ырă ан кĕтĕр.
—Ей Михетер асатте,
Хĕненипе усси çук.
Есĕ мана хĕнесе
Кĕлрен вутă тăвас çук!
Урнă йытă Михетер
Хăй саламат йатрĕ те,
Тытăнҫĕ-çке тулама
Çыхса хунă Сетнере.
Карташĕнҫе çын нумай—
Туйне курма килнĕ пек.
Хура тăпра çийĕнҫе
Выртаť Сетнер вилнĕ пек.
Амăшĕ те çавăнтах
Тăраť йĕрсе, ылханса.
Йараť ăнсăр ывăлне
Икĕ çынна йăттарса.
Хура пÿртре Нарспине
Питне-куçне çăваççĕ,
Татах пĕркенҫĕк айне
Ҫаршав хыçне лартаççĕ.
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк,
Аťăр шепрех туй тăвар!
Анҫах халҫхи ĕç çинҫен
Çĕн кĕрĕве калас мар!
Акă туй та çакă туй,
Пысăк туй та пăсăк туй!

## 7) Икĕ туй.

Çуркуннехи вут хĕвел
Каç йенелле сулăнаť.
Йал вĕçĕнҫи сĕм вăрман
Темĕншĕн пит йанăраť.
Халăх кĕтет тахçанах
Анат хапха патĕнҫе.
Туй килнине çавăнтах
Систерҫĕçĕ йевĕҫе.
Кĕпĕр-кĕпĕр сиктерсе
Килсе тухрĕ вăрмантан
Ыттисенҫен маларах
Çĕнĕ кĕрÿ Тăхтаман.
Лаптак самса, хĕсĕк куç,
Сарă çÿçпе сар сухал.
Лаши вĕçсе пырупа
Пиҫĕ-куçĕ пит усал.

Хура ҫӑхман, сарӑ ҫӗлӗк,
Ҫамки ҫинҫе тенкӗпе.
Шурӑ ҫӑлха-ҫӑпата
Пит килӗшет кӗрӗве.

*
* *

Арҫын туйӗ йурласа
Урам тӑрӑх уттарат.
Ырӑ йевӗҫӗн хапхисем
Уҫӑлат те хупӑнат.
Хӗр туйӗ те тукасран
Хирӗҫ анат ҫӗмӗрсе.
Нарспи тутӑр айӗнҫе
Тӑрса пырат хӗр-йӗрсе.
Сарӑ хӗрӗн ҫӗринҫе
Вутра ҫуннӑ пек ҫунат.
Ватӑ каҫҫине курса,
Нарспи хытӑ хурланат:
„Ей аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Мӗншӗн ҫирӗр хӗр пуҫне,
Мӗншӗн патӑр хӗрӗре
Ҫиҫӗ йутӑн аллине.
Ей каҫҫӑмҫӑм, Тӑхтаман,
Манпа ырӑ курас ҫук.
Епе, ҫунӑм пӗтсен те,
Санпа пӗрле пулас ҫук“.
Ырӑ йевӗҫӗ сӑрапа
Туйа хирӗҫ вӑл тухат.
Хушӑлкасен мӑн-кӗрӳ,
Хӑй такмакне вӑл калат,
Хӑй аллинҫи сӑрана
Тӑка тӑка ҫаптарат.
Хура лаша тӗк тӑмаст—
Ҫӗнӗ кӗрӳ ҫунтарат.
Ҫӗнӗ кӗрӳ ҫумӗнҫе
Ҫиҫӗ йуланут ташлат,
Пӗтӗм йала ҫӗмӗрсе
Ҫӑвар карса антӑхат.
Ҫӗнӗ хапха айӗнҫен
Кӗрсе пӗтмест урапа,
Хапха тӑрри шатлатат
Саламатпа ҫапупа...
Ырӑ йевӗҫӗ килӗнҫе
Туйне турӗҫ ытлашши.
Тепӗр кунне урамра
Турӗҫ йалта вӑй-килли.

*
* *

Турӗҫ туйа виҫӗ кун
Хушӑлкари хӑтасем.
Анҫах кайма тепӗр кун
Вӑхӑт теҫҫӗ хӑнасем.
Арҫын туйӗ пухӑнат,
Хушӑлкана кайас тет:
Кунта туйа турӑмӑр,
Ӗнтӗ киле тарас, тет.
—Ан васкӑр-ха, хӑтасем,
Тепӗр киле кайар-ха,
Халех киле кайиҫҫен,
Туйа шеперх тӑвар-ха!
Татах тепӗр тапхӑрне
Туйне турӗҫ ҫунтарса.
Йулашкинҫен хӑтасен
Халӗ пӗтрӗ туй туса.
Арҫын туйӗ пухӑнса
Килне кайма хускалҫӗ.
Кайан туйа ӑсатма
Пӗтӗм Силпи пухӑнҫӗ.

*
* *

Аслӑ масар тӗлӗнҫе

Туй лашисем тăраççĕ.
Хĕрин туйне ăсатма
Амшĕ-амăш пыраççĕ.
Туйĕ тавра йал-йышсем
Кĕпĕртетсе тăраççĕ.
Ваттисене асăнсан,
Хĕр кайнине сăнаççĕ.
Ҫирлĕ Сетнер çавăнтах
Тăраť хăйĕн амăшпе.
Ҫун савнине Нарспине
Шыраť çирлĕ куçĕпе.
Михетерпе карҫăкки
Пахиллерĕç хăй хĕрне,
Мĕн пур тантăша йĕртсе
Тăкрĕç ăшă куççулне,
Савнă хĕрне сăмах та
Каламарĕç намăсшăн:
Сетнерпеле вăрмана
Намăс туса тарнăшăн.
Пахиллесен, мĕн тусан,
Кайрĕ туйĕ хускалса.
Сетнер çине пăхрĕ те,
Нарспи кайрĕ макăрса.
Туй кайсассăн тахçанҫҫен
Йантăрарĕ сĕм-вăрман.
Йал-йыш утрĕ килнелле
Туйĕ куçран çухалсан.
Амăшĕпе Сетнер те
Килне утрĕ хуйхăрса.
Ҫун савнинҫен ĕмĕрех
Йаҫĕç ăна уйăрса:
„Ех, пурăнăç, пурăнăç!
Вилме анҫах йулҫĕ çав.
Ех, пурăнăç, Нарспи те
Çиҫĕ йута кайрĕ çав,
Унсăр пуçне мĕн тăвас
Ăрăскалсăр пуçăмпа?
Ăçта кайса кĕрес-ха
Хамăн усал хуйхăмпа?“
Нарспи кайрĕ йут йала.
Сетнер утрĕ хăй килне.
Икĕ ҫун та савнă ҫун
Çĕнеймерĕç тăшманне.
Икĕ савни тарнине
Хуплаймарĕ сĕм-вăрман,
Сарă хĕре Нарспийе
Илҫĕ илҫех Тăхтаман.
Тăрса йулҫĕ кăлăхах
Сетнер çавтер ҫун савни —
Турă çырни ахăрах,
Çаплатăр çав самани.
Йалта нумай ун çинҫен
Урлă-пирлĕ калаçрĕç,
Темтер ăслă çынсем те
Кутне-пуçне тупмарĕç.
Нарспи кайрĕ йут çĕре,
Сетнер йулҫĕ кăлăхах —
Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех,
Тăван çирĕ тăванах.

## 8) Хушăлкара.

Хушăлкара туй иккен,
Туйĕ ытла шеп иккен.
Шур сухаллă Тăхтаман
Туйне тăваť тет иккен.
Ҫипер каҫҫă Тăхтаман
Силпи хĕрне çаклатнă.

Çавтер аван мăшăра
Урăм-сурăм туй лартнă.
Туй тăваççĕ ташласа
Çамрăк пуса-каҫҫисем.
Туй йуррисем йурласа
Ывăнаççĕ çăварсем.
Ĕнер Силпи йалĕнҫен
Туйĕ килҫĕ таврăнса.
Пайан кĕрӳ хĕр-туйне
Кĕтет хĕрӳ туй туса.
Пайан хĕр-туйĕ килсен,
Каçпа хĕве хупмалла.
Ыран ирех тăмалла,
Хĕртен арăм тумалла.

*
* *

Аслă йал та Хушăлка
Икĕ тăвăн хушшинҫе;
Туйне туса Тăхтаман
Ларăт сĕтел хушшинҫе.
Тĕрлĕ апат айĕнҫе
Çăка сĕтел авăнат;
Ӳсĕр кĕрӳ пуçĕнҫе
Тĕнҫе вăр-вăр çаврăнат.
Тулта хĕвел çутатат,
Кăнтăрлана сулăнат;
Кĕрӳ пӳçĕ ӳсĕрпе
Айалалла усăнат.
Çеçен хирте пӳтене
Вăхăт вăхăт вăл йурлат;
Туй килмест-и-ха тесе,
Текех кĕрӳ йĕтетет.
Кĕрӳ çинҫи шурă кĕпен
Арки вăр-вăр тăват-çке;
Туйа кĕтсе вата пуçăн
Ҫунĕ вăр-вăр тăват-çке.

*
* *

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав
Шăнкăртатат çулпала:
Хĕр-туй килет çĕмĕрсе
Урам тăрăх йалпала.
Вунă арăм хушпупа
Сăран кӳме çийĕнҫе,
Хĕрĕх виçĕ урапа
Сăран кӳме хыçĕнҫе.
Çиҫĕ çĕрте урамра
Ҫарăнҫĕç туй çыннисем:
Хирĕç тухрĕç сăрапа
Хушăлкари тантăшсем.
Йӳрлаççĕ те кĕреççĕ
Ырă кĕрӳ хапхинҫен,
Ĕçеççĕ те çийеççĕ
Инçе çулсем хыçĕнҫен.
Кăнтăрла та çитмен-ха,
Каçҫен вăхăт нумай-ха.
Каç пулиҫҫен туй тума
Пире вăхăт нумай-ха.

*
* *

Шыв-шур пуçĕ пуçласан,
Тĕттĕмҫҫенех сикрĕç те,
Тăхтаманпа Нарспийе
Хĕве хупрĕç кĕлете.
Аслă çынсем уçăпах
Питĕрҫĕç туй кĕлетне.
Йăл-йăл кула кула-çеç
Кĕрсе кайрĕç пӳртнелле.
Акă каҫҫă пĕр каҫҫă
Кĕлет тавра йавăнат.
Те итлеме, те пăхма

Пушă выран вăл шырать.
Тăват-пилĕк аҫа-пăҫа
Иавăнаççĕ çавăнтах:
Ай намăссăр аҫа-пăҫа!
Мĕн кирлийех пур унта!?
Анҫах акă итлеççĕ,
Илтĕнет те пулмалла;
Ав усалсем лăпланҫĕç:
Хĕр калаçать, ан шавла!
Шалта Нарспи темĕскер
Тăхтамана каларĕ,
Анҫах хуллен сăмахне
Пĕртте илтсе пулмарĕ.
— «Асту, Нарспи, йĕвену
Ман алăра малашне» —
Терĕ хытах Тăхтаман,
Ҫараймасăр çиллине —
„Туйна анҫах ăсатам,
Унта мана пĕлĕн-çке;
Мĕн пуласне пĕлме çук —
Ху курасне курăн-çке“.
Урăх нимĕн илтĕнмест,
Пĕр сăмах та ҫĕнмерĕç.
Итлекенсем кĕтсен те,
Пĕр сăмах та илтмерĕç.
Аҫи-пăҫи çавăнтах
Ашшĕ килне ҫупаççĕ.
Илтни çинҫен çав хутрах
Йалта сăмах сараççĕ.
Итлен-тăран сар каҫҫă
Вăрманалла уттарҫĕ.
Хăлха илтнĕ сăмаха
Хăй ăшĕнҫе пытарҫĕ.
Ун çилĕлĕ куçĕнҫен
Йăлтăр-йалтăр вут кайрĕ.
Кĕрен-тухан йалти çын
Каҫҫă çине пăхмарĕ.
Йуман анҫах вăрманта
Хăй кўршине систерҫĕ:
Çав вăрмана кĕнĕ çын
Пирĕн тăван Сетнер-ҫĕ.

* * *

Пўртре сĕтел çийĕнҫе
Пăтă пăсне кăларать:
Çĕнĕ кĕрў Тăхтаман
Хăнасене ăсатать.
Ырă кĕрў Тăхтаман
Туй пăттипе сăйласа,
Туй халăхне пуç тайать
Çапла сăмах каласа:
„Ан ўпкелĕр, хăтасем,
Сăйăм питех нумай мар.
Ĕçĕр-çийĕр, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар“.
Виле ўсĕр хăтасем
Урăм-сурăм кĕрлеççĕ.
Виле ўсĕр пулсан та,
Мĕн каласне пĕлеççĕ:
„Ей кĕрўçĕм Тăхтаман,
Сана ўпкев çук пиртен.
Пирĕн хĕре хытă пăх,
Тату пулăр вилиҫҫен“.
Карташĕнҫе лашасем
Тăраççĕ-çке ташласа.
Тухса кайрĕç хăтасем
Ырă йурă йурласа:
„Атăр кайар çулпала
Курка тулли пылпала...“

Ураписем хыҫӗнҫен
Тусан кайрӗ ҫулпала.
Ав шӑнкӑрав йанӑрать,
Силпийеле ҫуптарать.
Лаши ҫупать пуҫ ухса,
Ӳсӗр хуҫи хӑвалать.
Туй пӗтрӗ те, туй кайать,
Такӑр ҫулпа ҫуптарать,
Пӗрер ватти тӗл пулсан:
Тавси, тавси! кӑшкӑрать.
Кайан туйӑн сассине
Нарспи йулҫӗ итлесе.
Таҫта таҫта инҫетре
Тусан кайрӗ ҫӗкленсе.

## 9) Ҫимӗк иртсен.

Иртрӗ Ҫимӗк, иртрӗ туй,
Иртрӗ туйри савӑнӑҫ.
Кайрӗ пӗр пек тӑсӑлса
Кунран кунах пурӑнӑҫ.
Хирте ака айӗнҫе
Ҫерем лап-лап касӑлать;
Усал хуйхӑ-суйхӑран
Нарспи ҫунӗ касӑлать.
Хирте ҫава айӗнҫе
Курӑк вӑш-ваш йаванать;
Усал хуйхӑ-суйхӑран
Нарспи пуҫӗ усӑнать.
Куллен хунах тӗнҫене
Хӗвел хӗртнӗҫем хӗртет;
Хуйхӑ-суйхӑ кунран кун
Нарспи ҫӗрине ҫийет.
Куллен кунах саламат
Анать-ӗҫке пӑтаран;
Хытӑ тытать пулмалла
Хӑй арӑмне Тӑхтаман.

***

Ҫипер аҫа Сентти пур,
Ҫупса ҫӳрет урамра.
Кӗвентине утланса
Аҫа выҫать лашалла.
Аслӑ урӑм тӑрӑшшӗпе
Ҫиксӗр тусан кӑларать.
Хура ҫикан пек хура
Каҫпа килне таврӑнать.
Ҫипер аҫа Сентти пур,
Ҫупса килет лашипе.
Хӑйӗн пӗҫӗк ҫӗлхипе
Пакӑлтатать инкӗшпе.
Ҫӗнӗ ҫын та Нарспи кин
Пӗрмайах вӑл хуйхӑрать,
Пӑйахӑшин аҫине
Сенттийе-ҫеҫ йуратать.
Ҫӗнӗ ҫын та Нарспи кин
Пӗрмайах вӑл хуйхӑрать,
Сенттипе-ҫеҫ калаҫса,
Хӑй хуйхине пусарать.
Ҫавтер ырӑ аҫана
Турӑ ҫунне панӑ ҫав,
Кулса сиксе выҫама
Кайӑк ҫунӗ йанӑ ҫав.
Ҫиҫӗ ҫулхи аҫара
Ҫӑваш ҫунӗ ларать ҫав.
Пӗҫӗк куҫӗ йӗрсен те,
Йаваш тути кулать ҫав.
Ҫипер аҫа Сентти пур,
Инкӗш патне ӑнкӑлать;

Хайӗн пӗҫӗк ҫӗлхипе
Инкӗшне вӑл йӑпатать:
„Ан йӗр инкем, ан йӗрсем,
Тутӑрупа шӑл кусна.
Ан хуйхӑрсам, инкеҫӗм,
Хӑваласам хуйхӑна“.

* * *

Ырӑ кӗрӳ Тӑхтаман
Туй кӗлетне астӑвать.
Куллен кунах арӑмне
Саламатпа кастарать.
Мӗскӗн арӑмӗ тӳсет
Асапсене ҫӗнмесӗр.
Ухмах упӑшка хӗнет
Мӗн пуласне пӗлмесӗр.
Пӗрре пӗр ҫын килҫӗ те,
Тӑхтаманпа калаҫрӗҫ,
Нарспи пӳртре ҫук ҫухне
Пӑшӑл-пӑшӑл калаҫрӗҫ.
Нарспи кӗҫӗ сӑрапа,
Леш хӑнана ӗҫтерет.
Хӑна тухса кайсанах,
Саламаҫӗ вӗрентет:
Есӗ апла хӗр иккен,
Есӗ апла Сетнерпе
Тарнӑ мӗн-ха вӑрмана
Туйна туна ҫӗртенех!
Хӗнет, хӗнет Тӑхтаман,
Тӗрлӗ асап кӑтартать.
Йалти ҫынсен хушшинҫе
Текех сӑмах сарӑлать.
Ҫапли-капли ҫавӑ ҫав:
Ун пек нумай тӗнҫере,
Ҫилай усал ӗҫ пулать
Вӑрттӑн ҫӗрте тӗттӗмре.
Атте-анне хӑй хӗрне
Йуратса-ҫеҫ ӳстерет.
Хӗртен арӑм пулсассӑн,
Ват упӑшка кӳлешет.
Тупрӗ пуйан упӑшка
Атте-анне хӑй хӗрне,
Анҫах унта мӗн усси—
Йуратмасан пӗр-пӗрне?
Тату, ырӑ, килӗшсе
Иккӗш пӗрле пурӑнсан,
Ҫӗр хут ытла телейлӗ
Йурлӑ ҫын та пуйанран....
Хӗне, хӗне, Тӑхтаман,
Ҫунне кӑлар унӑнне!
Асаплантар, Тӑхтаман,
Хурсам йытӑ вырӑнне!
Хӗне, хӗне, Тӑхтаман,
Санран ҫамрӑк ан култӑр!
Асаплантар, Тӑхтаман,
Нарспи ҫасрах ватӑлтӑр!
Анҫах кайран хӑвӑнах
Ӳкӗнмелле ан пултӑр,
Хӗне, хӗне, Тӑхтаман,
Санран ҫамрӑк ан култӑр!
Иртсе кайрӗ виҫ ерне
Ҫимӗк ерни хыҫӗнҫен,
Ват упӑшка хӗснине
Нарспи тӳсрӗ ҫавӑнҫҫен.
Анҫах тепӗр ернинҫе,
Пӗрре уйар ырӑ каҫ....
(Ҫим-ха, кӑна калама
Вӑхӑтсӑрах йурамасть).

## 10) Нарспи ĕçĕ.

Хĕвел тухаҭ, улăхаҭ
Çӳлĕ тусем тăррине.
Хăй çуттипе ăшăтаҭ
Таçти таçти çĕрсене.
Çак çулахи ырă кун
Хушăлкана та саваҭ.
Пур тĕнҫери ҫĕрĕ ҫун
Ташлаҭ, сикет, савăнаҭ.
Йаҭĕç йурă йурласа
Сĕм-вăрманти кайăксем.
Акăшсем пек йаранса
Анҭĕç шыва сар хĕрсем.
Анҭах акă шурă пӳрт,
Пĕр сасă та илтĕнмест.
Шурă пӳртре çĕнĕ çын
Лараҭ, пуçне çĕклемест.
Ирех хырăм тăрантса
Кайрĕ хире Тăхтаман.
Пуçне ҫиксе хуйхăрса
Лараҭ арăмĕ пайан:
„Арăм пултăм ирĕксĕр
Атте-анне хушнипе.
Анҭах хĕрĕр мĕскĕнĕр
Ырă курмасҭ каҫҫипе.
Хĕрхенмесĕр хĕрĕре
Çиҫĕ йутăн аллине,
Çиҫĕ йута, йут çĕре
Парса йатăр мĕскĕне.
Халĕ хĕрĕр мĕскĕнĕр
Асап курса пурăнаҭ.
Ăна ватă упăшки
Йытă вырăнне хураҭ.

Мĕншĕн мана савнинҫен
Çаплах йатăр уйăрса?
Мĕншĕн кунта килиҫҫен,
Çимерĕм-ши хам пуçа?
Мĕншĕн хайар тăшманпа
Ман пĕр çуртра пурăнас?
Пĕтес мар-ши пуçăмпа?
Йепле тӳссе пурăнас!?
—Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Пулмарĕ-çке ырлăха.
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Савăнăç çук ку тĕнҫен.
Атте-анне ăссăртан
Савни йулҫĕ пĕр-пĕҫҫен,
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Йатăм çĕрҫĕ тахçанах.
Атте-анне ăссăртан
Пулҫĕ асапăм анҫах.
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Манăн пурăнăç хĕн-хур.
Атте-анне ăссăртан
Капла пурăнса мĕн пур?
Каҫҫа паҫĕç ирĕксĕр—
Пулмарĕ-çке ырлăха,
Атте-анне ăссăрри
Ырлăха мар, хурлăха.
—Анҫах манăн савни пур—
Çăлаймĕ-шим вăл мана?
Унăн вăйлă аллисем
Пĕтермĕç-шим тăшмана?
Çук, пуçăма çийиҫҫен
Тăшманăма пĕтерем,

Асапланса тӳситҫен
Тăхтамана... вĕлерем.
Анҫах вăйăм ҫитĕ-ши?!
Йепле кунтан ҫăлăнас?
Ей Пӳлĕхҫĕм, пулăшсам!
Ҫунăм ҫунат, мĕн тăвас?..
Пĕтсен пĕтем, пĕт тăшман—
Пурăнăҫăм ырах мар.
Наркăмăшăм, ес пайан
Хăвăн ĕҫне туса пар!"
Ҫапла пайан пӳртĕнҫе
Нарспи мĕскĕн хурланат,
Ҫунĕ вĕркет, пуҫĕнҫе
Усал шухăш хускалат.

*
* *

Вут пек хĕвел выҫаса
Ҫӳл тӳпене хăпарат.
Хуллен хуллен йарăнса
Кăнтăрлана сулăнат.
Тулта тĕнҫе хĕпĕртет,
Тулта тĕнҫе йалтăрат.
Нарспи пӳртĕнҫе йĕрет,
Унăн ҫĕри ҫурăлат.
Сентти килет сиктерсе,
Кĕвентине утланса.
Инкĕш патне ҫĕмĕрсе,
Кĕрсе кайрĕ ахăрса.
Ҫапат паттăр лашине
Хăй аллинҫи хуллипе.
Ăнсăртранах инкĕшне
Тапса илет урипе.
Анҫах вăл та выҫама
Аптăрарĕ инкĕшне,
Аптăраса урама
Тухса кайрĕ лашипе.

*
* *

Вĕрет, сурат сарă кин
Хăй йашкине пăтратса,
Хуран айĕ ҫĕлен пек
Ҫунат вуҫĕ йавăнса:
„Ҫитмĕл тинĕс леш йенҫен
Килет карҫăк Шапатан.
Вĕр, сур, карҫăк, йашкана—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Утмăл тинĕс уттинҫе
Ларат, сикет йĕс пукан,
Сикех сикех, йĕс пукан,—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Вăтăр та пĕр ту ҫинҫе
Йĕс хуранра пиҫ йашка.
Ҫав йашкара пиҫ ҫĕлен,
Пиҫ тамăкра упăшка!"
Вĕрет, сурат сарă кин
Хăй йашкине пăтратса,
Вилĕм йашки вĕрет-ҫке
Ҫĕлен пекех ҫашласа.

*
* *

Каҫ пулсассăн упăшки
Килҫĕ хиртен ҫаврăнса.
Сĕтел сиййĕнҫе йашки
Ларат пăсне кăларса.
Кашăк илҫĕ Тăхтаман,
Ларҫĕ сĕтел хушшине.
—„Йашка тутлă-ҫке пайан"
Тесе мухтат йашкине.
Усал куҫпа ҫавăрса,
Кăтартат вăл ҫăмăрне:

„Йашка тутлӑ, ҫи ларса!“
Кӑшкӑрат̆ вӑл арӑмне.
—„Ҫийӗп-ҫке-ха кайран та,
Пит ҫийессӗмех килмест“.
Ах, Нарспийӗ ҫавӑнта
Тухса кайат̆, тӳсеймест.
Тулта ларат̆ куҫҫулне
Тӑпра ҫине йухтарса.
Пӳртри ҫийет йашкине
Урлӑ-пирлӗ тайӑлса.

* * *

Ҫийех, ҫийех, Тӑхтаман,
Наркӑмӑшлӑ йашкана.
Ӗнтӗ есӗ малашне
Упӑшка мар арӑмна.
Пӗтрӗн ӗнтӗ, Тӑхтаман,
Ҫутӑ тӗнҫе санӑн мар!..
—„Нарспи, ҫасрах кӗр пӳрте!
Ӑйхӑ килет, вырӑн сар!
Ака турӑм, ӗтлентӗм,
Ӑшӑм ҫунат̆ ҫавтерех.
Йашка хыҫҫӑн шыв ӗҫрӗм,
Туйӑнҫӗ ерех пекех“.
Нарспи кӗҫӗ итлесе,
Ҫӗрте ларат̆ упӑшки:
Пӗтӗм ӑшне-ҫиккине
Ҫурат̆ хӑватлӑ йашки.
Арӑм сарҫӗ вырӑнне,
Упӑшкине вырттарҫӗ.
Ҫӗкле ҫӗкле ҫапрӗ те,
Ҫунӗ ӳтне хӑварҫӗ.
Пӗтрӗ пӗр ҫун тӗнҫере,
Ӗҫӗсемшӗн хупланҫӗ.
Пӗтрӗ ҫӑваш ӗмӗре,
Унӑн ҫӗри лӑпланҫӗ.
Пӳртри сӗтел-пукансем
Хӑратаҫҫӗ арӑмне,
Пайтах пӑхрӗҫ шеллесе
Хуҫин сивӗ виллине;
Анҫах ҫӗрле пулҫӗ те,
Сӗм хупларӗ пӳрт ӑшне,
Хӑйӗн вӑрӑм аллипе
Хӑратат̆ вӑл Нарспийе.
Пӗтрӗ ҫӑваш ӗмӗре,
Вырӑн ҫинҫен тӑрас ҫук,
Выҫӑ выҫӑх-ҫӗрлӗхне
Тӑрса апат парас ҫук,
Выҫӑ ака лашисем
Кӗҫенеҫҫӗ картара,
Анҫах есир, тӑлӑхсем,
Курассӑр ҫук хуҫӑра!

* * *

Йал вӗҫӗнҫе сӗм вӑрман
Ҫӑшӑлтатат̆ ҫулҫипе.
Хушка ҫӑлтӑр вылатат̆
Ҫӳл тӳпере ҫуттипе.
Хушӑлкари ҫӑвашсем
Ҫывӑраҫҫӗ харлатса.
Анкартинҫи тӑмана
Анҫах вӗҫет ухлатса.
Уйӑх кукри йарӑнса
Тухрӗ вӑрман хыҫӗнҫен.
Шӑппӑн-шӑппӑн-ҫеҫ утса
Тухрӗ Нарспи пӳртӗнҫен.
Кайрӗ мӗлке пек шуса
Анкартисем хыҫнелле.
Йалтан тухрӗ, ыткӑнса
Ҫупрӗ вӑрман ӑшнелле.

Курас тесе ӑнтӑлса
Уйӑх ђупрӗ тахҫанђђен,
Вӑрман анђах шавласа
Йулђӗ Нарспи хыҫӗнђен.
—Нарспи пыраҭ вӑрманпа
Темшӗн ытла ыткӑнса.
Шӑппӑн тӑраҭ сӗм-вӑрман,
Нарспи ђунне хӑратса.
Армак-ђармак йывӑҫсем
Пуҫӗсемпе сулласҫӗ,
Нарспи иртсе пынӑ ђух,
Ҫулне пӳлсе тӑраҫҫӗ.
Ват йывӑҫсем хушшинђе
Арҫурисем выласҫӗ,
Нарспи иртсе пынӑ ђух,
Аллисене тӑсаҫҫӗ.
Сасартӑках ҫил тухса
Асрӗ кайрӗ сӗм-вӑрман,
Йӗри таврa ахӑраҭ:
„Тыт арӑмна Тӑхтаман!
Тыт арӑмна упӑшка,
Тараҭ усал арӑму!“
Вӑтӑр та пӗр шуйттан пек,
Вӑрман улаҭ: у-у-у!

*
* *

Ирех тӑрса тумланса,
Сентти тухрӗ выђама.
Кӗвентине утланса,
Ђупрӗ инкӗшне курма.
Анђах инкӗш курӑнмасҭ,
Пиђђӗш хаљ те ҫывӑраҭ,
Тӑратса та вӑранмасҭ:
Сентти шӑпах аптӑраҭ.
Пӗр ҫын килсе кӗђӗ те,
Хытса кайрӗ вырӑнтах;
Пӑхса тӑђӗ тӑђӗ те,
Тухса кайрӗ ҫавӑнтах.
Пӑртак тӑрсан, вӑл кайсан,
Тулђӗ пӳрте тулли ҫын:
Иепле вилнӗ Тӑхтаман?
Ӑҫта кайнӑ Нарспи кин?
Ҫук, мӗн ђухлӗ ыйтсан та,
Сире виле калас ҫук.
Нарспи ҫӳрет вӑрманта.
Есир ӑна тупас ҫук.

## 11) Силпире

Аслӑ Силпи йалӗнђе
Хуллен шӑваҭ пурӑнӑҫ.
Иртсе кайрӗҫ Ҫимӗкри
Ырӑлӑхпа савӑнӑҫ.
Ђӑваш кӗпи улађа,
Хир варринђе кӑн-кӑвак.
Ӗҫђен ђӑваш вӑкӑр пек.
Йурла йурла ӗҫ тӑваҭ.
Тӑраҭ ҫурӑм-пуҫӗпе,
Ирех хире вӑл тухаҭ.
Кӑшт-кашт апат тӑваҭ те,
Ҫутӑ ҫава вӑл йӑтаҭ.
Уђук хыҫҫӑн ђӑвашсем
Айкашрӗҫӗ хирсенђе:
Валем, купа, капансем
Ларђӗҫ улӑх варринђе,
Ҫивђӗ ҫава вашлатрӗ
Ҫулман ҫаран ҫийӗнђе.
Пуҫлӑ ыраш саралтӗ

Ҫеҫен хирсен хушшинҫе.
Сӑмах нумай йал ҫинҫе
Ҫемҫе ҫӗлхе вӗҫӗнҫе.
Тӗрӗсси те пуртӑр ҫав
Йалти сӑмах хушшинҫе.
Силпире те етемсем:
Нарспи, Тӑхтаман, теҫҫӗ.
Вӗсем тахҫан Тӑхтаман
Хайаррине пӗлеҫҫӗ.
Михетертен шикленсе,
Вӑрттӑн ҫӗрте сӑмахсем;
Пуҫне ҫиксе шеллесе,
Аптӑраҫҫӗ ҫӑвашсем.
Сетнер аҫа сынсенҫен
Ҫав сӑмаха илтсенех,
Амӑшӗнҫен уйӑрлса
Кайрӗ таҫта пӗҫҫенех.
Ҫынсем хирте ӗҫлесе
Каҫпа килне килеҫҫӗ,
Каҫхи апат тунӑ ҫух:
Нарспи, Сетнер, тийеҫҫӗ.

*
* *

Сетнер утрӗ пӗр-пӗҫҫен,
Кӗрсе кайрӗ вӑрмана.
Нарспи асапне илтсе,
Вилӗм сунаҫ тӑшмана:
„Тӗттӗм пулӗ, каҫ пулӗ
Тӑшман патне ҫитиҫҫен.
Тӑшман ҫӗри лӑпланӗ
Хӗвел кусса тухиҫҫен.
Хӗвел тухӗ, ҫутатӗ,
Етем тӑрӗ ӑйхӑран.
Тӑшман анҫах вӑранмӗ
Ӑйхи ытла йывӑртан.
Хӗвел тухӗ, ҫутатӗ,
Епӗ пулӑп вӑрманта.
Тӑшман, выртӑн хускалмӑн,
Нарспи пулмӗ ҫуртӑнта“.
Анҫах Нарспи унсӑрах
Кӗҫӗр тухрӗ килӗнҫен.
Хӑйех тарҫӗ тӑшманран
Савни пырса ҫитиҫҫен.

## 12) Вӑрманта.

Шавлаҫ, кашлаҫ сӗм вӑрман,
Вӗҫӗ хӗрри курӑнмасҫ.
Кутсӑр-пуҫсӑр ҫил тухсан,
Ҫаранассӑн туйӑнмасҫ.
Шавлаҫ, кашлаҫ сӗм вӑрман,
Тамӑкри пек ахӑраҫ.
Те арҫури, те шуйттан
Ҫав терийех ашкӑнаҫ.
Тапхӑр-тапхӑр ҫил килет
Пӑлтӑр-палтӑр ҫавӑрса.
Тӗттӗм вӑрман ӯхӗрет
Ҫӗре ҫитех авӑнса.
Хура пӗлӗт пӗр майах
Шӑваҫ вӑрман тӑрринҫе.
Йараҫ ҫиҫӗм ҫӗр ҫурсах
Хура пӗлӗт хушшинҫе.
Аҫа ҫапаҫ, шартлатаҫ,
Пӗтӗм тӗнҫе кисренет.
Ҫумӑр ҫырма пек йухаҫ,
Лупашкасенҫе кӗрлет.
Сӗм-сӗм вӑрман, сӗм вӑрман,
Мӗншӗн хытӑ шавлатӑн?
Мӗншӗн шӑй-шай шӑхӑрса
Мӗскӗн ҫуна хӑрататӑн?

Вăрман тата хытăрах
Шавлаҭ, йĕрет, ахăраҭ.
Турă çырлах, ан пăрах!
Ахăрсаман хускалаҭ!
Ах, çылăхлă пуçăма
Ăçта ҫиксе хурам-ши?
Ах, çылăхлă ҫунăма
Йепле тытса ҫарам-ши?..
Йепле Сетнер мĕскĕн-çке
Урнă вăрман ăшĕнҫе.
Иепле çиреп йывăçсем
Йурлаççĕ пуç тăрринҫе.
Вăрман хĕсĕк çулĕпе
Ăш çуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек,
Пыраҭ Сетнер йурласа:
„Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн ҫуна хăрататăн?
Ах, ман хуйхăм, итле-ха:
Мĕншĕн мана çунтаратăн?
Мĕншĕн мана тăлăха
Савăнăça мантаратăн?
Çуралтăм мĕн аннерен
Хĕн-хур, асап курма-çеç.
Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни-çеç.
Çамрăк пуçăм пĕтмĕ-ҫĕ,
Мулăм çукки пĕтерҫĕ.
Вăл та пулин йурĕ-ҫĕ,
Çын ухмаххи пĕтерҫĕ.
Çын ухмаххи йурĕ-ҫĕ,
Усал тăшман тупăнҫĕ,
Усал тăшман пĕтĕ-ҫĕ,
Турă çырни курăнҫĕ."
Сетнер йурлаҭ йурринe.
Вăйлă тăвăл тапранса,
Сетнер йуррине илсе
Вĕçет йĕрсе, ахăрса.
Çав хуйхăлă сасăсем
Ҫуна çурса йĕреççĕ,
Вăйлă тăвăлпа пĕрле
Таçта çитех çитеççĕ,
Хура вăрман ăшĕнҫе
Хуллен хуллен пĕтеççĕ.
Çав йурăри куç-çŭлсем
Пĕр ҫун патне çитеççĕ.
Таçтан таçтан айакран
Тепĕри хирĕç макăраҭ,
Усал асап-хуйхăран
Унта тепĕр ҫун çунаҭ.
Такам йуррин сассисем
Кĕрет Сетнер хăлхине.
Вăйлă тăвăлпа пĕрле
Йурлаҭ Сетнер йуррине:
„Хура вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Савни пекех йурласа
Вилнĕ ҫуна вăрататăн?
Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман,
Ан ултала тăлăха.
Савни пекех йурласа
Ан хăварсам хурлăха.
Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Мана ҫăнне кала-ха!
Мĕскĕн ҫуна шеллесе
Ҫун савнине кăтарт-ха....

Анҫах утаҭ кунталла
Ман паталла хӗр-арӑм:
Ырӑ Турӑ, ҫырлахсам!
Нарспи, Нарспи, есӗ-им?“...

* *
*

Икӗ савни пӗрлешсен,
Ҫусне тайрӗ ват йуман.
Пӗр-ик тапхӑр ҫил вӗрсен,
Шӑп лӑпланҫӗ сӗм вӑрман.
Хура пӗлӗт саланса
Пӗтрӗ вӑрман хыҫӗнҫе.
Хӗвел пӑхаҭ шӑратса,
Кайӑк йурлаҭ йӑвинҫе.
Курӑк ҫинҫи сывлӑма
Хӗвел параҭ ӑшшине.
Йикӗ ҫуна савӑшма
Хӗвел параҭ ҫуттине.
Йалтӑртатаҭ ырӑ кун,
Усал кунӑн мӗн ӗҫ пур?
Савӑнса утаҭ икӗ ҫун,
Ҫиҫӗ йутӑн мӗн ӗҫ пур?
Анҫах вӑрман ӑшӗнҫе
Хура кайӑк ҫайлатаҭ:
Ай, Тӑхтаман, Тӑхтаман,
Нарспи ҫунне вӑл шыраҭ!

## 13) Атте-анне.

Сетнер пӗҫӗк пӳртӗнҫе
Вӗсем иккӗш лараҫҫӗ.
Лутра сӗтел хушшинҫе
Каҫхи апат тӑваҫҫӗ.
Сетнер ватӑ амӑшӗ
Турӑх тупрӗ кӳршӗрен,
Ҫӑкӑр-тӑвар кӑларса
Хуҫӗ сӗтел ӑшӗнҫен.
Апатланса икӗ ҫун
Хӗрӳ сӑмах калаҫаҭ.
Ватӑ карҫӑк-амӑшӗ
Шӑппӑн итлесе лараҭ.
Асӑнаҫҫӗ ӗлӗкхи
Ырӑ лӑпкӑ пӳрӑнӑҫне,
Каҫхи вӑйӑ-уллаха,
Ҫимӗкҫенхи кунсене.
Сасартӑках илтӗнҫӗ
Ура сасси пӑлтӑртан.
Михетерпе карҫӑкӗ
Килҫӗҫ кӗҫӗҫ алӑкран.

*Карҫӑк:*

Пирӗн Нарспи ку пӳртре
Ҫук-ши тесе килтӗмӗр.
Йалти ырӑ ҫынсенҫен
Кунта тесе илтрӗмӗр.

*Михетер:*

Ех хӗр, хӗ-ӗр, хӗр-и ес!
Нарспи, мӗскер хӑтлантӑн?
Йепле ҫынсен умӗнҫе
Ҫак намӑса кӑтартрӑн?
Мӗн ҫитмерӗ-ши сана,
Мӗн ҫитмерӗ тӗнҫере?
Мӗншӗн, хӗрӗм, мӗн пуртан,
Йурататӑн Сетнере?
Пуйан хӗрӗ пуҫупа
Мӗншӗн ҫапла хӑтлантӑн?
Ӗмӗр курман намӑса
Ват пуҫӑма кӑтартрӑн?..

*Карҫӑк:*

Мӗн ҫитмен-ши ухмаха,
Упӑшкине вӗлерме,

Çак Сетнерпе вăрманта
Лапăштатса çӳреме?

*Михетер:*

Турра шĕкĕр,—халиҫҫен
Усал сăмах илтмен-ҫĕ,
Çак тарана çитиҫҫен
Киремет те тивмен-ҫĕ,
Манăн килĕм-çуртăма
Ырă пирĕшти пăхаҫ-ҫĕ,
Ырă пирĕшти пăхнипе
Йалта йатăм кайман-ҫĕ,
Пӳлĕх, Хăрпан, Çут-тĕнҫе
Мана савса тăраҫ-ҫĕç,
Кăвак-хуппи, Çут-Хĕвел
Мана тупăш параҫ-ҫĕç,
Çак тарана çитрĕм те,
Вата пуçăм усăнҫĕ.
Есĕ çапла пулнипе
Ыра кунăм пăсăлҫĕ...

*Картҫăк (Михетере):*

Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Ĕçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!

*Михетер:*

Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм,
Хĕр кăмăлне татмарăм.
Савнă хĕршĕн пуйанлăх
Кунĕн-çĕрĕн пуçтартăм.
Кăнтăрла та, çĕрле тĕ
Канлĕ ыйхă курмарăм.
Хĕрĕмшĕнех тăрăшса
Куçăмсене хупмарăм.
Йепле каҫҫа парăп-ши,
Тесе йалан шутларăм.
Хĕр телейĕшĕн тăрăшса
Пуйан каҫҫă шырарăм.
Каҫҫа патăм, туй турăм.
Пайан ака мĕн çитрĕ,
Манăн вата пуçăма
Пайан ака мĕн çирĕ!

*Картҫăк:*

Шелле местĕн аннӳне,
Ах, çĕр çăтмана пуçна!
Камăн хĕрĕ пултăн-ши.
Кам ӳстерҫĕ-ши сана?

*Михетер:*

Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм
Питне пăхса савăнма.
Çак тарана çитрĕм те,
Хĕрĕм çирĕ пуçăма.
Аçу-аннӳ ирĕкĕ
Пулҫĕ çĕрĕ вырăнне.
Пĕр Сетнершĕн тăктартăн
Аçу-аннӳн шур çӳçне.
Пулăшмарĕ пуйанлăх,
Пулăшмарĕ сăмах та.
Пуйан каҫҫă çумĕнҫе
Апла пулмĕ ухмах та.

*Нарспи:*

Ей аттеçĕм, çамрăк ҫун
Мĕншĕн патăр хĕрере?
Пуйанлăхра анҫах мар,
Ыр курасси çыннинҫе...

*Амăшĕ:*

Йе йе, усал, ытлашши:
Ан кар ĕнтĕ çăварна.
Аннӳн ăшне çунтаратăн

Турăран килешшĕ пуçна!

*Михетер*:

Çак намăса кăтартрăн,—
Йалти çынсем мĕн калĕç?
Хĕрне ан ман ват супнă!—
Аçу çине кăтартĕç.
Анҫах йалти çăварсем
Кирек те мĕн каласҫăр,
Йату çĕрнĕ пулсан та,
Çапах есĕ манăн хĕр.
Аҭа, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пӳртрен.
Тепрер каҫҫă тупăпăр
Йату çĕрсех кайиҫҫен.
Аҭа, Нарспи, ан хуйхăр:
Санăн аçу пур вĕт-ха.
Йату пĕтнĕ пулсан та,
Аçун мулĕ пур вĕт-ха.

*Картҫăк*:

Аҭа, йытă, хăвăртрах,
Пĕртте мана пăхмастăн.
Сетнер, йытă, кĕççе пиг,
Пуйан хĕрне ан хапсăн!

*Нарспи*:

Ей аттеçĕм, аттеçĕм,
Мĕншĕн мана çийетĕн?
Намăс кӳнĕ хĕрĕре
Хăвăн патна ҫĕнетĕн?..

*Картҫăк*:

Ав, тата мĕн калаçаҭ!
Савнă хĕрне итлĕ-ха!

*Михетер*:

Çитĕ карҫăк вулашма,
Хĕр сăмахне илтер-ха.

*Нарспи*:

Арăм пулнă пуçăмпа
Киле пырса тăрăп-и?
Савман каҫҫа кайсассăн,
Татах асап ҫăтăп-и?
Çук, çук, атте, ан ҫĕн те:
Хаљ тин киле пыраймăп.
Çапла пулса пĕтсен тин,
Каҫҫă кĕтсе лараймăп,
—Есир мана ӳстертĕр,
Аҫа ҫухне йуратрăр,
Анҫах ӳссе çитрĕм те,
Хĕрĕр ҫунне курмарăр.
Епĕ сире кĕл-турăм,
Епĕ сире йăлăнтăм.
Вĕçне çиге пуçласан,
Йăваланса макăртăм.
Анҫах есир хĕрĕре
Ӳстерессе ӳстертĕр,
Ӳстертĕр те, укçашăн
Сутса йарса пĕтертĕр.
Аҫа ҫухне хĕрĕре:
Йуратáтпăр, теттĕр-ҫĕ,
Савнă хĕрĕр мĕн ыйтнă
Ăна пур те хатĕр-ҫĕ.
Ӳссе çитрĕм, аттене
Пĕр çул кĕт-ха, терĕм те.
Атте вăрçса пĕтерҫĕ,
Анне çӳçрен сĕтĕрҫĕ.
Мĕншĕн манăн кăмăла,
Çав йулашки кăмăла,
Тумарăн-ши аттеçĕм?
Хаљ пулмăттăм каплалла.
Мĕншĕн çапла ху хĕрне

Парса йатăн кашкăра?—
Саншăн çав пур ырăлăх
Мĕн пурĕ те укçара....
Епĕ асап курнишĕн
Ху айăплă, епĕ мар.
Сетнер кĕрӳ пулмасан,
Епĕ сирĕн хĕрĕр мар.
Ей аттеçĕм, аннеçĕм,
Сетнерпеле пехиллĕр—
Çавăн ҫухне тин вара
Ĕмĕр пĕрле пулăпăр.

*Картҫăк:*

Ав ав хĕрӳ мĕн калаҭ—
Сетнер, шуйттан, илĕртнĕ.
Ии, Михетер, кайар-ха,
Хĕрӳ çине сур ĕнтĕ!

*Михетер:*

Ы-ых, Сетнер, астăвăн:
Манăн хĕре ес çирĕн!
Есĕ, çавтер усал хĕр,
Хура пӳртрех тип еппин!
Аçу килне, ҫим халĕ,
Хăвах ҫупса пырăн-ха.
Аçу мĕнле ыррине
Çавăн ҫухне курăн-ха.
Аҭа, ватă карҫăкăм,
Кайар ĕнтĕ килелле.
Ĕнтĕ сăмах пĕтрĕ пулĕ
Пайан пирĕн хĕрпеле!

*Картҫăк:*

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр, хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриҫҫен
Асапланăр йытă пек!—

Тухса кайрĕç ылханса
Ашшĕ-амăш хăй хĕрне.
Урам тăрăх карҫăкĕ
Çаптараҭ хăй сăмахне:
Намăсланса, хĕрелсе
Хĕвел анҫĕ, пытанҫĕ.
Сетнер амăш ахлатса
Сĕтел çине пуçтарҫĕ.

## 14) Тăвата виле.

Йывăр ĕçсем хыçĕнҫен
Айха темрен те паха:
Силпи йалин çыннисем
Кайрĕç тутлă ыйăха.
Сывăраççĕ етемсем,
Хура вăрман тĕк тăраҭ.
Тăрсан тăрсан ҫашласа
Çил вĕрнипе вăранаҭ...
Килсе тухрĕç вăрмантан
Акă икĕ урапа.
Шăппăн шурĕç йалалла
Парăн парăн лашапа...
Акă сасă илтĕнет,
Ҫуна çурса йан йараҭ.
Авă сасса илтнĕ те,
Пĕр çын урампа ҫупаҭ....
Шăлтăр-шалтăр ташласа
Урапасем кустарҫĕç.
Вăрман ăшне кустарса
Кĕрсе кайрĕç, çухалҫĕç...

**
*

Шăри-шари çын шавлаҭ,
Урам тăрăх ҫупкалаҭ,
—Михетере çаратнă!—

Тесе пӗри кӑшкӑрать,
Пур те тури касалла
Хашка-хашка ҫупаҫҫӗ.
Мӗн пулнӑ та мӗн пулнӑ?—
Пӗр-пӗринҫен ыйтаҫҫӗ.
—„Михетере ҫаратнӑ,
Пӗр йапала хӑварман!
Ҫӗр ҫӑтманӑ вӑрӑсем
Турӑран та хӑраман:
Михетерпе карҫӑкне
Иккӗшне те вӗлернӗ!
Ҫиҫӗ тарҫи-тӗрҫине
Ерех парса ӳсӗртнӗ.
Сетнер ҫупса ҫитнӗ мӗн
Илтсе карҫӑк сассине,
Вӑрӑ, шуйттан, пурттипе
Пуҫнех ҫурнӑ унӑнне!“
Михетере вӗлернӗ,
Мулне-мӗнне хӑварман.
Сӗмсӗр-пуҫсӑр вӑррисем
Турӑран та хӑраман!
Пӗтнӗ мӗскӗн Сетнер те
Усал вӑрӑ пурттинҫен.
Кун пек усал ӗҫ курман
Силпи йалӗ халиҫҫен.
Михетерӗн Нарспийӗ
Пӗр куҫҫуль те йухтармасть:
Ашшӗн пуҫӑ килӗнҫе
Вырӑнтан та хускалмасть.
Кӑтӑр-кӑтӑр арман ҫулӗ
Ҫӗре ҫинҫе авӑрать.
Арман ҫулӗ айӗнҫе
Мӗскӗн ҫӗре ҫуралать.
Ах, ҫуралса кайрӗ те,
Нарспи кайрӗ йӑванса;
Тин ӑн килсе кӗҫӗ те,
Йӗрсе йаҫӗ кӑшкӑрса:
„Ей аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫуратрӑр?
Тӗнҫе асапне курма
Кун ҫутине кӑлартрӑр.
Ей Турӑҫӑм пӳлӗхҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫун патӑн?
Мӗскӗн ҫамрӑк пуҫӑма
Пӗр телей те йамарӑн.
Ей ҫунӑмҫӑм, ҫамрӑк пуҫ,
Мӗншӗн капла пултӑн-ши?
Пӗтӗм тӗнҫе хушшинҫе
Есӗ пултӑн ытлашши“.
Йӗре йӗре хуйхӑрса
Нарспи утрӗ хирелле.
Йалтан тухрӗ, уттарҫӗ
Кантӑр-варӗ йенелле.
Йалти ҫынсем шеллесе
Пӑхса йулҫӗҫ хыҫӗнҫен.
Пайан пулнӑ ӗҫ ҫинҫен
Пакӑлтатрӗҫ тӗттӗмҫен.

* * *

Тепӗр кунне ирхине
Ҫӑваш хире тухмарӗ.
Ерне куна асӑнса
Нимӗн ӗҫ те тумарӗ.
Ӗлӗкхи пек урама
Сарӑ хӗрсем тухмарӗҫ.
Вӑйӑ ташшисем ташлама
Каҫҫисем те хӑймарӗҫ.
Тӗрлӗ ҫӗрте ваттисем
Ушкӑн ушкӑн тӑраҫҫӗ,

Михетерĕн кил-çуртне
Сутма канаш тăваççĕ.
Нарспи таçта кайнăран
Йаҫĕç ăна шырама.
Михетерпе карҫăкне
Пур те утрĕç пытарма.
Аслă масар-хăйамат,
Виçĕ виле шăтăкра.
Аҫа ҫипер Сетнер те
Выртаҭ йуман тупăкра.

* * *

Кăнтăрлапа пĕтĕм йал
Пĕççисене шарт çапаҭ:
Нарспи виллине тупса,
Нимĕн тума аптăраҭ.
Шыракансем таврăнҫĕç
Лашисене çунтарса:
Кантăр-варта йăмраран
Вилнĕ, терĕç, çакăнса...
Вара вилнĕ выраннех
Хуҫĕç ăна пытарса.
Тăпри тавра шĕшкĕрен
Çатан лартрĕç çавăрса.
Хĕвел анҫĕ, каç пулҫĕ,
Ҫăваш çынни çывăраҭ.
Хĕвел тухрĕ, çутăлҫĕ,
Ҫăваш ĕçе тытăнаҭ.
Анҫах пирĕн Нарспишĕн
Ĕмĕрлĕхе каç пулҫĕ.
Ĕмĕр тĕттĕм тупăкра
Хуйхи-суйхи татăлҫĕ.

* * *

Çапла иртрĕ пурăнăç,
Пуçĕ пĕтрĕ çамрăклах.
Ашшĕ-амăш ухмахран
Пĕтрĕ хуйхă-суйхăпах.
Курҫĕ çута тĕнҫене
Пӳлĕх-турă пӳрнипе,
Ӳсрĕ, пулҫĕ сарă хĕр
Атте-анне пăхнипе.
Пӳлĕх-туррăн кăмалĕ
Аслă турĕ хăй хĕрне,
Атте-анне ирĕкĕ
Çирĕ сарă хĕр пуçне.
Выртрĕ хĕсĕк тупăка,
Йаҫĕ йулҫĕ йал çинҫе.
Ун хурлăхлă йуррисем
Йулҫĕç çынсен асĕнҫе.
Хаљ те пулин Силпире
Асăнаççĕ мĕскĕне.
Йалан, çумăр çумасан,
Шыв сапаççĕ тăприне.

## ВĔРИ ÇĔЛЕН.

### Пилеш хуппи.

Тăр çулахи каçхине
Вĕри сывлăш уçăлҫĕ,
Кунĕпеле ĕçлекен
Тĕнҫе шăпах лăпланҫĕ.
Сайраран-çеç катаран
Карăш сасси илтĕнет,
Вăл та партак картлатсан,
Ҫаранаҭ те тĕлĕрет.
Пĕлĕт çинҫен çăлтăрсем
Çынсем çине пăхаççĕ,
Хутран-ситрен вĕттисем
Пытанмалла выљаççĕ.
Кăвак пĕлĕт ҫатăр пек

Ҫӑлтӑрсенҫен ҫӳлтерех.
Ăвăс ҫулҫи майĕпе
Ҫĕтренкелет тӳлекре.

* *
*

Ҫур-ҫĕр йенҫен, инҫетрен
Пĕлĕте ҫурса вут-пуҫҫи
Вĕҫсе килет ҫиҫтерсе
Лапсар йатлӑ йал ҫине.
Вут-пуҫҫи мар, вут ҫĕлен
Аскӑнмашкӑн тухнӑскер,
Таса ҫутӑ тĕнҫерен
Ылхан анҫах илтнĕскер.
Хаштик, хаштик хашлатса
Ак ĕнтĕ вӑл вĕҫтерет,
Пĕлĕт тӑрӑх йарӑнса
Хĕрлĕ хĕлхем ӳкерет.
Лапсар тĕлне ҫитсессĕн,
Пӑҫҫу! анса ҫухалат,
Каҫхи таса сывлӑшра
Сĕрĕм анҫах хӑварат.

* *
*

Ҫав вӑхӑтра пӳртĕнҫен
Тухат тӑрат тухатмӑш,
Ик-ҫĕр ҫулхи асамӑҫ,
Лапсар ҫынни Ăраман.
Йал хыҫĕнҫи анкартине
Ҫынсем курман ҫĕрсемпе
Ҫупат ав вӑл васкаса,
Урисене ҫавӑрса.
Анкартине ҫитет те,
Йĕтем ҫине тӑрат те,
Катӑк ҫĕҫĕ кӑларат,
Пилеш хулла хупӑллат.
Унӑн ури умĕнҫе
Пӑлҫӑралла вут тумтир
Йӑлтӑр-йалтӑр курӑнса
Выртат сĕрĕм кӑларса.
Старик утма тытӑнат,
Тумтир тавра ҫаврӑнат.
Хӑй тутипе мĕрлетет,
Тимлес ĕҫе тирпейлет.
—„Пилеш, пилле ман
Хуппи, хупла ҫĕлене,
Карта, картла ун ҫулне,“
Тет Ăраман ҫĕлхипе:
„Атӑл шывĕ типсессĕн,
Пилеш хуппи тин типтĕр;
Тамӑк ҫтани ӳксессĕн,
Ҫак карта тин ҫухалтӑр,“
Тет вӑл татах малалла.
Унтан пилеш хуппипе
Вут тумтире йĕри-тавра
Карта туса ҫавӑрҫĕ.

* *
*

Лапсар вӑрӑм урамĕнҫен
Тул ҫутӑлас патнелле
Тухат сарӑ йаш аҫа,
Утат йĕтем йенелле.
Йĕтем ҫине ҫитет те
Курах кайат старике;
Ăна хыттӑн пӑхат те,
Кĕрет йĕтем варрине.
Старик вӑйлӑ сӑмахпа,
Тата пилеш хуппипе
Кӑварлӑ тумтир патне
Хӑй пыракан аҫана
Картапа ҫул картланӑ.
Ҫӳрет аҫа, кускалат

Çав картана йĕри-тавра:
Авăнаť те, кукăрлаť,
Вун-ик хуçăк хуçăлаť.
Пăхаť: пăхма инçе мар
Вутлă тумтир йăлкăшаť,
Илес: илме хăват çук—
Пилеш хуппи шалт хуплаť.
„Ха-ха, лах, лах.! ленкрĕн-и?
Мĕскер шăршлан, çĕр çăтман?“
Терĕ тăракан старик
Пĕтĕм вартан ахăрса.
Ађа çаврăнса пăхрĕ,
Куçĕпе çиçĕм çиçтерђĕ,
Каллах утма тытăнђĕ,
Кускалама тапратрĕ.
Çаварăнаť, кускалаť,
Асран кайаť, аптăраť,
Нăш-наш сăмсипе тăваť,
Аллисене тăскалаť.
Кускаласан, пăтрансан
Старик патне пыђĕ те,
Хуллентерех сасăпа
Йăлăннă пек каларĕ:
„Иарсам ĕнтĕ, уç ĕнтĕ,
Тумтир патне çул парсам.
Мăшкăлама çитĕ-çке,
Картланине сўт ĕнтĕ.
Кун пек мăшкăл намăса
Мĕн пур вăрăм пурнăçра
Курасса мар, илтме те,
Нихăçан та илтмен-ђĕ,“
Тесе ађа пĕтерђĕ.
—„Апла еппин, епĕ те
Икĕ-çĕр çул хушшинђе
Сан пек кайăк тытман-ђĕ,“
Терĕ старик ахăрса:
„Ахаљ мар çав вунă çул
Сывлăш ђĕлхи вĕрентĕм,
Çитмĕл çиђĕ çын патне
Ăна вĕрĕнме çўрерĕм.
Анђах пĕри те пĕлмерĕç.
Лăпăр карђăк тĕлĕкре
Курса вара вĕрентрĕ.
Ђи çивĕђĕ кайăка
Çав ђĕлхепе тин тытрăм
Йарассине йарăп та,
Есĕ унђен: йĕркипе
Ху мĕскертен пулнине,
Мĕскер туса пурăннине
Йăлт каласа кăтарт-ха“.
Старик çапла каласан,
Ађа çине тинкерсе
Пăхрĕ ђалăш куçĕпе.
Ађи ђĕнмесĕр пăртак
Пĕксе тăђĕ сарă пуçне,
Унтан каллах çĕклерĕ:
Куç харшисĕр çамкине
Тухатмăша кăтартрĕ,
Хăйĕн вутлă çăварĕпе
Сăмахлама пуçларĕ:
„Мĕншĕн капла ман пурăнăç
Сана пит кирлĕ пулђĕ?
Пĕлессў килет пулсан,
Хамăн тўта-çăвара
Пит хĕрхенсе тăмастăп.
Епир çиђђĕн пĕр тăван,
Çиђсĕмĕр те вĕри çĕлен.

Хурлӑх, асап кӑчартма
Епир ӗлӗкренпелех
Каҫ пулсассӑн тухатпӑр.
Хитре таса хӗрсене
Вӑрӑм сарӑ йаш пулса
Курӑнатпӑр тӗлӗкре.
Унтан вара пӑртакран
Куҫ-кӗретех курӑнатпӑр.
Пӗр-ик-виҫ ҫул иртсессӗн,
Вӗсем йывӑр асаппа
Хӗн-хур курса вилеҫҫӗ.
Вӗсем асап, хӗн курни
Пирӗн ӑша кантарать,
Хамӑр вӑйа систерсе
Тепӗр ҫылӑх тутарать.
Епир те ӗлӗк сан пекех
Ҫак ҫӗр ҫинҫи етем-ҫӗ;
Усалпа ултав хушшинҫе
Тӗрӗс ҫула пырасa
Ҫиҫ йӗкӗреш пурӑнтӑмӑр,
Ҫирӗм ҫула ҫитиҫҫен.
Анҫах ҫынсем хушшинҫе
Усал ӗҫӗн вӗҫӗ ҫук,
Тӳрӗ ӗҫӗн шӑрши ҫук.
Ултав, суйа пурӑнать,
Пур те ӑна пуҫҫапать,
Пур те ӑна хисеплет.
Етем сана ҫӗлхипе
Йӳҫӗтнӗ пыл хыптарать,
Хайӗн вӑйсӑр аллипе
Ҫул муклашки тыттарать,
Елеклени ҫӗр ҫинҫе
Кӗрекене кӳрттерет.
Пӗрне-пӗри хурласа
Сӑмах туса ваклани —
Сирӗн халӑх хушшинҫе
Ӑслӑ сӑмах калаҫни.
Пирӗн ҫиҫӗ тӑванӑн
Пур-ҫӗ пулӑ тытасси:
Хамӑр ӗҫпе нихӑҫан
Ҫӑрмантарман никама.
Анҫах ҫынсен елекӗпе
Ҫын усалне тухрӑмӑр,
Мӗскӗн ҫынсен шухӑшӗпе
Йалӑн кулли пултӑмӑр.
Ҫавӑнпа ҫиҫсӗмӗр те:
Йал мӑшкӑлӗ пулатҫен,
Ҫын ылханӗ пулас та:
Тӗнҫе тӑрӑх сарӑлса,
Ҫӗрле вӗҫсе ҫӳресе,
Кулакана тавӑрас,
Тесе шухӑш тытрӑмӑр.
Кӗр-куннехи каҫпала
Хыр икелне хыпрӑмӑр,
Пыр шӑтӑкне ларнипе
Сывлаймасӑр вилтӗмӗр.
Акӑ халӗ сан умра
Йаш аҫа пек тӑратӑп,
Анҫах тумтир тӑхӑнсан,
Мӗн пуласса пулатӑп...
Кама тӗнҫе ӗмӗртен
Ылханӗпе ӑсатать?
Кама курсан инҫетрен
Хӗрес хурса сӑх-сӑхать
Кама сиссен шикленсе,
Хӳтӗ ҫӗре пытанать?
Кама хайӗн ӑшӗнҫе
Пӗтермешкӗн май шырать?

—Пирĕн çиҫĕ тăванăн
Пуç пĕтессе вăл кĕтет.
Пире, вĕри çĕлене,
Йуратмасҭ те хисеплет.
Çиҫĕ сăмах каласан,
Çитмĕл тĕслĕ пулатпăр.
Çур-çĕр йенҫе курăнсан
Кăнтăр йенне ӳкетпĕр.
Пирĕншĕн хӳме, çтана çук,
Пирĕншĕн инçе, çывăх çук:
Пĕрре тĕнҫе хĕрринҫе,
Тепре тĕнҫе варринҫе
Вĕçсе кайса пулатпăр.
Пĕлтĕн ĕнтĕ, çĕр çынни,
Пирĕн вăйлă пурнăçа?
Хамăн вутлă тумтире
Вăхăт çитет тăхăнма“,
Терĕ аҫа пĕтерсе.
„Ха-ха, лах-лах, апла-а!
Тумтирĕвĕ пулĕ-ха,
Манăн ырă хĕрĕмĕн
Йунне калла тавăр-ха,
Вара вĕçĕн çулапа,“
Терĕ хирĕç тухатмăш.
—„Ех, мĕскĕн, вăйсăр етем!
Виçĕ пурăнăç курасси
Килет пулсан,—кăтартăп:
Хăна çамрăк хĕр тăвăп!“
Терĕ аҫа çиленсе.
Унтан йĕтем сасартăк
Хыттăн ҫĕтресе кайрĕ,
Пĕлĕт çинҫе вĕри çĕлен
Йалкăшнийĕ курăнҫĕ.
Тухатмăшăн умĕнҫе
Тĕпсĕр шăтăк курăнаҭ.
Тухатмăшĕ хăраса
Хытса кайнă та тăраҭ.
Тĕттĕм çулахи çĕрте
Вĕри çĕлен ҫашкăраҭ,
Хăйне куракан çынна
Турра аса килтерет.

### Тухатмăш.

Лапсар йалĕ пысăк йал,
Пысăк йал та аслă йал,
Сакăр йалăн хушшинҫе
Йалтăртатаҭ тӳпемре.
Пурăнăç тытма пĕлсе
Ырă кураҭ халăхĕ,
Çăвĕпе çӳрет вăрманта
Унăн выҫăх-ҫĕрлĕхĕ.
Хĕлле пулсан, Йăлăмра
Халăх пӳртлĕх кăлараҭ.
Мĕншĕн ĕнтĕ çав йалра
Хӳхĕм çуртсем пулас мар?
Çавăнпа та çурҫĕсем
Кил-картине йĕри-таврах,
Çавăнпа та хапхисем
Йалтах йака хăмаран.
Урам йенҫи çтанасен
Виç-тăватă ҫӳреҫе,
Ик йенелли хупписем
Ула-ҫăла: шурă, кăвак.
Çула пулсан, çав çуртсем
Йывăç ăшĕнҫе путаççĕ,
Иртсе çӳрен çынсене
Вăрманта пек курнаççĕ.

***

Анҫах йалăн тул йенҫе

Йал илемне пӑсмашкӑн
Йури ларать пӗр пӗҫҫен
Ҫалӑш-ҫалӑш хура пӳрт.
Виҫӗ йенҫен виҫ ҫарак
Лартнӑ пӳрҫӗ ӳкесрен,
Пӗр пуҫӗнҫен хыр касска
Пӳртне пусса кӗмешкӗн.
Катаранах пӳртӗнҫен
Ҫурать шӑршӑ сӑмсана,
Илемсӗр пӳрт кӗлеткинҫен
Пӑрӑнтарать сӑн-пуҫа.
Пӳрҫӗ пулӗ ҫӗр ҫулта,
Хуҫи, пӗлеп, ик ҫӗрте:
Хайхи-майхи Ӑраман,
Йалти усал тухатмӑш,
Ӗлӗкрenпе авалтан
Ҫавӑ пӳрте йусаман.
Йӗри-тавра кил-картин
Ӳкнӗ ҫӗрнӗ шӑм-шакки.
„Пӗр ҫиҫ-сакӑр ҫул иртсен
Хура пӳрт те ишӗлӗ,
Унӑн ирсӗр вырӑнне
Вӗлтӗрен йусса илӗ,“
Тесе Лапсар ҫыннисем
Хайсем тӗлӗн пуплеҫҫӗ.
Мӗнле пулӗ малалла,
Ӑна-кӑна пӗлме ҫук.
Анҫах халӗхи вӑхӑтра
Ик-ҫӗр ҫулхи Ӑраман
Ҫалӑш пӳртне йусама
Шухӑш пуҫне те тытман.

* * *

Тухатмӑша пӗлеттӗр:
Пурӑнӑҫшӑн тӑрӑшмасть;
Хӑйӗн пурри ыран ҫук,
Пурлӑ ҫынсен пур пултӑр;
Пӗтӗм таврари йала
Унӑн ҫапӗ сарӑлтӑр;
Вара хайхи пурӑнать,
Пурӑнӑҫ ҫулне сӗтӗрет.
Вӑхӑҫӗпе ҫынсене
Тухатмӑш та кирлӗ-ҫке.
Ҫитмӗл ҫухрӑм таранран
Ӑраман патне пыраҫҫӗ,
Унӑн ҫиҫӗ сӑмахӗшӗн
Аркипе мул параҫҫӗ.
Тухатмӑша ҫав анҫах
Кирлӗ кунне ирттерме,
Унтан вара ҫӳлелле
Пӑхса ларать маҫҫана.
Маҫҫа хӑми хушшипе
Курать тӗнҫе суттине:
Урӑх пӳрте ҫутӑ кӗме
Вӑл тӗнӗ те кастарман.

* * *

Каҫпа пулнӑ ӗҫ ҫинҫен
Хай тухатмӑш шухӑшлать.
Ҫӗр алӑ ҫулхи ӗҫсене
Пайанхи кун асӑнать.
„Ӑҫтан майне тупрӗ-ши,
Ҫӗр ҫӑтманнӑ, вӗри ҫӗлен?
Мӗншӗн алран йатӑм-ши
Пӗре ленкнӗ тӑшмана?“
Тесе ларать халӗ вӑл.
„Ҫӗр алӑ ҫул пурӑнни
Ахалех ман пӗтӗ-ши?
Хӗрӗм вилсен пурӑнни
Ҫӳп-шӑтӑкнех кайӗ-ши?“

Тăлăх йултăм, тăлăхран
Епĕ хăраса тăмарăм:
Хама çапла тăвакана
Пĕтерме май шырарăм:
Çитмĕл тĕслĕ ђĕлхе пур,
Пурне те епĕ вĕрентĕм;
Анђах вутлă тăшмана
Кăвар ђĕлхи пĕлсе те
Кўртеймерĕм алăма.
Унтан вара тĕлĕкре
Ирсĕр вăпăр карђăкран
Сывлăш ђĕлхи вĕрентĕм,
Хай тăшмана тин тытрăм.
Тытрăм, тытрăм! Ăçта вăл?
Тытрăм—пушă параппан,
Ђĕлхен кăнăк сăмаххи!
Аçта кайнă халĕ вăл?
Ăраман! ђаплă тухатмăш,
Ăçта пулђĕ сан ђĕлхў
Тăшман умра тăнă ђух?
Ухмаах: пилеш хуппи,
Пилеш хĕрес сан алра
Пур мар-ђĕ ара ун ђухне?
Мĕншĕн ĕнтĕ пурăнас?
Мĕскер ĕнтĕ хатĕрлес?
Тепре алла кĕрес çук,
Тăшман манăн пулас çук!"
Çапла улаť Ăраман;
Çўçне-пуçне аллипе
Пай-пайĕпе кăларать,
Хайĕн анлă какăрне
Ђул ђыщкипе çĕмĕрет.

* *
*

Çапла пирĕн тĕнђере:
Тăвас тени пулмасан,
Пуç ыратаť сĕрĕмре,
Ђĕре çунаť, ăш вĕркет.
Туса пĕтерес умĕн
Ванаť кайаť йапала,
Ĕмĕр авалхи тăшман
Пăтрантараť шухăша.
Ăраманăн вырăнђе
Кам каçхишĕн хуйхăрмĕ?
Çав тĕр вăйлă тăшмана
Вĕçертнĕшĕн кам йĕрмĕ?
Çапла пулаť тĕнђере:
Суйа çулпа кайакан
Ĕмĕр кайран куђанаť,
Ђĕри хытса кайнăран
Укĕнмест те, хурланаť.
Ухмах пулнă Ăраман:
Хĕрне çĕлен вĕлерсен,
(Турăран та хăраман)
Ђĕлхеçленме тытăннă.
Вĕри-çĕленпе вăрçма
Çитмĕл ђĕлхе вĕреннĕ,
Ăна вĕреннĕ ђухне
Темиçе ђун пĕтернĕ.
Анђах ĕмĕр пулман ĕç
Малалла та пулас çук:
Усал ĕçе усалпа
Нихăçан та пĕтерес çук.

## П и к е.

Аслă йала Лапсара
Тăр çулахи кунсенђе
Çынсем шăрăх вăхăтра
Ăçтан кирлĕ килеççĕ.
Килеççĕ те кайаççĕ

Каллах хăйсен çулĕпе,
„Кăлăхах мĕн çўрени
Пулђĕ,“ теççĕ хуйхипе:
„Пĕтнĕ ђаплă Ăраман,
Ик-çĕр çулхи тухатмăш,
Калла киле Лапсартан
Нимĕнсĕрĕх каймалла
Пулђĕ,“ теççĕ ђăвашсем:
„Пĕђĕк лутра пўртĕнђе
Лараŧ хўхĕм хитре хĕр,
Халĕ унăн вырăнђе
Пике йатлă хўхĕм хĕр.
Мĕне кирлĕ ун хитри?
Пире пултăр-ђĕ ђĕлхи
Виттĕр касса татакан,
Шывран вут-хĕм кăларакан.
Ăраман хĕрĕ пулсан та—
Çук, ку хуман Ăрамана!
Ашшĕн пекех вăй-хăват
Ăçта кунăн сăмахра?
Ђĕлхепе мул пуçтарма
Ăçтан ку хĕр пултарас?
Çук, кунăн сăн-пуç-çеç
Ăс вырăнне çутăлаŧ!
Ку Ăраман тавращĕ мар,
Ку темĕнле йăваш хĕр,“
Тесе халлап вакláççĕ.

***

Ђăнах йалăн хĕррĕнђи
Тĕттĕм пўртре хĕр ларат,
Хĕр ларат те ĕç тăват,
Пурçăнпала тĕрĕ тĕрлет.
Тĕтĕм шăрши пўртĕнђе
Ĕлĕкхи пекех тапаŧ,
Ĕлĕкхи пекех çута
Маттђаран анђах анаŧ.
Çапах çав хĕр, сарă хĕр.
Пурăнасшăн кулђанса
Çынсем патне йăлăнмасŧ
Çамрăк пуçпа тайăлса.
Алли унăн хăй ĕçлет,
Ђĕлхи унăн хăй йурлаŧ.
Пуçĕ татах хăй ĕçлет:
Кунĕпеле шухăшлаŧ.
Çынсем ун патне килсе
Ђăрмантарса кайаççĕ,
Ăраман çинђен ыйтса
Тем шухăша йараççĕ.
—„Ăраман хĕрĕ епĕ хам,
Нумай пулмасŧ вилђĕ вăл;
Мĕншĕн сире кирлĕ вăл?“
Тет сарă хĕр пурне те.
Тухатмăш патне ырă çын
Çўрес çук çав ĕçĕпе.
Унăн патне усал çын
Çўрет хайар çиллипе.
Хăй кўрĕшне пĕтерме
Май шыракан çўрет çав.
Усал сывлăш йертнипе
Улталанса çўрет çав.
Анђах халĕ Лапсарта
Тухатмăша тупас çук.
Унăн шăршлă пўртĕнђе
Вайлă ђĕлхе йантрас çук.

***

Хутран ситрен йурласа
Унта Пике ĕç тăваŧ:
Ђĕлхеçĕ пăхăр укçипе

Илнĕ çиппе тĕрĕ тăват.
Çутă çамки айĕнҫе
Пĕр май шухăш пăтранат.
Унăн çамрăк ҫĕринҫе
Вĕри йунĕ хусканат.
„Мĕншĕн ара аннене
Астумастăп нимĕн те?
Мĕншĕн епĕ аттерен
Ыйтса йулман ун çинҫен?
Атте мĕнле вилĕмпе
Вилнине те епĕ халь
Астумастăп лайăххăн:
Ăçта-ши ăн ман пуçăн?
Пытарма кайнă çĕртен
Тавăрнине астăвап,
Урăх манăн пуçăмра
Йулайман çав нимĕн те.
Атте сухаллине те
Тĕлĕкри пек анҫах çав
Астăватăп епĕ халь,"
Тесе сар хĕр шухăшлат.
Çутă хурçă йĕппипе
Вăш ҫикет те, вăш туртат:
Шурă пир çине тĕрĕ тăват.
Араман кам пулнине
Вăл катари çынсенҫен
Илтнипе анҫах пĕлет,
Тата пўртĕнҫен сисет.
„Пĕр çĕр-алă çул ĕлĕк
Араманăн хĕр вилнĕ,
Унтан кайран арăмран
Урăх хĕр унăн çуралман:
Ăçтан пулас ку хĕрĕн
Шуйттан туса памасан?"
Тесе йалта пуплени
Хитре хĕре ирĕксĕр
Йарат вăрăм шухăша.
„Атте вăйлă пулнăскер
Хăй вилнипеле мана
Пурăнмашкăн ҫĕртмен-ши?"
Тесе ларат сарă хĕр:
„Пытарасса пытарҫĕç,
Ăна шăтăках ҫикрĕç,—
Анҫах ăçта вырăнĕ?
Хăш тĕлте ун шăтăкĕ?"
Иккĕлленет вăл каллах.
Темле ҫипер пулсан та
Çынсем ăна тиркеççĕ,
Ăна каçпа выльама
Пĕртте хĕрсем ҫĕнмеççĕ.
Çавăнпа та сарă хĕр
Хĕрсемпеле хутшăнмаст,
Çавăнпа та пурнăçра
Нумайĕшне ăнланмаст,
Çавăнпа та шухăшпа
Анҫах кунне ирттерет.
Ашшĕ çинҫен анҫах мар
Вăл кунĕпе шухăшлат:
Ашшĕнҫен те ытларах
Пĕр аҫана асăнат:
„Мĕншĕн-ши вăл кăнтăрла
Килсе пăхмаст пĕрре те?
Инçех мар-çке пурăнат
Йунашарти пускилте.
Пўрт пит наҫар, çавăнпа
Вăл ун сăнне курас мар
Тесе килмест кăнтăрла.
Илеп, илеп тийет те,

Илмесен мӗн тӑвас пур
Ман тӑлӑхӑн унпала?“
Тесе пирӗн хӳхӗм хӗр
Шухӑшласа шуралаҫ:
„Илӗссине илӗ-ха,
Тимкка сӑмах тытӗ-ха;
Ӑҫтан тупас парнелӗх
Вӗсен ӑрӑвӗ валли?“
Тет хӗр хӑйӗн ӑшӗнҫе.
Тимкка лайӑх, маттурскер,
Пуйан ҫынӑн ывӑлӗ,
Анҫах вӑл унӑн ҫинҫен
Тӗлӗкре те тӗлленмест.
Хӗрӗ патне вӗри ҫӗлен
Вӗҫсе килет каҫсерен.

**Тимкка мӗлки.**

Ылттӑн хӗвел тӳперен
Сӑрт хыҫне анса ларсан,
Тӗнҫе хӑйне киҫемрен
Тӗтрене карса йарсан;
Сывлӑш ҫынсем майӗпе
Тӳлекленсе лӑплансан,
Вӑрман ҫемҫе ҫулҫипе
Шавламашкӑн ҫарӑнсан;
Ырлӑх ҫинҫен йурлакан
Кайӑк йӑвине кӗрсен,
Хӗвел хыҫҫӑн куҫакан
Уйӑх самай ҫӗкленсен—
Тухаҫ вӗҫме вӗри ҫӗлен:
Етем йӑхин тӑшманӗ,
Авалтанпа ӗмӗртен
Ҫутӑ тӗнҫен ылханӗ,
Етем ӗмӗтне татса
Куҫ-ҫулӗпе йӗртекен,
Типшемлетсе шуратса
Ҫӗре ҫуне ӗмекен.
Пӗрре тытнӑ ҫулӗнҫен
Акӑш-мӑкӑш пӑрмасӑр,
Тӗнҫе тӑрӑх вӗри ҫӗлен
Вӗҫет, йухаҫ ҫунатсӑр.
Хӑй ҫыпӑҫнӑ ҫимӗҫин
Ҫунӗ ҫинҫен шухӑшлаҫ;
Хӑйӗн ҫарусӑр ҫилли
Сӑнӗ ҫинҫе палӑраҫ:
Ҫӑварӗпе хӗм тӑкаҫ,
Куҫӗпе ҫиҫӗм ҫиҫтерет,
Картлӑн, картлӑн карӑнаҫ.
Ҫунатсӑрах вӗҫтерет.
Пӗрре тытнӑ шухӑшне
Пӗр май пуҫӗнҫе усраҫ:
Хӑйне мӑшкӑл тунине
Тамӑк хуранне сунаҫ.
Лӑкӑр-лӑкӑр пӑтранса
Вӗрет тамӑк хуранӗ:
Хӑй вӑйӗпе мухтанса
Вӗҫет тамӑк тӑванӗ.
Пӗр ҫӳреме тытӑннӑ
Ҫимӗҫ патне вӗҫтерет,
Катаранах, хавшаннӑ
Ҫимӗҫишӗн хӗпӗртет.
Вӗҫет каҫаҫ шыв урлӑ
Хӗрлӗ хӗмне ӳкерсе:
Шыв пин те пӗр ункӑллӑ
Пулаҫ кайаҫ вӗресе.
Вӑрман ҫийӗн вӗҫтерет
Ҫӑварӗпе хӗм тӑкса:
Симӗс вӑрман типшӗрет
Унӑн хӗмӗпе хӑрса.

Вĕçсе иртет сăрт çийĕн
Вутăн хĕмĕн йавăнса:
Ванаť, шăтаť ţул тăпри
Шарт та шартах çурăлса.
Улăх тăрăх ţашкăраť
Кăварлă çил кăларса:
Иешĕл курăк кукăрлаť
Вăл хĕртнипе хуралса.
Йалсем çинţен йарăнаť
Усал тĕлĕк тĕллентсе:
Сасартăк çын вăранаť
Хай ыйхинţе шиклентсе.

* *
*

Çав вăхăтра Лапсарта
Лараť Пике пўртĕнţе.
Кĕтет йалти Тимккана
Ţи çур-çĕрĕн тĕлĕнţе.
Сарă вăрăм çивĕтне
Ик йенелле салатнă,
Çўçĕн кăтра хĕрине
Хăлхи çийĕн устарнă.
Маţţа çуракĕ тĕлне
Тўшек çине хăй ларнă,
Пĕţĕк çинçе урине
Минтер çине пустарнă.
Уйăх çути хушăкран
Алли çийĕнţе выљаť;
Тутлă сехет çывăхран
Хăйĕн тутийĕ кулаť.
Тĕнţе çинţен пĕлмесĕр
Пĕр шухăшпа пурăнаť;
Кун ырлăхне сисмесĕр
Каçа ытларах саваť.
Тĕлĕкпеле пурнăçа
Уйăрма пĕлмен пирки,
Çур ĕмĕрне уйласа
Ирттерестĕн ун ţĕри.
Тимккана каţţа кайсан,
Йепле пурăнассине
Пĕтĕм ţĕререн вартан
Шухăшлаť вăл каçхине.

* *
*

Систермесĕр ак Тимкка
Кĕţĕ тăţĕ ун умне,
Тартрĕ инçе, айакка
Малаллахи кунсене:
Пĕрре кусĕнţен пăхса
Ăна мухтаса илţĕ,
Унтан аллинţен тытса
Пĕрле сак çине ларţĕ.
Ăшă, паţăх тĕттĕмре
Йалтăртатаť ун кусĕ;
Ун çумĕнţи вĕрире
Çунаť Пикен сăн-пусĕ.
Пĕрле пулсан пурăнмалли
Ашшĕ-амăшĕ çинţен мар,
Тăранмашкăн тумалли
Йывăр ĕç çинţен те мар,-
Пĕрне пĕри йуратнă
Ырăлăхлă каç çинţен
Вĕсем халлап шăратнă
Çапла пĕрле каççерен.
Кĕçĕр Тимкка Пикене
Ăша кĕмеллех пăхаť,
Унăн çемçе аллине
Ăсран йарсах ţăмăртаť.
Йăваш ţупне тивретсе
Вăл Пикепе калаçаť,

Акӑ ҫак сӑмахсене
Ҫӑварĕнҭен кӑларат̆:
Савни, итле савнине!
Есĕ мана ман пекех
Хӑвӑн ҫамрак ҭĕрӳпе
Йурататӑн-и Пике?

*Пике:*

Тимкка, есĕ ухмахтӑр:
Кĕҫĕр капла сӑмахлан.
Манӑн пуҫам ҫухалтӑр
Епĕ сана суйсассӑн:
Кунĕпеле сан ҫинҭен
Шухӑш каймаст̆ пуҫӑмра,
Ĕнер ҭуп-туни ҫинҭен
Астумастӑн-им есĕ вара?

*Тимкка:*

Ех Пике, ҭуп-туни вӑл
Мĕне питех пĕлтерет?
Манӑн вĕҫĕсĕр кӑмӑл
Ӑҫтан унпах ҫемҫелет?
Мана ҭӑн ҭунтан-вартан
Есĕ йуратан пулсан:
Хӑвӑн иртнĕ кунсемпе,
Тĕттĕм ҫĕрĕн ырлӑхепе,
Пуринҭен те ытларах
Тӳшек таса ҫиттипе
Тупа ту-ха ман умра
Ҫемҫе ҭĕлхӳ вĕҫĕпе.

*Пике:* (тупа тусан).

Турӑм. Мĕншĕн-ха капла?

*Тимкка:*

Хӑвӑн ĕмĕрӳшен ҫапла!
Турӑн: ҫитет ман ҭуна,
Кĕҫĕр епир санпала
Йепле иккĕн ларатпӑр,
Ĕмĕр ҫапла пурӑнмалла
Сӑмах татса хуратпӑр.
Тимкка ҫапла каласан,
Хӑйĕн вĕри тутипе
Ҫӳхе хĕрлĕ тутаран
Ҭуп-турĕ илҭĕ Пикене.
Пике ӑшĕ вĕркесе
Йунĕ вĕрет ҭĕринҭе,
Йуратнине итлесе
Тӑнĕ ҫĕтет пуҫĕнҭе...

* * *

Ир пулат̆ те каҫ пулат̆,
Кунсем ҫаплах иртеҫҫĕ.
Вуник уйӑх ҫул тӑват̆:
Аллӑ-ик ерне иртет.
Иртрĕҫ хĕлпе ҫуркунне,
Килҭĕ каллах ӑшӑ ҫу:
Каллах сӑртсен питĕнҭе
Пиҫет ҫырла: пыл та ҫу.
Анҭах Лапсар йалĕнҭе
Сӑнран ӳкет Пике хĕр,
Хура тĕтĕм ӑшĕнҭе
Тĕксĕмленет ҭипер хĕр.
Пике: шухӑш хӑртнине,
Йунлӑ куҫ-ҫулĕ тутлӑхне
Пĕр ҫулталăк хушшинҭе
Пĕлсе ҫитрĕ ӑшĕнҭе.
Анҭах Тимкка мĕлкине
Халĕ те пулин пĕлеймен.
Ак кĕҫĕр те ун патне
Вĕҫсе килҭĕ вӑл, ҫĕлен.
Пике суйа Тимккаран
Пĕлесшĕн туй вӑхӑтне,

Ҫавӑнпала пӑртакран
Калаҭ хӑйӗн шухӑшне.
*Пике:*
Тимкка, Тимкка, итле-ха:
Хӑҫан пулаҭ пирӗн туй?
Пӗлтӗрхи пекех акӑ
Иртсе кайӗ пирӗн ҫу.
Хӑҫан епир иксӗмӗр
Пурӑнапӑр пӗр пӳртре?
Хӑҫанҫен ку йаш ӗмӗр
Тӑсӑлӗ-ши венҫетҫен?
*Тимкка:*
Итле еппин: кӗҫӗрҫҫен!
Кӗҫӗр пирӗн туй пулаҭ.
Кӗҫӗр сана вӗри ҫӗлен
Ҫанне уҫма шухӑшлаҭ.
Итле, итле, Пикеҫӗм,
Ӑнсӑр пулса ан хӑраҭ.
Пӑх, тухатмӑш, ҫӗлхеҫҫӗм,
Анҫах хама ан тухат!
Тимкка ҫапла каласан
Тӑсрӗ кӑларҫӗ ҫӗлхине.
Ҫавна курсан, хӑраса
Пике ӳкрӗ урайне.
—Тӑр, тӑр, Пике! Тӑр Пике!
Тепӗр тӗслӗ, Ӑраман!
Епӗ ҫын мар, епӗ мӗлке,
Кӗҫӗр ҫавна пӗл, ӑнлан!
Пике тӑраҭ, пӑхкалаҭ,
Пуҫне тытса макӑраҭ.
—Хах, хах, хах, хех, хех,
хах, хах!
Мӗнле пуҫне ывӑтаҭ,
Пулас арӑм атапаҭ.

Йӗтем ҫинҫе пулнӑ ӗҫ
Кӗҫӗр асна килҫи-мӗн?
Иртнӗ кунсем ҫӗрӗлмӗҫ,
Вӗҫӗ ҫитет ӗмӗрӳн!
Хӗрлӗ ҫырӑн хӗрринҫе
Мӗнле пулҫӗ асамат;
Таса хирӗн варринҫе
Мӗнле шӑршлӑ хӑйамат;
Хӗр-арӑмсем хушшинҫе
Мӗнле сӑмах ҫунатлӑ;
Ҫылӑх тӑвас тӗлшӗнҫе
Пепле укҫа хӑватлӑ—
Манӑн вӑй та ҫавсем пек
Ӗмӗр вӑйлӑ ирӗклӗ,
Епӗ хамӑн ӳтӗмпе
Тамӑк вуҫӗ йеверлӗ!
Ҫапла Тимкканӑн мӗлки
Сӑмахсене каласан,
Тамӑкри пек ахӑрни
Кайрӗ ҫӗрле йантраса.
Пӗтӗм Лапсарти ҫынсем
Ыйхисенҫен вӑранҫӗҫ,
„Ку мӗн сасси-ши?“ тесе
Вырӑнсем ҫинҫен тӑҫӗҫ.
Анҫах Пике хӑрамасҭ,
Кӗлт те пулин тапранмасҭ.
Ун ҫилӗллӗ ҫӗринҫе
Верет, сикет ҫӗрӗ йун.
„Епӗ ӗлӗк вӑйлӑ-ҫӗ,
Анҫах пӗтрӗ манӑн кун
Асаматӑн кӗперринҫен,
Хӗрлӗ ҫырӑн хӗрринҫе“,
Тесе тӑраҭ халӗ вӑл.
—Йулашки хут тутупа

Калаçатăн манпала,
Йулашки хут тăнупа
Кĕçĕрхи каç шухăшла!
Асамат мар,—усал вăй,
Аскăн ĕççен амăшĕ,
Ывăр çылăх пуçĕ хăй,
Тамăксенĕн таврашĕ,
Кунĕн-çĕрĕн çынсене
Хирĕçтерсе тăракан,
Вĕсен ăнсăр пуçĕсене
Выçă куçлă тăвакан,
Санпа халĕ пуплекен
Сана вăйсăр хĕр турĕ.
Сана çакă тĕнҷене
Ырă тума çуратнă,
Анҷах мана тĕттĕме
Мĕншĕн тата Турă панă?
Кĕтлĕх тăна кĕр каллах!
Мăшкăл туса йелпĕрме
Вĕри çĕлен вăйĕпе
Йури пирĕн Пикене
Хăйĕн телейсĕр кунне
Кĕçĕр асне килтерҷĕ,
[illegible]айне хирĕç тавлашма
[illegible] пек [illegible]
[illegible] Пике [illegible]
[illegible] самахсĕм [illegible]
„Ман пуçама [illegible].
Мĕн тăвас тен, [illegible]
Ĕмĕтĕме татакан,
Çухал куçран хăвăртрах!“

*Тимкка:*

Епир çынсем ыйтнипе
Çухалмашкăн çуралман.
Кама йывăр, çавсемпе
Пĕрлешмешкĕн пĕлместĕп.
Çынсен вилĕмĕ пекки
Саншăн ытла сахал вăл,
Есĕ йепле пĕтесси
Ман ирĕкрен килет вăл.
Сик те ташла ман умра!
Йурла, çухăр сассупа!
Унтан вара аташса
Кайса тирĕн çырмана!
Пике хăй те сисмесĕр
Ташламашкăн тапратат̆,
Ниçта кайма пĕлмесĕр
Çтана çине улăхат̆.
Пурçăн çӳçне салатса,
Тытăнҷăксăр пĕлĕт пек,
Вĕçтерет вăл ташласа
Ăçта кирлĕ унталла.
Каҷака пек макăрса
Çĕр варĕнҷе çухăрат̆:
„Пĕтеп, пĕтеп пуçăмпа“
Тесе пĕр май кăшкăрат̆.
„Ха-ха-ха та ха-ха-ха,
Йепле ташлат̆ пăхăр-ха!
Тесе шуйттан ахăрат̆.
[illegible] вăхăтра сарă хĕр
[illegible]хрĕ шурĕ пӳртĕнҷен,
[illegible]ттĕм пирки сисмесĕр,
[illegible]крĕ çыра сăрт çинҷен.

* *
*

Халĕ ĕнтĕ Лапсарта
Ăрамана манаççĕ.
Анҷах пӳрҷĕ патĕнҷен
Ăртсе кайма хăраççĕ.

Пӳрђĕ аннă ишĕлсе:
Пуçĕсене çĕклесе,
Тараса пек çакăнса,
Пĕренесĕм тăраççĕ.
Унăн çийĕ айĕнђе
Тăманасем пурнаççĕ,
Кĕрхуннехи çĕрсенђе
Пит тискерĕн улаççĕ.
Хĕрлĕ çырта хĕлле те
Пĕр лакăмра шыв тăрат̆.
Тухатмăшăн куç-çулне
Сынна аса килтерет.
„Çулталăкра пĕрер хут
Пĕр хитре хĕр çав шывра
Шыва кĕрет каçпала,“
Тесе çӳрет пĕр халлап.

## АРÇУРИ.

*Тухман çын тухсан,*
*Тăман тухат̆ тет.*

Хĕвел ансан Хĕветĕр
(Есир ăна пĕлетĕр 5)
Хĕвне çăкăр ђикрĕ те,
Лаша кӳлселарђĕ те,
Тухрĕ кайрĕ вăрмана
Хăрăк турат пуçтарма.
Карђăк Микули каймарĕ,
Ăна йулташ пулмарĕ:
Микул Турра пуççапма
Ишекелле каймалла, терĕ;
Тӳр кĕллине тӳрлетме
Тиха тытса пусмалла, терĕ;
Киремете килĕшмен,
Çырмаранах çырлахман, терĕ
Арăм сыв мар, суйа мар.
Хĕл-çăвĕпех хĕн курат̆, терĕ.
Кирилесем килте çук,
Лаврас пиђђе лава кайнă.
Салтак ађи пама кайнă.

**
*

Хĕвел тухăçĕ хĕрелет,
Ырă çанталăк пăсăлат̆.
Хура пĕлĕтсем ђупаççĕ,
Çăва патĕнђен тухаççĕ,
Хăйаматалла кайаççĕ!
Хура вăрман хумханат̆,
Хура лаша хартлатат̆.
Хура лаша ан хартлат̆:
Хурамаран ма хăран?
Акă ĕнтĕ, ађсемĕр!
Аран-аран уткалат̆:
Ыраш улăм çитерсен
Ырă выђăх та ывăнат̆.
Турткалаймаст̆, тухатмăш.
Ђуман лаша пек ђупат̆.
Çуркуннепе çул усал:
Суллахайра сулăн пур.
Сылтăм йе[illegible]
Хур[illegible]
[illegible]мер.
[illegible]кки.
Ик [illegible] те [illegible]айăлки,
[illegible] тур ши сĕвекки?
Йĕп ђиксе те куç курмаст̆:
Те арçури, те шуйттан,
Те ыр-усал, те вăр-хурах.
Те çул-майак, тем амак?

Ҫун шикленет, ăш вăркаҫ,
Пуҫ тӳпинҫен сĕрĕм тухаҫ.
Шĕвик! шăхăраҫ ҫын пекех,
Мăкăл-макăл йумахлаҫ,
Шăтăр-шатăр тутараҫ;
Пуҫ ухмаххи тапранаҫ,
Йумах йараҫ, йуптараҫ,
Йăнăш ҫулпа ҫуптараҫ,
Ҫике тăрăшшĕ ларттараҫ.
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Ҫавра ҫил пек ҫаврăнса,
Ҫĕмĕртсене ҫĕмĕрсе,
Ҫикрĕ тухрĕ ҫырмаран,
Пĕкке хуҫрĕ ҫурмаран.
Ват ҫын пекех шур сухаллă,
Каҫака пек майракаллă,
[illegible] рăм, куҫĕ ҫармак.
[illegible] ушăк вăрманĕнҫе
[illegible] рлĕ уткалаҫ,
[illegible] гă пек тулашаҫ,
[illegible] ураҫ, пусмăрлаҫ,
[illegible] вĕлерет.
[illegible] се лараҫ те,
[illegible] мшăк пулаҫ те,
[illegible] се ҫуптараҫ,
[illegible] тсе кăшкăраҫ...
[illegible] Турă ҫырлах, Турă ан
пăрах!
[illegible] Ху упрах!
[illegible] Пихампар,
[illegible] па хăвах ҫар!
[illegible] лес пулĕ-и-ха.
[illegible] е тăрас-ҫĕ,
[illegible] пе вилес-ҫĕ;
Йӳтеҫҫенех пурăнас-ҫĕ,
Тӳшек ҫинҫе вилес-ҫĕ.
Ырă вилĕмпе вилсессĕн,
Кушак ҫури мар тесе,
Хуллен хуллен йерипе,
Авалхи ҫынсен йăлипе
Тирпейлесе пытарĕҫ.
Пуйан вилет—мул йулаҫ,
Ырă ҫын вилет—йат йулаҫ,
Епĕ вилсен мĕн йулаҫ?
Хунҫăм хĕрĕ хура хĕр,
Хурлăх курма вăл йулаҫ.
Аҫам-пăҫам пит айван,
Халиҫҫен суха тытайман.
Кам аҫашлĕ аҫама?
Кам хĕрхенĕ хĕрĕме?
Тăлăх турат пулиҫҫен,
Хăрăк турат пулас та,
Кĕрхи ҫилпе вĕҫсе ӳкес,
Ҫурхи шывпа йухса кайас,
Арман пĕвине пĕвенес.

* *
*

Арман патне ҫитсессĕн
Аран йулҫĕ арҫури.
Тарăн вара ҫитсессĕн
Таркăн салтак пулҫĕ кайрĕ,
Виснер хирне ҫитсессĕн
Вилнĕ карҫăк пулҫĕ выртрĕ,
Ҫурма ҫула ҫитсессĕн
Ҫурхи сурăх пулҫĕ кайрĕ.
Хайхи-майхи арҫури
Кайран кайа йулҫĕ те,
Анҫăк ҫури пулҫе те,
Арман патне ҫитсессĕн